Ы
Ч-40986

Николай Ыдарай

# Тĕрлĕ тĕрленчĕк – ылтăн тĕпренчĕк



Национальная библиотека ЧР
4-040986

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

М т. З 50 1990 г.т. 5000

Николай Ыдарей

# ТЕРАЕ ТЕРАЕНЧЕК МАТАН ТЕПРЕНЧЕК

К 84.89(=4 чув)
Ы

Николай Ыдарай

# Тĕрлĕ тĕрленчĕк-ылтăн тĕпренчĕк

**Сăвăсемпе калавсем, ăславсемпе тупкавсем, юмахсем.**

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2007

УДК 821.512.111
ББК 84 (2Рос=Чув)6
Ы 28

**Николай Ыдарай**

Ы 28 Тёрлё тёрленчёк — ылтăн тĕпренчĕк: Сăвăсемпе калавсем, ăславсемпе тупкавсем, юмахсем/Николай Ыдарай. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2007. — 143 с.

ISBN 978-5-7670-1487-3

Тупмалли юмахсем, ăса вĕрентекен каларăшсем, сăвăланă ваттисен сăмахĕсемпе шÿтлĕ ыйтусем, юптарусем тата ытти хаваслă ĕçсем нумай ку кĕнекере. Вулакансен шухăшлавне çивĕчлетекен, тавракурăмне аталантаракан чăн-чăн ăс-хакăл арчи.

УДК 821.512.111
ББК 84 (2Рос=Чув)6

ISBN 978-5-7670-1487-3

© Чăваш кĕнеке издательстви, 2007

ПРОВЕРЕНО
Ч-40986
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

## ÇЫВĂХ ТУС

Çывăхран та çывăх тус пур манăн,
Хисепе хуратăп эп ăна.
Унпала пурнатăп пĕртăванăн,
Яланах вăл маншăн ыр хăна.

Унăн ăс хуранĕ питĕ тарăн,
Унсăр пулмĕ ÿсĕм, ăнăçу.
Тусăм ман тĕнче ăсне пуçтарнă,
Вăл пĕлсе тăман ăсталăх çук.

Час-часах унпа эп канашлатăп,
Ман алран тухмасть вăл пĕрре те.
Пĕлменни пулсан унран ыйтатăп,
Куллен-кун мана вăл вĕрентет.

Куллен-кун парать вăл пысăк усă,
Унпа çех пулатăн пĕлекен.
Чăннипех те чаплă манăн тусăм,
Çывăх тусăн ячĕ — КĔНЕКЕ.



## ТУПСĂМНЕ ТАВÇĂР

Ку пайра — тупкавсем. Хуравĕсене тавçăрса илме çăмăл. Вĕсене пĕлес тесен юлашки йĕрке валли рифма шыраса тупас пулать.

Тупкавсене виçĕ ушкăна пайланă. Малтанхине пĕрер йĕркерен тăракан тупкавсем, теприне — икшер, виççĕмĕшне тăватшар йĕркерен тăраканнисем кĕнĕ.

Тупсăмĕсене хăвăр тавçăраймасан вĕсене сăвă хыççăн çырса пынă сăмахсене вуласа пĕлме пултаратăр.

### ТУПСĂМĔ — РИФМА

Кам тӳпере çӳревçĕ? (*Вĕçевçĕ.*)

Мĕнле вырăн сывлăхшăн ырлăх? (*Хырлăх.*)

Канасси нумай, ĕçлесси сахал. (*Кахал.*)

Мĕн иртет сисĕнми хăвăрт? (*Вăхăт.*)

Мĕнле сĕт-вар уйран тума юрăх? (*Турăх.*)

Мĕнле çимĕç шыв кӳпме ăста? (*Купăста.*)

Турат çинче шур турпас. (Пас.)

Сăмса çинче кам пуçлăх? (Куçлăх.)

Лапра çĕрте самăр йысна. (Сысна.)

Мĕнле чĕр чун сехетпе тан? (Автан.)

Кăмака çинче çемçе шăм-шак. (Куштан.)

Турат çинче арча, арчара шăрçа. (Пăрçа.)

Чĕтресе ларать мĕнле йывăç? (Авăс.)

Пилеш тăванне аякран паллан. (Палан.)

Шыв хĕрринче мĕн хăвăш? (Хăмăш.)

Пĕр хутаçра икĕ касмăк. (Ясмăк.)

Уй варринче ылтăн хуралтăсем. (Суратсем.)

Йĕтем çинче мăн çăпан. (Капан.)

Чунсăр пулин те хăпарма ăста. (Чуста.)

Куллен кирлĕ мĕн тавар? (Тăвар.)

Хĕвел çинче симĕс пуç. (Арбуз.)

Йăран çинче ешĕл сухал. (Сухан.)

Хĕвел ансан йăлтăр-йăлтăр. (Çăлтăр.)

Унпа тулли кашни тĕпел. (Сĕтел.)

Пĕр арчара алă икĕ хăрпăк. (Шăрпăк.)

Кăмакара хĕрлĕ тавар. (Кăвар.)

Пӳрнере шăтăклă тĕмеске. (Пӳрнеске.)

Пĕр сас паллисĕр яланах ёнер. (Йĕнер.)

Пĕр сас паллисĕр яланах тете. (Тетел.)

Пĕр сас паллисĕр яланах ёлĕк. (Çĕлĕк.)

Ман урара лаптак йĕтĕр. (Йĕлтĕр.)

Кам вĕçет сăмах вĕççĕн? (Вĕçкĕн.)

Чĕлхепе маттур, ĕçепе мĕскĕн. (Вĕçкĕн.)

Тĕнчере мĕн нумай пĕлекен? (*Кĕнеке.*)

Çĕнĕ хыпар çинчен мĕн калаçать? (*Хаçат.*)

Кам култарма ăстаçă? (*Юмахçă.*)

Кам пăхăрлать ӳт-пĕве? (*Хĕвел.*)

Мĕн хăварать урари йĕлтĕр? (*Йĕр.*)

Сĕм вăрманта мĕн янрать? (*Янрак.*)

Мĕн туйăмлă тĕнчере? (*Чĕре.*)

Сунар ĕçне мĕн хапкăн? (*Капкăн.*)

Хавасланма мĕн пулăш? (*Кулăш.*)

Пысăк пӳре пысăк усă. (*Кукуруза.*)

Кам çын ятне çĕртенçĕ? (*Элексĕ.*)

Çерçи сăмси мĕн тупать? (*Апат.*)

Шур тумлă йывăça аякран курăн. (*Хурăн.*)

Çимессерен савса ырла. (*Çырла.*)

Кăмака ăшшине мĕн хӳтлĕх? (*Питлĕх.*)

Мĕнле хула иксĕлми мухтав? (*Мускав.*)

Мĕнле чĕр чун çăмлă купа? (*Упа.*)

Мĕнле туйăм тĕкрен çăмăл? (*Кăмăл.*)

Мĕнле çимĕç мухтанать: «Эп те тутлă
çупалан»(*Палан.*)

Ире хирĕç кăвак усăм. (*Шусăм.*)

Юхан шывра ашлă сулă. (*Пулă.*)

Кам илĕртет: лар та кан! (*Пукан.*)

Хура ятлă — хура мар. (*Хурама.*)

Туратлă чĕр чуна таçтан паллан. (*Пăлан.*)

Пирĕн пахчара кичем хан. (*Хурлăхан.*)

Аслă хирте пин хăвăл. (*Хăмăл.*)

Ана çинче кам пуçтах? (*Пуш пучах.*)

Шур купăстан шур пĕлĕш. (*Лĕпĕш.*)
Вăрман тимĕрçи юпа таккать. (*Ула такка.*)
Кăмака хысĕнче айван шăпчăк. (*Шăрчăк.*)
Тĕттĕм çĕрте месерле ура. (*Каюра.*)
Çĕр çинче лўппер, шывра кал-кал. (*Кăвакал.*)
Пуш хирти хăййăра кам тĕвет? (*Тĕве.*)
Çурри пăра, çурри хут. (*Пăрахут.*)
Карта мар, картапа тан. (*Çатан.*)
Мĕн çăвăнтарать мунчара? (*Мунчала.*)
Çурри çăм, çурри атă. (*Çăматă.*)
Кăмакара тутлă ту. (*Хăпарту.*)
Хăй йышлă, усси сахал. (*Сухал.*)
Пулсан пултăр хăналăх. (*Айванлăх.*)
Кăмакара тĕл, мĕн иккенне пĕл. (*Кĕл.*)
Чапĕ çук, ячĕ пан. (*Чаппан.*)

## ИКШЕР ЙĔРКЕН

Пĕр кĕлеткен тăват вĕç,
Тăват вĕçре тăват хĕç.
(*Алăсемпе урасем.*)

Туп-туп туптару —
Тур лашана чуптару.
(*Саламат.*)

Юнашарах тăраççĕ —
Пĕрне-пĕри курмаççĕ.
(*Куçсем.*)

Урлă хапхан ĕç ăнать:
Уçăлать те хупăнать.
(*Çăвар.*)

«Уç!» — тенĕ чух уçăлать,
«Хуп!» — тенĕ чух хупăнать.
(*Çăвар.*)

Карталăхра кашта пур,
Кашта тулли шур чăх пур.
(*Шăлсем.*)

Пин-пин кайăк, пин кайăк,
Пинтен пĕри мăн кайăк.
(*Уйăхпа çăлтăрсем.*)

Куç виçейми анлăх пур,
Курман пулсан — тухса кур.
(*Тӳпе.*)

Чунĕ çук — мотор, юнĕ — бензин,
Ларса çӳрет пĕтĕм çын.
(*Автобус.*)

Ăсĕ çук, чунĕ çук —
Ăна вĕçсе çитме çук.
(*Самолёт.*)

Авра-çавра арча пур,
Арча тулли сахăр пур.
(*Арбуз.*)

Вупăр туйи вут сурать,
Вут сурать те хур тăвать.
(*Пăшал.*)

Йĕплĕ çăмха майлăскер,
Йĕр йĕрлесе çӳренскер.
(*Чĕрĕп.*)

Куллен-кунах çуралать,
Кун пĕтсессĕн çухалать.
(*Хĕвел.*)

Пĕвĕ çирĕп йывăçран,
Пуçĕ çивĕч хурçăран.
(*Пуртă.*)

Лаша тесен лаша мар,
Лаша пулас янавар.

*(Тиха.)*

Пулсассăн та ирĕкре
Пурпĕрех вăл хĕсĕкре.

*(Пуйă.)*

Пулсассăн та çул çинче
Пурпĕрех вăл килĕнче.

*(Шуй.)*

Сан çумра пур темĕскер,
Сасă илтме тунăскер.

*(Хăлха.)*

Сан çумра пур темĕскер,
Сăмахлама тунăскер.

*(Чĕлхе.)*

Çатăл-çатăл калаçать,
Çан-çурăма кантарать.

*(Милĕк.)*

Çу касипе ешерет,
Çулăм пекех пĕçерет.

*(Вĕлтĕрен.)*

Çу касипе сăркка вăл,
Çу иртсессĕн шуркка вăл.

*(Мулкач.)*

Çанни çук, çухи çук,
Çапах çынсем тиркес çук.

*(Жакет.)*

Тайкаланса ирхине
Тайпи анать шыв хĕрне.

*(Кăвакал.)*

Мăнтăрлансан ларать вăл,
Начарлансан выртать вăл.

*(Михĕ.)*

Уçăп майри вăй вылять:
Уçăлать те хупăнать.

*(Алăк.)*

Хĕвел ансан хупăнать,
Хĕвел тухсан уçăлать.

*(Куç.)*

Хĕвел пур чух çуралать,
Хĕвел çук чух çухалать.

*(Мĕлке.)*

Хурçă саспа авăтать —
Хуть кама та вăратать.

*(Будильник.)*

Хырăм выççи хăратать —
Хыр йĕкелне хыптарать.

*(Хыркук.)*

Юман тăрне ларĕ вăл,
Юмăç пăхса парĕ вăл.

*(Куккук.)*

Ял-хуласем çийĕнче
Ялан çутă йĕрĕлче.

*(Хĕвел.)*

Ялан хăйне палăртать —
Ялан хирĕç сас парать.

*(Янрак.)*

Хуть те мĕнле сăмахла —
Хирĕç çавна юмахлать.

*(Ахрăм.)*

Канма пĕлмест, тăхтамасть,
Каялла та таврăнмасть.

*(Вăхăт.)*

Лавçи утса пырать,
Лаши кусса пырать.

*(Велосипед.)*

Чунли чунсăрри ҫинче,
Чунсăрри хумсем ҫинче.

*(Кимĕ.)*

Тĕлĕк курнать кĕретех —
Тĕлĕнместĕп пĕрре те.

*(Кино.)*

Кун хушăнса пырать —
Вăл катăлса пырать.

*(Календарь.)*

Ҫап-ҫутă та тăп-тăрă,
Пăхса илме пит ырă.

*(Куҫкĕски.)*

Ал-урасăр пурăнать,
Ик хут кĕпе тăхăнать.

*(Минтер.)*

Чунсăр чунсăра хĕнет,
Чунсăрри саспа йĕрет.

*(Параппан.)*

Шывра ишет шур кĕлет,
Шур кĕлетре ҫын сӳрет.

*(Пăрахут.)*

Чунсăр-юнсăр пурăнать —
Пепкесене йăпатать.

*(Пукане.)*

Пин-пин ҫухрăм сас вĕҫет —
Пин-пин ҫынна илтĕнет.

*(Радио.)*

Чунĕ те ҫук, юнĕ ҫук,
Кайăк хуса ҫитес ҫук.

*(Самолёт.)*

Пĕр вырăнта ҫаврăнать —
Шав малалла ыткăнать.

*(Ҫавра ҫил.)*

Хĕвел ансан çуралать,
Хĕвел тухсан çухалать.
*(Çăлтăр.)*

Сăнĕ ылтăн пулсан та
Сырас килмест тупата.
*(Çăпата.)*

Вĕркĕчĕ çук — вĕрет,
Çуначĕ çук — вĕçет.
*(Çил.)*

Тӳпе тăрăх хăпарать,
Тип çĕрсене шăварать.
*(Çумăр пĕлĕчĕ.)*

Алă вĕççĕн çыраççĕ,
Чĕлхе вĕççĕн вулаççĕ.
*(Çыру.)*

Ахаль çиме майлă мар,
Апат унсăр тутлă мар.
*(Тăвар.)*

Эп сан кусна кĕрĕп,
Эс куççульпе йĕрĕн.
*(Тĕтĕм.)*

Çăмха евĕр кăлтăркка,
Çунса тăран йăлтăркка.
*(Хĕвел.)*

Виç кĕтеслĕ кантра
Вĕçсе кайрĕ кăнтăра.
*(Хур кăйăк карти.)*

Улăх урлă утма çул,
Утас текен никам çук.
*(Хур кăйăк çулĕ.)*

Чул çине ӳксен вилмест,
Шыв çине ӳксен вилет.
*(Хум.)*

Лăс-лăс туса силленчĕ,
Алăк кутне кукленчĕ.

*(Шăпăр.)*

Ирпе-каçпа килет вăл,
Часах иртсе каять вăл.

*(Шуçăм.)*

Тăссан — тăсăлать,
Татсан — татăлать.

*(Ыйхă.)*

Ырă ята хуратать —
Ырă çынна хур тăвать.

*(Элек.)*

Чăн маррине пĕлеççĕ —
Чуна парса итлеççĕ.

*(Юмах.)*

Пĕччен чухне — тĕпренчĕк,
Пĕрле чухне — пĕркенчĕк.

*(Юр.)*

Вырăсла пулсан — вăл ят,
Чăвашла пулсан — апат.

*(Ятка.)*

Анчăк тесен анчăк мар,
Анчăкпала пĕр кавар.

*(Анчăк.)*

Сурăх майлă курăнать —
Сурăх мăшăрĕ пулать.

*(Така.)*

Çиме пур чух çиет вăл,
Çиме пĕтсен — кавлет вăл.

*(Ĕне.)*

Самăр выльăх пурăнать —
Сусăр пекех найкăшать.

*(Сысна.)*

Сумсăр выльăх пурăнать —
Сухалĕпе мухтанать.

*(Качака.)*

Каçăр выльăх пурăнать —
Купăстана юратать.

*(Качака.)*

Шаймак выльăх пурăнать —
Шăшисене тустарать.

*(Кушак.)*

Ял хыпарçи пурăнать,
Ял-ял урлă сас парать.

*(Автан.)*

Шыв-шурсенче пурăнать,
Шутсăр хитрен курăнать.

*(Акăш.)*

Пур кайăкран пысăк вăл,
Вĕçен кайăк патши вăл.

*(Ăмăрт кайăк.)*

Çуран кайăк авăтать,
Çурхи куншăн савăнать.

*(Карăш.)*

Вĕçнĕ майăн йăпăртах
Вĕтĕ пулла йăкăртать.

*(Кăрлик.)*

Чăпар кайăк авăтать,
Чăрăш тăрри авăнать.

*(Куккук.)*

Хĕл варринче пĕр кайăк
Чĕп кăларать пит лайăх.

*(Кукăр сăмса.)*

Хавхаланса юрлать вăл,
Хăйĕн ятне калать вăл.

*(Лиç.)*

Тĕкĕ-çийĕ чăп-чăпар —
Тĕм хушшинче паллă мар.

*(Мăйăрран.)*

Тек хӳрине пăркалать —
Те хӳрипе пăр кататъ.

*(Пăрчăкан.)*

Çырла сăхать пĕр кайăк,
Çавăн ашĕ пит лайăх.

*(Пăчăр.)*

Уйăп майлă кайăк пур,
Ун ятĕнчеункă пур.

*(Рункăш.)*

Çуначĕ пур — вĕçеймест,
Никам хуса çитеймест.

*(Страус.)*

Хуть кама та чим-чим! тет,
Хурăнташăм эс-им тет.

*(Çерçи.)*

Кăнтăрла хăлхи курать,
Каçхине куçĕ курать.

*(Тăмана.)*

Пĕвĕ-сийĕ пĕр тĕрлĕ,
Пĕсехисем хĕп-хĕрлĕ.

*(Уйăп.)*

Шанкăр сивĕ çанталăк —
Шыва кĕрет пĕр кайăк.

*(Ӳленке.)*

Сĕм вăрманта, хӳтĕре,
Сĕм-сĕмекке ӳхĕрет.

*(Ӳхĕ.)*

Чул пек вĕçсе анать вăл,
Чĕпĕсене тытать вăл.

*(Хурчка.)*

Ула кайăк: чак-чак-чак!
Ун юрри те çав анчах.

*(Чакак.)*

Вĕçсе çÿрет çиçĕм пек,
Вăрăм хÿри сенĕк пек.

*(Чĕкеç.)*

Йывăç тăрăх пĕр кайăк
Йăкăртатать пит лайăх.

*(Шăвăнчи.)*

Çурхи куншăн савăнать —
Çунат çапса шăхăрать.

*(Шăнкăрчă.)*

Кĕмĕл саслă ăстапи
Кĕвĕлеме ăста пит.

*(Шăпчăк.)*

Савăк юрă шăрать —
Сад пахчине вăратать.

*(Шăпчăк.)*

## ТĂВАТШАР ЙĔРКЕН

Шыв хĕрне тухса ларать
Ешĕл симĕс тумлăскер,
Кăвак! тесе кăшкăрать
Хăйĕн тĕсне маннăскер.

*(Шыв шапи.)*

Хăйне çывăх йышпала
Хăтлă пĕве пĕвелет,
Хĕл касипе кăшлама
Хулă-çапă хатĕрлет.

*(Хăнтăр.)*

Мунчана каять
Хура тумпала,

Мунчаран тухать
Хĕрлĕ тумпала.

*(Рак.)*

Качаллă ура,
Пуçĕнче тура,
Хыçĕнче çурла —
Ирсерен юрлать.

*(Автан.)*

Çав-çав енче, çав енче,
Çавра тĕнче варринче,
Çăва юпи тăрринче
Çăвар карать пĕр пичче.

*(Çăхан.)*

Асран тухми кайăк пур,
Икĕ тĕрлĕ ячĕ пур:
Пĕри — икĕ сыпăклă,
Тепри — тăват сыпăклă.

*(Çерçи, сала кайăк.)*

Нихăçан та, нихçан та
Нимле йăва çавăрмасть,
Нихăçан та, нихçан та
Ларса чĕпĕ кăлармасть.

*(Кункук.)*

Те çутăран вăранать —
Тĕттĕм çĕре пытанать,
Тĕттĕмленсен таврара
Тин тухать вăл сунара.

*(Тăмана.)*

Сарă хĕвел майлăскер,
Çап-çавракă питлĕскер,
Турат çинче ӳснĕскер,
Хăрах енĕ хĕрлĕскер.

*(Пан улми.)*

Ч-40986
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

Вăр çавраки пуçĕ пур —
Вăл та пулин мимесĕр,
Вăта çĕрте ури пур —
Вăл та пулин чĕрнесĕр.

*(Купăста.)*

Çинçе туна тăрринче
Çине витнĕ чӳлмек пур,
Çине витнĕ чӳлмекре
Çĕр-пин вĕтĕ пĕрчĕ пур.

*(Мăкăнь.)*

Хĕвел хĕрĕ вăранать —
Хĕвел енне карăнать,
Хĕвеле вăл пуç таять,
Хĕвел майăн çаврăнать.

*(Хĕвел çаврăнăш.)*

Йăран çинче ӳснĕскер,
Ешĕл-симĕс çӳçлĕскер,
Çап-çавраки пуçлăскер,
Тути питĕ йӳçĕскер.

*(Сухан.)*

Тĕмсем çинче çитĕнет,
Тĕрлĕ тĕспе витĕнет:
Тĕксĕм хура тĕсли пур,
Тата хĕрли, шурри пур.

*(Хурлăхан.)*

Шăлĕ пур та — пурпĕрех
Шăлĕпе вăл кăшлаймасть.
Шăрши пур та — пурпĕрех
Шăршине çын юратмасть.

*(Ыхра.)*

Аслă хире тухатăп —
Ана тăрăх утатăп,

Ана тăрăх утатăп —
Асамлă мул пухатăп.

*(Кĕнеке вулани.)*

Пĕчĕк кăна пĕрчĕксем
Пĕр пичеври пĕлĕшсем,
Пĕрлешĕнсен çав туссем
Пулма тивĕç сăмахсем.

*(Сас паллисем.)*

Хапăл тусах вăл сана
Хăйне хирĕç тăратать,
Хăйне хирĕç пăхсанах
Хăвăн сăнна кăтартать.

*(Тĕкĕр.)*

Мăрăлтатма маттурскер,
Ачашланма ăстаскер,
Шăши тытма йăрăскер.
Ку — килти чĕр чун…

*(Кушак.)*

Кашниех ăна паллать,
Кил-çурта вăл хураллать,
Ют çынна вĕрет пит хытă,
Вăл маттур хуралçă — …

*(Йытă.)*

Ирпе ирех вăранать,
Ял вăратма тытăнать.
Хăрамастăп эп унран,
Ку вăл пирĕн тус — …

*(Автан.)*

Шурă юр пек шурăскер,
Хĕрлĕ пушмак сырнăскер,
Ун сăхас йăли те пур,
Ку вăл — авăк майлă …

*(Хур.)*

Нарт-нарт! теме юратать,
Тайкаланса уткалать,
Шывра ишет пит кал-кал,
Лапчăк сăмса — ...

(Кăвакал.)

Чăпар тумлă чăпаркка,
Самăр ӳтлĕ самăркка,
Ăнланма çук тем лăркать,
Çиллес кăмăллă ...

(Кăркка.)

Майраки пур — ĕне мар,
Сухалĕ пур — ватă мар, —
Ан кĕрт ăна пахчана,
Ку вăл — сĕмсĕр ...

(Качака.)

Сăмсипе çĕр сухалать,
Лачакана кăмăллать.
Пур выльăхран ăрасна,
Çавăнпа та вăл — ...

(Сысна.)

Шăмă ухват мал енче,
Хĕлĕх милке кай енче, —
Сĕт парать вăл хуçине.
Ку кам пулчĕ-ши? ...

(Ĕне.)

Урапа çуна туртать,
Çăмăл юртăпа юртать.
Ку мĕн ятлă тамаша,
Тамаша та мар, ...

(Лаша.)

Улт уралла, ылтăн тĕслĕ,
Пултарулла, харсăр, ĕçлĕ.

Пахчара ларать ун çурчĕ,
Тем тесен те ку — ...

*(Пыл хурчĕ.)*

Чив-чив-чив! тесе çӳрет,
Таçта та çитсе кĕрет —
Пултăр çеç апат пĕрчи.
Мĕнле кайăк ку? ...

*(Çерçи.)*

Ăшă енчен таврăнчĕ,
Çĕн йăвашăн савăнчĕ,
Çунат çапса шăхăрчĕ.
Ку ыр кайăк — ...

*(Шăнкăрчă.)*

Ешĕл вăрман хӳттинче,
Вăрăм чăрăш тăрринче
Авăтса ларать: ку-ку!
Мĕнле кайăк вăл? ...

*(Куккук.)*

Ирхине те чав-чав-чав!
Каçхине те чав-чав-чав!
Тем юмахлать, тем чавкать
Чакакпа тăван — ...

*(Чавка.)*

Çӳл тӳпене хăпарать,
Çурхи юрă шăрататъ,
Юрри савăк çав тери.
Мĕнле кайăк вăл? ...

*(Тăри.)*

Пĕр илемлĕ пĕчĕк кайăк
Ирсерен юрлать пит лайăх.
Те вăл карăш, те вăл шăрчăк,
Те илемлĕ юрăç — ...

*(Шăпчăк.)*

Сăмси шурă, хăй хура,
Çуркунне çитсен уйра
Час-часах ăна куран.
Хура кайăк вăл — ...

(Курак.)

Кĕркунне е çуркунне
Илемлетĕç тӳпене
Виç кĕтеслĕ картасем —
Вăрăм мăйлă ...

(Тăрнасем.)

Пĕкĕ пек ун мăйĕ авăк,
Хăй шывра ишме пит савăк,
Калăн çав, хитре шыв амăш,
Ку илемлĕ кайăк — ...

(Акăш.)

Кĕр çитсессĕн — ăшшалла,
Çур çитсессĕн — каялла
Таврăнаççĕ ыр туссем,
Ыр туссем — ...

(Хур кайăксем.)

Пĕвĕпе те пысăк вăл,
Вăйĕпе те вăйлă вăл,
Çивĕч куçлă хăмăр кайăк.
Ячĕ унăн — ...

(Ăмăрт кайăк.)

Сайра хутра вĕçекен,
Шывра пулă сĕрекен.
Унăн ятне пĕлĕ кам?
Кайăк ячĕ — ...

(Пеликан.)

Вĕçен кайăк шутланать,
Антарктидăра пурнать,

Сив çĕрте вĕсем пин-пин.
Мĕнле кайăк вăл? ...

*(Пингвин.)*

Шалт тĕлĕнсе пĕтмелле:
Мĕнле кайăк вăл — хĕлле
Чĕп кăларать савăнса?
Вăл иккен — ...

*(Кукăр сăмса.)*

Хурçă тейĕн сăмси ун,
Сĕм вăрманта яра кун
Çимелли шырать — таккать,
Пирĕн тус — ...

*(Ула шакка.)*

Кăнтăрла вăл çывăрать,
Каç пулсассăн çухăрать —
Çӳçентерет вăрмана,
Ку — хăлхаллă ...

*(Тăмана.)*

Çĕр айĕнче пурăнать,
Кун çутинчен пăрăнать,
Ик малти ури начар,
Ик кайри ури патвар,
Тĕсĕпе вăл — тĕм хура,
Ячĕ унăн ...

*(Каюра.)*

Сăн-сăпачĕ питĕ ырă,
Хăй тин çунă юр пек шурă,
Хӳри вĕçĕ — хура пус,
Ку чĕр чунăн ячĕ — ...

*(Юс.)*

Пурăнать вăл уй-хирте,
Тыр-пулсем ӳсен çĕрте.
Пучахсем касма хавас
Çак усал чĕр чун — ...

*(Тыркас.)*

Эс ăна ан тĕкĕнсем —
Ыраттарĕç йĕпписем.
Йĕпписем ун питĕ чĕрĕ,
Ку чĕр чунăн ячĕ — ...
*(Чĕрĕп.)*

Лапка-лапка юр çăвать,
Шур юр çине йĕр хывать.
Кĕске хӳре — шур каччă,
Унăн ячĕ — ...
*(Мулкачă.)*

Вăл пăхма илемлĕ,
Лăс кăна хӳреллĕ,
Вĕтлĕхре ун килĕ,
Ку вăл чее — ...
*(Тилĕ.)*

Вăрманта пур кашаман,
Выльăх-чĕрлĕх çуракан.
Чун хăрать ăна курмашкăн,
Çак чĕр чунăн ячĕ — ...
*(Кашкăр.)*

Çывăхран вăл утаман
Ик урапа утакан,
Аякран пăхсан — купа,
Ку услап чĕр чун — ...
*(Упа.)*

Йӳплĕ-йӳплĕ măйракаллă,
Янах айĕ ун сухаллă,
Эс ăна тӳрех паллан,
Ку йăваш чĕр чун — ...
*(Пăлан.)*

Вăрманта куран ăна,
Пакшалла вăл пурăнать,

Ун тирне сават пасар.
Мĕн тесен те ку — ...

(Сăсар.)

Сăнне пăхсан сысна пек,
Йĕпне пăхсан чĕрĕп пек
Тăшмана пит парăнмасть
Кам вăл тетĕр? ...

(Дикобраз.)

Пит хитре ун йăрăм тирĕ,
Хăй вара усал-çке питĕ —
Çăварне пӳрне ан чикĕр!
Ку вăрман тискерĕ — ...

(Тигр.)

Мал енче ун мăн хӳре,
Кай енче кĕске хӳре,
Капан пек патне пырсан,
Кăнтăрти чĕр чун вăл — ...

(Слон.)

Пурăнать вăл тинĕсре,
Хура хăмăр хăй тĕсрен,
Питĕ пысăк кĕлетки
Кам ку, пĕлĕр? Ку вăл — ...

(Кит.)

Килти кушак майлăскер,
Анчах питĕ усалскер,
Ан чĕнех ăна: пиç-пиç!
Ку чĕр чунăн ячĕ — ...

(Рысь.)

Пăрлă тинĕсре пурнать,
Пулă евĕр курăнать.
Эс ăна аван пĕлен,
Çак лӳппер чĕр чун ...

(Тюлень.)

Пит усал та вăйлă вăл,
Пур чĕр чуншăн патша вăл.
Ку вăл пулмĕ сăвăслан,
Ку вăл пулĕ — ...

(Арăслан.)

Тĕнчере пур пĕр чĕр чун
Тумĕ — йышлă саплăк ун,
Мăйĕ вăрăм шутсăрах,
Курсанах калан — ...

(Жираф.)

Йытă пек те — йытă мар,
Кашкăр пек те — кашкăр мар,
Вилесем çиме кал-кал,
Ку чĕр чун пулать — ...

(Шакал.)

Юхан шывра пурăнать
Пысăк калтан курăнать,
Камччĕ-ха вăл? Аса ил —
Ячĕ унăн — ...

(Крокодил.)

## ÇУХАЛНĂ РИФМĂСЕМ

Çак ушкăнри калашсемпе тенешсен рифмисене юриех сиктерсе хăварнă. Сирĕн çав çухалнă рифмăсене тупас пулать. Çак ĕçе кам маларах тата тĕрĕсрех тума пултарĕ?

1. Алла усса ларнă чух
   Ал туйи те ... .
2. Алса çыхма ал кирлĕ,
   Ал вылятма ... .
3. Ашак паллă хăлхинчен,
   Айван паллă ... .
4. Ăс çывăрса выртнă чух
   Ăсан тытса ... .

5. Ăнаçуллă ĕçлекен —
Ăмăртура ... .
6. Выранлă ĕç — вăхăтлă,
Вăхăтлă ĕç — ... .
7. Вăхăт иртет — сисме çук,
Вĕренлесе ... .
8. Вĕреннине мĕн çитет, —
Вĕренекен вăй ... .
9. Вĕршĕн вĕçет — пултарать,
Вĕçкĕн вĕçет — ... .
10. Ĕçре юмах яракан —
Ĕç вăхăтне ... .
11. Кахал этем кахалах,
Канма пăхать ... .
12. Мал ĕмĕтпе пурнакан —
Малтан мала ... .
13. Начар лаша çул пăсать,
Начар этем ... .
14. Пĕччен утăн — йĕр пулĕ,
Пĕрле утăн — ... .
15. Пĕлнине хĕвне ан тарт,
Пĕлнине ĕçре ... .
16. Сăмах сухан вăрри мар,
Суйламасăр ... .
17. Сăмах паман — хытма пĕл,
Сăмах патăн — ... .
18. Çухăрнипе, хуть те çун,
Çуйăн пулă ... .
19. Тăрăшнине мĕн çитет? —
Тăрăшакан ... .
20. Така хыççăн утакан —
Такăр çултан ... .
21. Тимлĕ этем — тимĕр пек,
Тимсĕр этем — ... .

22. Улăм утă пулни çук,
Ултав чăна ... .

23. Ӳрĕк-сӳрĕк ĕçлекен —
Ӳлĕм ларса ... .

24. Халăх ăсне пухакан —
Хастар этем ... .

25. Хăлатпала шурă хур
Хăçан туслă ...?

26. Ху малтан ĕçе вĕрен,
Ху пĕлсе çитсен ... .

27. Чăлах чунлă пулас мар,
Чăваш ятне ... .

28. Чĕлхи çинче — имлĕ мул,
Чĕри çинче — ... .

29. Чухла пĕлен ыр чĕре
Чухăн мар çут ... .

30. Чунпа çырнă кĕнеке
Чуншăн ырă ... .

31. Чухламасăр павракан —
Чутламасăр ... .

32. Шурă алă çĕр çинче
Шав хура ĕç ... .

33. Шывак улман тути çук,
Тимсĕр ĕçĕн ... .

34. Ыр ут хыççăн çул юлать,
Ыр çын хыççăн ... .

35. Ырă сăмах ынатлă,
Ыр кайăк пек ... .

36. Эрĕм паллă йӳççипе,
Этем паллă ... .

37. Элек акса çӳрекен —
Этем ятне ... .

38. Эмелпе пĕр тĕрĕслĕх
Этем чунне ... .

39. Элле хуть те мĕн кала,
Этем ялан ... .
40. Юратуллă ыр чĕре
Юрлă мар ... .
41. Юман пултăр хытăрах,
Юлташ пултăр ... .
42. Ют кăмăла юрасси —
Юртан хăмăл ... .
43. Юлхав этем кăмăлĕ —
Тăкăннă тул ... .
44. Ятне туса ĕçлекен —
Ятне ярса ... .

## «ÇУХАЛНĂ РИФМĂСЕМ» ĔÇĔН ТУПСĂМĔСЕМ

1) Тума çук; 2) ăс кирлĕ; 3) чĕлхинчен; 4) пулас çук; 5) çĕнекен; 6) юрăхлă; 7) чарма çук; 8) илет; 9) култарать; 10) вăрлакан; 11) ялăнах; 12) пăхакан; 13) йыш пăсать; 14) çул пулĕ; 15) кăтарт; 16) акас мар; 17) тытма пĕл; 18) тытма çук; 19) тӳш çиет; 20) супакан; 21) нимĕр пек; 22) çĕнни çук; 23) йĕрекен; 24) пулакан; 25) пулни пур; 26) вĕрент; 27) ярас мар; 28) сивĕ чул; 29) тĕнчере; 30) кĕреке; 31) пуракан; 32) пусĕнче; 33) усси çук; 34) ăс юлать; 35) çунатлă; 36) ĕçĕпе; 37) çĕртекен; 38) тĕрĕслĕ; 39) малалла; 40) çут тĕнчере; 41) ăсларах; 42) тăвасси; 43) хăмăлĕ; 44) çӳрекен.



## МĔН ПИРКИ ПЫРАТЬ СĂМАХ?

Ку пайра вулакансене кăткăсрах ёç кĕтет. Çак сăвăсенче тупмалли юмах пытаннă. Вуласа тухăр та тупсăмне калăр.

### КАСКĂН КАЧЧĂ

Ак вăл акăш пек вĕçет,
Ак вăл çисĕм пек çиçет,
Ак хирте вăл кустарать,
Ак ялта вăл тустарать.

Ак виçет вăл уй-хире,
Ак çитет вăл пахчана:
Ак пичев сĕрет хĕре,
Ак лăпкать сар ачана.

Ак çитет вăл улăха,
Ак çитет вăл хырлăха,
Ак лăпкать вăл хăвана,
Ак лăскать шур хурăна.

Ак вĕçет вăл аякра,
Ак кайра вăл, ак малта,
Ак вăл асла хулара,
Ак ялта, ак утарта.

Ак çитет вăл вăрмана,
Ак кĕрет вăл чăтлăха,
Алхасма тинех манать,
Ашкăнма та пăрахать.

*(Çил.)*

## ТĔМ

Тĕлĕнетчĕ сĕм вăрман —
Эп ларатăм кашласа.
Йăрăс пĕвĕм пурччĕ ман —
Илсе кайрĕç сыпласа.

Эпĕ юлтăм тĕпленсе,
Калама çук кĕскелсе.
Иртсе кайрĕç ыр кунсем,
Çитрĕç урăх вăхăтсем.

Халь никам та юратса
Аса илмĕ ман çинчен...
Кам-ха пăхтăр юратса
Лутра çех тĕме çине?!

*(Тункаша.)*

## ПАХЧАРА

Çĕмĕрт пиçнĕ тахçанах —
Çĕмĕрт çитнĕ хуралса.
Эпĕ тухрăм пахчана
Савăк юрă юрласа.

Ман пуçа илем хĕвет —
Эп пăхатăп тĕлĕнсе:

Тӳпере те сар хĕвел,
Пахчара та хĕвелсем.

Каласамăр, ачасем,
Хурав парăр-ха часрах.
Мĕнле ятлă хĕвелсем
Çитĕнеççĕ пахчара?

*(Хĕвел çаврăнăш.)*

## МĔНЛЕ ТИНĔС?

Çĕршывра çурхи хаваслăх
Кĕрлесе вăраннă чух,
Илĕртӳллĕн пин-пин саслă
Тăрисем юрланă чух

Çарансем пулсан сип-симĕс,
Йăл илсессĕн çĕнĕрен, —
Уй-хирте асамлă тинĕс —
Симĕс тинĕс — ешерет.

Çил вĕрсе иртет йăвашшăн —
Тинĕс лăпкăн хумханать.
Эп сиртен ыйтса пăхасшăн:
Кам çав тинĕсе паллать?

*(Тырă пуççи.)*

## ВĂРМАНТА

— Эп хавас сана курма.
— Ма?
— Кăмăла каять вăрман.
— Ман!
— Ман епле сана ырлас?
— Ас!
— Эс манран кулан пулас?!
— Лас.

— Тӗлӗнсе мӗнех калам...
— Лам...
— Калаҫать манпа такам?!
— Кам?

*(Ахрăм.)*

## МӖН ЯПАЛА?

Мана сирӗн тупмалла —
Эп пит кирлӗ япала:
Ман ҫине ларма пулать,
Ман ҫине выртма юрать.

Манăн ятăма пӗлсен
Кай енчен мар, мал енчен,
Пӗр сас палли пăрахсан
Арҫын ячӗ пулӗ сан.

Ӗҫ пӗтмен сире валли:
Тата тепӗр сас палли
Хуратса хурас пулсан
Кӳлӗ ячӗ пулӗ сан.

*(Цыван.)*



# ШУТЛАМАЛĂХ, ПУÇ ВАТМАЛĂХ

## ВАРРИНЧЕ МĔН ПУР?

Халĕ сире тата кăткăсрах ĕç кĕтет. Сирĕн çак ыйтусене тĕрĕс хуравламалла. Вĕсем пурте шӳтлĕ пулнине шута илĕр. Тĕрĕс хуравĕсене кам маларах пĕлĕ?

1. Хăвăл варринче мĕн пур?
2. Кĕреçе варринче мĕн пур?
3. Тăпăрчă варринче мĕн пур?
4. Шалаш варринче мĕн пур?
5. Путăк варринче мĕн пур?
6. Чатăр варринче мĕн пур?
7. Карап варринче мĕн пур?
8. Салат варринче мĕн пур?
9. Çĕмĕрт варринче мĕн пур?
10. Пукан варринче мĕн пур?
11. Хутăр варринче мĕн пур?
12. Калăп варринче мĕн пур?
13. Хуралтă варринче мĕн пур?

14. Шулап варри мĕн тĕслĕ?
15. Кулач варри мĕн тĕслĕ?
16. Сухăр варринче мĕн пур?
17. Хунар варринче мĕн пур?
18. Сăсар варринче мĕн пур?
19. Дон варринче мĕн пур?
20. Урам варринче мĕн пур?
21. Кăшăл варринче мĕн пур?
22. Çутă варринче мĕн пур?
23. Сĕреке варринче мĕн пулать?
24. Йĕнер варринче мĕн пур?
25. Таракан варринче мĕн пур?
26. Турат варринче мĕн пур?
27. Куляну варринче мĕн пур?
28. Лаша варринче мĕн пур?
29. Сăра варринче мĕн пур?
30. Сад варринче мĕн пулать?
31. Сывлăш варринче мĕн пур?
32. Палăк варринче мĕн пур?
33. «Мĕн» варринче мĕн пур?

## СĂМАХСЕН ВАРРИНЧИ ХУРАВСЕМ

1. Ăвă. Х-*ăвă*-л.
2. Ре нота. Кĕ-*ре*-çе.
3. Пăр. Тă-*пăр*-чă.
4. Ала. Ш-*ала*-ш.
5. Утă. П-*утă*-к.
6. Атă. Ч-*атă*-р.
7. Ара попугай. К-*ара*-п.
8. Ала. С-*ала*-т.
9. Ĕмĕр. Ç-*ĕмĕр*-т.
10. Ука. П-*ука*-н.
11. Утă. Х-*утă*-р.

12. Алă. К-*алă*-п.
13. Урал (юхан шыв). Х-*урал*-тă.
14. Ула. Ш-*ула*-п.
15. Ула. К-*ула*-ч.
16. Ухă. С-*ухă*-р.
17. *Н* сас палли.
18. Ăса. С-*ăса*-р.
19. *О* сас палли.
20. (Ра Авалхи Египет турри). У-*ра*-м.
21. Ăшă. К-*ăшă*-л.
22. Ут (лаша). Ç-*ут*-ă.
23. Ре (нота). Сĕ-*ре*-ке.
24. Ёне. Й-*ёне*-р.
25. Рак. Та-*рак*-ан.
26. Ура. Т-*ура*-т.
27. Ля (нота). Ку-*ля*-ну.
28. Аш. Л-*аш*-а.
29. Нимĕн те. Сăран варри çук.
30. *А* сас палли.
31. Сывлăшăн варри çук.
32. Алă. П-*алă*-к.
33. *Ĕ* сас палли.

## МĔНШĔН?

1. Мĕншĕн куççем сăмса урлă вырнаçнă?
2. Мĕншĕн хырăма кĕске ăслă теççĕ?
3. Мĕншĕн хăлха иккĕ, чĕлхе пĕрре анчах?
4. Мĕншĕн куккук авăтать?
5. Мĕншĕн йытă вĕрет?
6. Чăхсем мĕншĕн кăтиклеççĕ?
7. Мĕншĕн хĕвел хĕрелет?
8. Мĕншĕн çăхан виле çисе пурăнать?
9. Шăпкан мĕншĕн шăп ларать?
10. Сунарçă пăшал пенĕ чух мĕншĕн хăрах куçне хупать?

11. Ашакăн мĕншĕн хăлхи вăрăм?

12. Мулкач мĕншĕн сиксе çӳрет?

13. Шыв шапин кайри урисем мĕншĕн малтисенчен вăрăм?

14. Сăмса мĕншĕн икĕ куç хушшине вырнаçнă?

15. Мĕншĕн чăрăш ытти йывăççенчен çӳллĕрех?

16. Мĕншĕн ыйхă каçа хирĕç килет?

17. Мĕншĕн чĕлхе кĕçĕтет?

18. Мĕншĕн сухан куççульпе йĕртет?

19. Аист мĕншĕн хăрах урине йăтса тăрать?

20. Мĕншĕн кушак мăрлатать?

21. Мĕншĕн чăхсем тусанпа çăвăнаççĕ?

22. Мĕншĕн мулкач шиклĕ?

23. Мĕншĕн чĕрĕп йĕплĕ?

24. Мĕншĕн шăнкăрчă юрлать?

25. Мĕншĕн çӳç сухалран маларах шуралать?

26. Мĕншĕн кушак шăши тытать?

27. Мĕншĕн ĕне выртсан та кавлет?

28. Мĕншĕн йытă хăй хӳрине хăвалать?

29. Автан мĕншĕн çунат çапса авăтать?

30. Мĕншĕн ӳхĕ ӳхĕрет?

31. Мĕншĕн тăрнасем виç кĕтеслĕх пулса вĕçеççĕ?

32. Çĕр улми çум курăкĕ шăтнине мĕншĕн кураймасть?

33. Вут çинчи яшка мĕншĕн вĕрет?

34. Пĕр тискер кайăк мĕншĕн тепĕр тискер кайăка тапăнать?

35. Пăрса ани çинче тăрна мĕншĕн куляннă?

36. Мĕншĕн йытă хуçи умĕнче хӳрине вылятать?

37. Мĕншĕн чĕлхе тутапа шăл хыçне вырнаçнă?

38. Этем çулпа пынă чух мĕншĕн каялла çаврăнса пăхать?

39. Каçа хирĕç ĕне мĕншĕн выртать?

## «МĔНШĔН?» ЫЙТУСЕН ТУПСĂМĔСЕМ

1. Аташса каясран.
2. Ĕнер çинине паянах манса кайнăран.
3. Сахалрах пуплеме, ытларах итлеме.
4. Юрлама пĕлменрен.
5. Хăратать е хăй хăрать.
6. Калаçма пĕлменрен.
7. Намăссăр çынсем хĕрелме пĕлменрен.
8. Чĕррисене çиме вăйĕ çитменрен.
9. Чĕлхи çукран.
10. Ик куçне те хупсан ним те курма çук.
11. Ăсĕ кĕскерен.
12. Вĕçме пĕлменрен.
13. Вĕсем малтан шăтаççĕ.
14. Куçсем пĕр-пĕрне куçпа çиесрен.
15. Ытти йывăçсем лутраран.
16. Çывăрма вăхăт çитнĕрен.
17. Калаçас килнĕрен.
18. Култарма пĕлменрен.
19. Ик урине те çĕклесен ӳкме пултарать.
20. Хуçа кăмăлне юрасшăн.
21. Шывпа çăвăнма пĕлменрен.
22. Тискер чĕр чунсем нумайран.
23. Тискер кайăксем шăллăран.
24. Мăшăрне юрасшăн.
25. Маларах шăтнăран.
26. Шăшийĕ тыттарнăран.
27. Ĕçсĕр выртать тесе ятласран.
28. Ĕçсĕр аптăранăран.
29. Ал çупса авăтма май çукран.
30. Чĕмсĕр пурăнма кичемрен.
31. Тăват кĕтеслĕх пулма пĕлменрен.
32. Куçĕсем суккăр.
33. Вĕриленнĕрен.
34. Хырăм выçнăран.

35. Ҫӑмарти тӑрӑ пулнӑран.
36. Эпир иккӗн, икӗ пай апат кирлӗ тет.
37. Ытла чараксӑр пулнӑран.
38. Хыҫалта куҫӗ ҫукран.
39. Ларма пӗлменрен.

## ШУТНЕ ПӖЛ

1. Миҫе *-кӑл* илсен геометри фигури пулать?
2. Миҫе *ура* илсен кӑпшанкӑ пулать?
3. Миҫе *-шак* илсен тумтир пулать?
4. Миҫе *-ер* илсен ял ячӗ пулать?
5. Миҫе *-пӳ* илсен хула ячӗ пулать?
6. Миҫе *К* илсен хушӑк пулать?
7. Миҫе *-ӑм* илсен этем кӗлеткин пайӗ пулать?
8. Миҫе *кам* илсен йывӑҫ татӑкӗ пулать?
9. Миҫе *ҫӗр* илсен вӑхӑт пулать?
10. Мӗн чухлӗ *А* илсен платник ӗҫӗнче кирлӗ хатӗр пулать?
11. Миҫе *Ӑ* илсен апат пулать?
12. Миҫе *-ӗк* илсен нӳрӗпе хавшанӑ япала пулать?
13. Миҫе нота илсен паллӑ вырӑс художникӗн ячӗ пулать?
14. Миҫе *Ё* илсен алла тӑхӑнмалли япала пулать?
15. Миҫе *Е* илсен тараса пулать?
16. Миҫе *-ла* илсен ӗҫ хатӗрӗ пулать?
17. Миҫе *Т* илсен хуралтӑ пулать?
18. Миҫе *-та* илсен ҫутмалли япала пулать?
19. Миҫе *А* илсен тин ҫуралнӑ выльӑх пулать?
20. Миҫе *-кӗ* илсен вӑхӑт пулать?
21. Миҫе местоимени илсен кӳртӗм сӑмах пулать?
22. Миҫе *-чӗ* илсен тӗшӗ пулать?
23. Миҫе *-ме* илсен хутлам пулать?
24. Миҫе *-лӗх* илсен пысӑк вӑй пулать?
25. Миҫе *-не* илсен тырӑ хумалли савӑт пулать?
26. Миҫе *-ене* илсен каснӑ йывӑҫ пулать?
27. Миҫе *-пел* илсен ял ячӗ пулать?
28. Миҫе *-пӳ* илсен ҫар пуҫӗ пулать?

## «ШУТНЕ ПӖЛ» ӖҪӖН ХУРАВӖСЕМ

1. Тăваткăл.
2. Утмăл ура.
3. Пиншак.
4. Пинер.
5. Ҫӗрпӳ.
6. Ҫурăк.
7. Ҫурăм.
8. Ҫуркам.
9. Ҫур ҫӗр.
10. Пăта.
11. Пăтă.
12. Ҫӗрӗк.
13. Репин.
14. Ҫӗрӗ.
15. Виҫе.
16. Ҫурла.
17. Ҫурт.
18. Ҫурта.
19. Ҫура.
20. Кӗҫӗр.
21. Эппин.
22. Пӗрчӗ.
23. Пӗрме.
24. Пӗрлӗх.
25. Пӗрне.
26. Пӗрене.
27. Ҫӗрпел.
28. Ҫӗрпӳ, пинпӳ.

## ХĂҪАН?

1. Кăрăҫ хăҫан хаярланать?
2. Куҫ хăҫан ҫук пулать?
3. Хăҫан мăйăр лаша пулать?
4. Ҫукран хăҫан юр-вар пулать?
5. Арлан хăҫан вӗсме пултарать?
6. Ҫарăк хăҫан ҫунатлă пулать?
7. Юхан шыв хăҫан ураланать?
8. Уйăх хăҫан юрлать?
9. Турăх хăҫан ураланать?
10. Тăлăна хăҫан ҫие тăхăнма юрать?
11. Ҫырла хăҫан шывлă пулать?
12. Тирӗк хăҫан ешерет?
13. Пӗве хăҫан курпунлă пулать?
14. Сӗлӗ хăҫан юн ӗҫет?
15. Пура хăҫан савăт-сапа пулать?
16. Пӗве хăҫан юхан шыв пулать?
17. Аш хăҫан ураланать?

18. Ана хӑҫан хӗр ача пулать?
19. Кӑшкар хӑҫан чунлӑ пулать?
20. Палан хӑҫан ураланать?
21. Курак хӑҫан ешерет?
22. Халат хӑҫан вӗҫме пултарать?
23. Сӑвӑ хӑҫан юн ӗҫен пулать?
24. Ҫава хӑҫан хӑма якатма пултарать?
25. Сӑвӑр хӑҫан ҫамрӑкланать?
26. Сӑмах хӑҫан тутлӑ?
27. Тӑшман хӑҫан ырӑ?
28. Тӑлӑппа хӑҫан алӑк питӗрме юрать?
29. Хурӑн хӑҫан апат пӗҫерме юрӑхлӑ?
30. Такана хӑҫан вылььӑх ятне ҫаврӑнать?
31. Ӑса вӗҫтерес тесен мӗн тумалла?
32. Сӑвӑ хӑҫан художника кирлӗ?
33. Курак хӑҫан хӑвӑл пулать?
34. Ялав хӑҫан ят пулать?
35. Пӑлан хӑҫан тӗттӗм вырӑн пулать?
36. Хӑҫан сухан ӳт ҫинче шӑтать?
37. Хула хӑҫан тӗс пулать?
38. Тура хӑҫан чӗр чун ячӗ пулать?
39. Калав хӑҫан шывлӑ пулать?
40. Хуран хӑҫан шурӑ пулать?
41. Алӑк хӑҫан вӑхӑт пулать?
42. Юхан шыв хӑҫан сыхлӑх пулать?
43. Карук хӑҫан вӗҫме пултарать?
44. Кӑвак хӑҫан хӗрлӗ пулать?
45. Тӑвар хӑҫан чуна ҫывӑх?
46. Лару хӑҫан шывлӑ пулать?
47. Сӑвӑ хӑҫан ҫулҫӑ сарать?
48. Хӑҫан ачисем амӑшӗнчен малтан ҫуралаҫҫӗ?
49. Хӑҫан апат ҫиеҫҫӗ?
50. «Вак сум» хӑҫан хула пулать?
51. Турпаса хӑҫан ҫиме юрать?
52. Лаша хӑҫан ултӑ уралла пулать?

53. Путене хăçан юрлать?
54. Хăçан ёç вёрет?

## «ХĂÇАН?» ЫЙТУСЕН ХУРАВЁСЕМ

1. *К* вырăнне П пулсан.
2. Сылтăмран сулахаялла вуласан.
3. Малтанхи сас паллине пăрахсан.
4. Хыçалти сас паллине пăрахсан.
5. Умне *Ч* хушса вуласан.
6. *Ç* вырăнне *К* пулсан.
7. *Пăла* çумне *Н* хушсан.
8. *Х* вырăнне *П* пулсан.
9. *Т* вырăнне *С* пулсан.
10. *П* хушса вуласан.
11. *Л* вырăнне *М* пулсан.
12. *Ё* вырăнне *Е* пулсан.
13. *П* вырăнне *Т* пулсан.
14. *Х* хушса вуласан.
15. *К* хушса вуласан.
16. *П* вырăнне *С* пулсан.
17. Ик сас палли хушăнсан.
18. Икё *Н* пулсан.
19. Уçă сасă паллисем ылмашсан.
20. Малтанхи *А* вырăнне *Ă* пулсан.
21. *А* вырăнне *Ă* пулсан.
22. Малтанхи *А* вырăнне *Ă* пулсан.
23. *С* хушса вуласан.
24. *Ç* вырăнне *С* пулсан.
25. *С* хўреллё пулсан.
26. *С* çемçелсен.
27. *Т* вырăнне *К* пулсан.
28. *Т* вырăнне *С* пулсан.
29. *Ă* тăррине пăрахсан.
30. Юлашки сыпăка пăрахсан.

31. *Н* хушса вуламалла.
32. *В* выраǎнне *Р* пулсан.
33. Пěрремěш *К* выраǎнне *П* пулсан.
34. Каялла вуласан.
35. *П* выраǎнне *Ч* пулсан.
36. *Н* выраǎнне *Л* пулсан.
37. Малтанхи сас паллине пǎрахсан.
38. Юлашки сас паллине пǎрахсан.
39. Каялла вуласан.
40. *А* тǎррине лартсан.
41. *Т* хушса вуласан.
42. Урал çумне *Х* хушса вуласан.
43. Каялла вуласан.
44. Хыçалти *К* выраǎнне *Р* пулсан.
45. *Р* выраǎнне *Н* пулсан.
46. Каялла вуласан.
47. Каялла вуласан.
48. Тыр вырнǎ чухне. Малтан — кěлтесем, кайран — çěмелсем.
49. Пиçсен.
50. Каялла вуласан.
51. Малти кайрипе сас паллисене пǎрахсан.
52. Çын утлансан.
53. Вǎл юрламасть, авǎтать.
54. Хěрсе ěçленě чух.

## ШŸТЛĚ ЫЙТУСЕМ

1. Çара çерçи икě çул пуранǎ хыççǎн мěн тǎвать?
2. Çǎмарта мěнле уйǎха аса илтерет?
3. Мěнле çурта манма çук?
4. Мěнле юхан шывра урана тǎхǎнмалли пур?
5. Сивě алǎк мěн пулать?
6. Мěнле юхан шывра усал пур?
7. Юр çунǎ чух пурǎш мěн тǎвать?

8. Ҫăкăрта мĕн ҫемҫе?
9. Кĕркунне мĕнле йывăҫ ватанать?
10. Мĕн ҫинĕ чух сурса вăрҫаççĕ?
11. Мĕнле тирĕкрен ҫисе тăранма ҫук?
12. Мĕнле ҫулăн вĕçĕ-хĕрри ҫук?
13. Мĕнле хан яланах хурлăхлă?
14. Мĕнле япалан вĕçĕ ҫук?
15. Пурăнас тесен мĕн тăватăн?
16. Куҫа хупса мĕн курма пулать?
17. Вырăнтан тапранмасăр мĕн ҫӳрет?
18. Мĕнле тӳпере хĕвел те, уйăх та, ҫăлтăрсем те ҫук?
19. Мĕнле маччана пӳрнепе тĕкĕнме пулать?
20. Мĕнле уйăхра сахалтарах калаҫма тӳр килет?
21. Мĕнле маччана тир сарнă?
22. Кам шапана хăлхинчен йăтма пултарать?
23. Выҫ(ă) варла миҫе икерчĕ ҫиме пулать?
24. Кам хĕнемесĕр йĕртет?
25. Кушак ҫури ҫуралсанах кама курать?
26. Мĕнле чĕр чун туратлă йывăҫ йăтса ҫӳрет?
27. Мĕнле выльăх ҫуралсанах ватă?
28. Ире хирĕç мĕн килет?
29. Хура тинĕс тĕпĕнче мĕнле чулсем выртаççĕ?
30. Пуш пичкере мĕн пур?
31. Икĕ пур пĕрлешсен мĕн пулать?
32. Куракăн мĕн пур?
33. Камăн ĕçĕ тутлă?
34. Ҫăраççи мĕне пăхăнать?
35. Ҫумăр ҫунă чухне курăк мĕн тăвать?
36. Мĕнле сас паллипе чĕр чун пулать?
37. Мĕнле сас паллин ҫурри пурăнма юрăхлă?
38. Камăн ҫилли пысăк?
39. Пуҫласа ҫиекен апат мĕн ятлă?
40. Мĕнле ана вĕçме пултарать?
41. Мĕншĕн пулă юрламасть?
42. Карăшсем хăҫан юрлама пуҫлаççĕ?

43. Мĕнле чирпе çĕр çинче никам та чирлемест?
44. Мĕнле сăмахра пĕр пек сас палли çĕр?
45. Мĕнле пăрçа çиме юрăхсăр?

## ШЎТЛĔ ЫЙТУСЕН ХУРАВĔСЕМ

1. Виççĕмĕш çулне пурăнма тытăнать.
2. Март уйăхне (ятĕнче пур).
3. Тăван киле.
4. Атăлра. *Атă*-л.
5. Шăналăк. *Шăн*-алăк.
6. Амурта. А-*мур*.
7. Çыврăрать.
8. *Ç* сас палли.
9. Вĕрене. Ун çулçисем хĕрелеççĕ.
10. Хĕвел çаврăнăш.
11. Пуш тирĕкрен.
12. Хур кайăк çулĕн.
13. *Хурлă*-хан.
14. Ункăн.
15. Сывлатăн.
16. Тĕлĕк.
17. Сехет.
18. Кăмака тӳпинче.
19. Çăвар *маччине*.
20. Февральте. Вăл чи кĕске уйăх.
21. *Çăвар маччине*.
22. Никам та. Ун хăлхи çук.
23. Пĕрре. Пĕр икерчĕ çисен этем выçă мар вара.
24. Сухан.
25. Никама та. Вăл суккăр çуралать.
26. Пăлан.
27. Тĕве. Вăл курпунлă.
28. Шуçăм.
29. Йĕпе чулсем.
30. Сывлăш.

31. Тĕс. Пурпур.
32. Ура. К-*ура*-к.
33. Пыл хурчĕн.
34. Уççине.
35. Йĕпенет.
36. Упа. *У*-па.
37. Çур-*т*.
38. Ёнен.
39. Сĕт. Анне сĕчĕ.
40. *Тăм*-ана. Тăмана (кайăк).
41. Шыв сыпсан эс те юрлаймастăн.
42. Нихăçан та. Вĕсем авăтаççĕ.
43. Тинĕс чирĕпе.
44. Çĕр-*ĕ* сăмахра.
45. Сикекен пăрçа.

## ЫТАРЛĂ ЫЙТУСЕМ

Ку пайра, ачасем, сире кăткăс та интереслĕ ыйтусем кĕтеççĕ. Хуравличчен малтан тимлĕ вулăр, хуравне эсир панă текстсенчех тупма пултаратăр. Ыйтăвĕсем ытарлă пулнине ан манăр.

### Автобус

Акă килет автобус —
Вăл тиенĕ тырă.
Пулма тивĕç çывăх тус
Хуть хăçан та ырă.

Ыйту: Автобус çинчен çырнă йĕркере мĕнле йăнăш пур?

### Акула

Авалхи кунсенче çак таврари çĕрсенче пураннă пĕр вată пулăç. Ăна никам та ятран чĕнмен, пурте Пулăç тенĕ. Вăл кашни кунах Атăл хĕррине пулă тытма çӳренĕ.

Пĕррехинче Атăл хĕрринче çакăн пек мыскара пулса иртет.

Пулăç ирпе ирех пулă тытма пырса ларать. Вир пĕрчи тирнĕ вăлтине шыва ярать те сĕлĕ пĕрчи пек пулă туртса кăларать. Сĕлĕ пĕрчи пек пуллине шыва ярать те йĕке майлă пулă туртса кăларать. Йĕке майлă пуллине шыва ярать те ăса пек пулă туртса кăларать. Ăса пек пуллине шыва ярать те кисĕп пек пулă туртса кăларать. Кисĕп пек пуллине шыва ярать те каска пек пулă туртса кăларать. Каска пек пуллине шыва ярать те кимĕ пек пулă туртса кăларать. Вăл та пулин пулать акула.

Акула вăлтана çакланнине курать те ватă Пулăç кулса ярать:

— Ак, кулă!..

Ачасем, калăр-ха: мĕншĕн çапла кăшкăрса янă-ши вăл?

### Анчăк

Анчăк вĕрет хамлатса —
Ют çынсене хăрататъ.
Ним тума та аптрасан
Анчăк мĕнпе йăпанать?

### Аçтаха

Аçтаха кам вăл, мĕн вăл?

Аçтаха вăл — ăс-хал вăйĕпе пулма пултарнă чĕр чун, виçĕ пуçлă, икĕ çунатлă хăрушă çĕлен.

Аçтахасем халап тата юмах çĕршывĕсенче тĕл пулаççĕ. Унсăр пуçне вĕсем пурте лайăх пĕлекен çĕршывра та пурăнаççĕ.

Калăр-ха эппин, мĕнле çĕршывра пурăнаççĕ аçтахасем?

### Вĕреççĕ

Анчăк та вĕрет, йытă та вĕрет. Ĕç те вĕрет, пурнăç та вĕрет. Çил те вĕрет, яшка та вĕрет.

Вĕренекенсем, калăр-ха: яшка çиме ларнă ача мĕншĕн вĕрет?

## Жираф

Жираф Африкăри вăрманлă çĕрсенче пурăнать. Вăл йывăç тăрринчи çемçерех çулçăсене çиме юратать, çавăнпа унăн майĕ вăрăмланнă та. Жирафăн мăйĕ çине пăхса пурте тĕлĕнеççĕ. Унăн урисем тăваттă.

Калăр-ха тĕплĕн шухăшласа: жирафăн кайри урисем вăрăмрах-и, малтисем-и?

## Вăрманта

Авăн уйăхĕ çитеспе Ахмар вăрманне кайрăм. Вăрман тăрăх çӳресе самаях ĕшентĕм. Кăштах канса илсен те юрать пулĕ терĕм. Ватă вĕрене çумне таянтăм та сисмесĕрех тĕлĕрсе кайрăм.

Акă эпĕ вăрман варринче тăратăп, унти сасăсене итлетĕп. Унччен те пулмарĕ ман тавра тискер кайăксем пухăна пуçларĕç. Катăк туталлă куян та, сар кĕрĕклĕ тилĕ те, тукмак хӳреллĕ кашкăр та, çăмламас упа та пур. Эпĕ васкасах йывăç тăррине хăпарса лартăм. Мĕн тумалла ĕнтĕ ман? Пăхатăп та çĕрелле акă мĕн куратăп. Тата тепĕр ушкăн чурăс чĕр чун ман паталла килет. Вĕсен хушшинче çилхеллĕ арăслан та, йăрăм тирлĕ тигр та, мăйрака сăмсаллă носорог та тата ытти чĕр чунсем те пур. Пурте мана тапăнасшăн, тытса çурасшăн. Ман алăра нимĕн те çук. Йывăç тураттисем çинче ларни — шанчăклă хӳтлĕх мар. Мана тапăнакан чĕр чунсем хушшинче йывăç çине хăпарма пултараканнисем те пур. Кăшкăрас терĕм те — сассăм çук, хăранипе пĕтсе ларнă. Çӳç-пуç вирелле тăрса кайрĕ. Ах, хăрушă!.. Хам ăшăмра шутлатăп: тинех пĕтрĕм иккен!..

Ачасем, калăр-ха: çак сехметрен мĕнле майпа хăтăлмалла?

## Варсук

*Юмӑш юмах*

Авалах та мар, паянах та мар, Варакасси ялӗнче пурӑннӑ пӗр ҫамрӑк ача, ячӗпе каласан — Варсук.

Вӑл ӑсран та, сӑнран та аванах курӑннӑ, никамран та, нихӑш енчен те катӑк мар. Пӗр кӑлтӑксӑр ҫын ҫут тӗнчере ҫук тенӗ пек, Варсукӑн та пӗр ҫитменлӗх пулнӑ иккен: вӑл калаҫу сӑмахӗсене кукӑртса е пӑскаласа калаҫма тӑрӑшнӑ, вирелле сӑмахсем те хушса хунӑ. «Ҫӑхан вӗҫет» тесе калас вырӑнне «Ҫӑмха вӗҫӗнет» теме пултарнӑ.

Вӑхӑт иртнӗ май ирӗклӗ кунсем те иртсе каяҫҫӗ. Варсук та тантӑшӗсемпе пӗрле шкула ҫӳреме тытӑнать. Унӑн йӑли-йӗрки шкула ҫӳреме тытӑнсан та улшӑнмасть, ҫаплипех юлать. Ача чухне вӑл калаҫу сӑмахӗсене кукӑртма е пӑскалама тӑрӑшнӑ пулсан, халь вара вӗсене урӑхлатса ҫырма тытӑнать.

Пӗррехинче вӗрентекен вӗсене ирӗклӗ темӑпа сочинени ҫырма хушать. «Ирӗклӗ» сӑмаха илтсенех Варсук чунӗ ҫав тери савӑнса каять: «Питех те аван, питех те лайӑх! — тет вӑл ӑшӗнче. — Мӗнле ҫырас тетӗп, ҫапла ҫыратӑп, мӗн ҫинчен ҫырас тетӗп, ҫавӑн ҫинчен ҫыратӑп».

Ҫапла сӗмленсе илет те Варсук ҫырма тытӑнать. Нумаях та ҫырмасть, сахалах та ҫырмасть — лӑп та шӑп пӗр листа ҫырса тултарать те пысӑкран та пысӑк пӑнчӑ лартса хурать (савӑннипе пуль ӗнтӗ!). Акӑ вӑл Варсук ҫырса хатӗрленӗ ирӗклӗ сочинени.

## Вармантa

Аттипе пирле вырмана карӑмӑр. Вурманта йывҫӑсам номай. Палӑраххисем: акарц, ӑвӑ, вӗрен, йӗрме, карӑҫ, пайлан, сирӗнь, ҫока, тирӗк, урмӑш, хурын, чӑршӑ, шӑлӑм, юлман тата уттисем те.

Манын юранӑ йывҫӑ — шишкӗ. Он ҫинча майра ӳсет. Сар ӑйӑрсане порте чавса ҫияҫҫӗ.

Вырманта тирлӗ ҫурласем хирленеҫҫӗ. Усене эпӗ хам та сав тариях юраса ҫиятӑп.

Юмлан ҫинча йӗке полать. Уна капансем те, кӗл йыснисем те шотсӑр юрласа ҫӑмлаҫҫӗ. Йӗке ҫивсе хыснасем путех те мӑтӑрланаҫҫӗ, пӳтех те сапӑрланаҫҫӗ. Сосна калай парать.

Юлакинчен ҫапа калайрас пать:

Ворман — хаклӑ мол, топра,
Вир мана вотран опра!!!
Мӑн ҫӑмах пӗтӗрӗ.
Ҫывраканни — Варҫук.

Ачасем, Варсук ӗҫӗнче миҫе йӑнӑш тупаятӑр-ши?

### Калак

Акӑ ӗҫ хатӗрӗсем: аршӑн, калак, кӗреҫе, лум, пуртӑ, сенӗк, ҫава, ухват, хусӑк, шӗшлӗ... Вӗсенчен пӗрне — калакне суйласа илӗпӗр. Ун ҫине пӑхса ҫапла ыйтас килет:

— «Калак» сӑмахра мӗнле вӑрттӑнлӑхсем пур?

### Каскӑн кайӑк

Аҫтӑрхан мӑйри пек йӑва пур. Ҫав йӑвара вӑрттӑн кайӑк ҫуралать. Ӑна алӑпа тытса пӑхма та, куҫпа курма та май ҫук, илтме кӑна пулать. Вӑрттӑн кайӑк тенӗскер икӗ хутлӑ алӑк витӗр вӗҫсе тухать. Вӗҫсе каясса пӗчӗкҫӗ кайӑк пулса вӗҫсе каять, кайран вара караппӑл пекех мӑн кайӑк пулса каялла таврӑнать. Таврӑннӑ чухне пӗр харӑсах икӗ тӗнӗрен пырса кӗрет.

Мӗнле кайӑк-ши вӑл?

### Куянкка

Авалхи кунсенче, ӗлӗкхи ҫулсенче акман ана пуҫӗнче, ҫулман улӑх хӗрринче пӗр пӗчӗкҫӗ Куян ҫуралнӑ. Ӑна питӗ пӗчӗк пулнӑран Куянкка тейӗпӗр. Ҫак Куянкка виҫӗ кун-

танах амăшне çухатать. Пĕр кӳлĕм кулянать, икĕ кӳлĕм кулянать... анчах куляннипе ĕç тухмасть — çимелли тупмалла. Тухса чупать Куянкка çимелли шырама.

Йăкăлт-йăкăлт сиккелесе çӳренĕ май çамрăк Куянкка шыв хĕрне çитсе тухать. Шыв тĕкĕрĕ çине пăхать те кассa кайса кулма тытăнать.

Камран кулнă-ши Куянкка?

### Ларса тăрать

Калаçу чĕлхинче тĕрлĕрен сăмах çаврăнăшĕсем тĕл пулма пултараççĕ. Акă вĕсенчен пĕри: «Ларса тăрать».

Çак сăмах çаврăнăшĕ пĕр енчен — тĕрĕс, тепĕр енчен — тĕрĕс мар пек туйăнать.

Ăнлантарса парăр-ха: «Ларса тăрать» тени хăш енчен тĕрĕс, хăш енчен тĕрĕс мар.

### Мĕн-ши вăл?

Авалтан килекен ытарлă сăмах пур. Çав сăмахра этем кĕлеткин пайĕ çинчен шахвăртса каланă. Вăл вăрăм та, кĕске те; йӳçĕ те, пылак та; пуклак та, çивĕч те; тус та, тăшман та; ырă та, усал та пулма пултарать.

Мĕн-ши вăл?

### Нуша

Авалхи çынсем çут çанталăкри пулăмсене чĕрĕ чун вырăнне хунă, чĕрĕ чун пек курнă. Çавăнпа та тĕрлĕрен усал пулăмсене йăпатма, парне парса çырлахтарма тăрăшнă.

Чăвашсем нушана те чĕрĕ чун пек курнă пулĕ çав. Çав мехелпе «нуша куртăм» тесе калаççĕ те пулĕ.

Ан тив, нуша чĕрĕ чун пултăр. Эппин, мĕншĕн-ха куçа курăнмасть?

## Пулма пултарать-и?

Асра юлнă асамлăх çинчен каласа парам-ха. Пĕррехинче эпĕ Пĕршенер ялне кайрăм. Унта пырса кĕтĕм те акă мĕн куртăм: Çак ял урлă пĕр хура çăхан вĕçет, хӳри çинче хура йытă ларать.

Калăр-ха: пулма пултарать-и çавăн пек?

## Сунарçăпа хуралçă

Хуралçи шав: «Хăр-хам, — тет, —
Сана тытса çурам», — тет.
Çунарçи шав: «Мăр-мăр, — тет, —
Мана тытма йывăр», — тет.

Калăр-ха: камсем çинчен сăмах пырать çак сăвăра?

## Çăкăр чĕлли

Асăрханă пулĕ: çăкăр чĕлли алран вĕçерĕнсен темшĕнçке хуть хăçан та çу сĕрнĕ енĕпе ӳкет. Тарăхтарать те вара: пĕрре çуллă çăкăр вараланать, тепре урайне тасатас пулать.

Çăкăр чĕлли çу сĕрнĕ енĕпе çӳлелле ӳктĕр тесен мĕн тумалла?

## Çемье

Пирĕн кӳршĕре пĕр çемье пур. Çав çемьере икĕ амăшĕ, икĕ хĕрĕ тата кукамăшĕ пурăнаççĕ.

Миçен пурăнаççĕ-ши вĕсем?

## Тăвату кĕтеслĕ пӳрт

Каламасăрах паллă: тăвату кĕтеслĕ пӳрт тăвату еннелле пăхса ларать. Çут çанталăкăн тăвату ен: анăç, кăнтăр, çурçĕр тата тухăç.

Компас пулăшнипе тăватă кĕтеслĕ пӳрте тавралăхăн тăватă енне тĕп-тĕрĕс пăхтарса лартма пулать. Ку ĕç йывăрах та мар тейĕпĕр.

Тăватă кĕтеслĕ пӳрте пур енĕпе те кăнтăралла пăхтарса лартма та пулать.

Шухăшласа пăхăр-ха: çапла тăвас тесен пӳрте ăçта лартас пулать-ши?

### Темĕскер

Аслă Çĕпĕр çĕрĕнче,
Вĕçсĕр тайга варринче,
Вăрăм лиçван айĕнче,
Вырта парать темĕскер:
Вăкăр пекех вăйлăскер,
Катка пекех пысăкскер,
Така пекех çăмлăскер,
Утă купи майлăскер,
Уласа та мĕкĕрсе
Турат хуçса çӳренскер.

Калăр-халĕ, ачасем:
Кам пулать-ши çав тискер?

### Тĕрлĕ выльăх

Тĕр-тĕр карта, тĕр карта,
Тĕрлĕ выльăх пĕр карта:
Лаша, ĕне, качака,
Автан, сурăх, пĕр така,
Икĕ сысна, виçĕ хур —
Кунта мĕнле йăнăш пур?

### Шурă Акăш

Акăшсем Атăл тавраш̆енче те сахал мар пулнă, ку яхăнта вĕсене çут çанталăк уççинче курма та çук — йышĕпе чаксах пыраççĕ. Питех те шел, анчах ним тума та çук.

Акăш — илемлĕ вĕçен кайăк, пуринчен хитререххи — Шурă Акăш. Ахальтен мар ĕнтĕ ăна илемлĕх символĕ тесе хисеплеççĕ. Çав вăхăтрах Шурă Акăша таса юратун турпикийĕ тесе те калаççĕ.

Акăшăн илемĕ те, тасалăхĕ те çителĕклĕ. Шурă тĕс — пархатарлă тĕс. Акăш шурă мамăк купи пекех чат шурă. Çапах унăн та таса илемлĕхне пăсакан пĕр çитменлĕх пур.

Шухăшласа пăхăр-ха: Шурă Акăшăн мĕнле çитменлĕх пур?

### Этем элемĕ

— Эсĕ кам? — тесе ыйтнă пĕринчен.

— Эпĕ — этем элемĕ, — тенĕ хайхискер, — этемрен маларах çуралатăп та ун çумне яланлăха çулăхса ларатăп, нихçан ютшăнми юлташĕ пулса пурăнатăп. Çынни хăй вилес пулсан та эпĕ — унăн элемĕ — пĕтместĕп, пурăнатăп.

Кам пулнă-ши вăл?

## ЫТАРЛĂ ЫЙТУСЕН ХУРАВĔСЕМ

### Автобус.

Автобус тырă турттармасть, çынсене лартса çӳрет.

### Акула.

Атăла Акула туртса кăларни калама çук кулăшла, çавăнпа ватă Пулăç кулса янă та.

### Анчăк.

Хӳрипе выляса йăпанать.

### Аçтаха.

Китайра. Уяв умĕн унта аçтаха кĕлеткисене тума юрáтаççĕ.

**Вĕреççĕ.**

Çăвар ан пиçтĕр тесе.

**Жираф.**

Жирафăн, тĕлĕнмелле пулсан та, кайри урисемпе малти урисем пĕр танах.

**Вăрманта.**

Ыйхăран вăранмалла.

**Калак.**

Калакра икĕ тĕрлĕ вăрттăнлăх пур: 1) ик еннелле те пĕр пекех вуланать; 2) калак варринче **ала** пур к-*ала*-к.

**Каскăн кайăк.**

Сăмах. Хăв каланă сăмах каялла таврăнать.

**Куянкка.**

Катăк тутаран. Урăхла каласан, хăйĕнчен хăй кулнă.

**Ларса тăрать.**

1. Этем пĕр вăхăтрах ларма та, ура çинче тăма та пултараймасть.

2. Этем пĕрмаях лармасть, хăçан та пулин пурпĕрех тăрать.

**Мĕн-ши вăл?**

Чĕлхе. Этем чĕлхи çинчен сăмах пырать.

**Нуша.**

Нуша куçа курăнса çӳрес пулсан ăна тахçанах тустарса тăкнă пулĕччĕç.

**Пулма пултарать-и?**

Пулма пултарать: хура курак хăй тĕллĕн вĕçет, хура йытă хăйĕн хӳри çинче ларса тăрать.

**Çунарçăпа хуралçă.**

Сунарçă — кушак, хуралçă — йытă.

**Çăкăр чĕлли.**

Çăкăр чĕллин ик енне те çу сĕрмелле.

**Çемье.**

Виççĕн пурăнаççĕ: амăшĕ, хĕрĕ тата мăнукĕ.

**Тăвată кĕтеслĕ пӳрт.**

Çурçĕр полюсне лартас пулать, вара тăвată кĕтеслĕ пӳрт пур енĕпе те кăнтăралла пăхса ларма пултарать.

**Темĕскер.**

Сăвă тупсăмĕ: упа.

**Тĕрлĕ выльăх.**

Хуравĕ: автанпа хурсем выльăх мар, вĕсем — килти кайăк-кĕшĕк.

**Шурă Акăш.**

Шурă Акăшăн урисем хура.

**Этем элемĕ.**

Çын ячĕ (ятарлă ят). Этем вилсен те ячĕ пурăнать.



# ЮМАХСЕМПЕ ЮПТАРУСЕМ, КАЛАВСЕМ

## АВАЛХИ АВТУК

Карăк курас килнĕрен
Кайрăм хура вăрмана.
Кун иртtертĕм вĕтлĕхре —
Курăнмарĕ вăл мана.

Авалхи кайăксенчен пĕри вăл — карăк.

Ĕлĕкрех çак кĕрнеклĕ те сумлă кайăксем Чăваш çĕршывĕнчи вăрмансенче те йышлă пулнă. Ун çинчен пире вырăн ячĕсемпе ял ячĕсем систерсе тăраççĕ. Акă Канашран инçех мар пĕр ял пур. Унăн ячĕ — Каракла. Мĕншĕн çавăн пек ят панă-ши çак яла? Ку таврара ĕлĕк-авал пысăк вăрман лаптăкĕсем сарăлса выртнă. Тĕрлĕ сăлтава пула чăвашсем вăрман варринелле куçса ларнă, çĕнĕ ял пуçласа янă. Çав тавралăхра карăксем йышлăран вырăнне те, ялне те Каракла тесе ят панă. Вăрманĕ çак тăрăхра халь те пур, анчах та вăл ĕлĕкхи сĕм вăрман мар. Каракла ялĕ те пур, анчах та унта пурăнакансем карăк курмасăрах ĕмĕр ирттереççĕ. Авалхи кайăкран, асăнмалăх тенĕ пек, ячĕ анчах

упранса юлнӑ. Малашне те каракӑсем сахалланса пырсан вӗсен ячӗсем те асран тухса ӳкмӗҫ-ши?

Карӑк — вӑрман кайӑкӗ. Вӑл сӗм вӑрманти улах вырӑнсенче, ҫын пырса кӗмен ҫӗрсенче пурӑнма юратать. Пуринчен ытла хыр вӑрманне кӑмӑллать. Хырлӑх — каракӑшӑн ырлӑх. Уҫӑ вырӑнсенче нихҫан та пурӑнмасть.

Карӑк самаях пысӑк кайӑк. Хӑшсем ултӑ килограмм е ытларах та туртма пултараҫҫӗ. Вӗсен апачӗ — сӗм вӑрманти кӑвак ҫырла, ҫӗр ҫырли, хура ҫырла, хурӑн ҫырли. Ку ҫимӗҫсем каракӑшӑн ҫемҫе ҫӑкӑр вырӑнне. Хӗле кӗрсен вара кайӑк «хытнӑ ҫӑкӑр» ҫине куҫать: хыр лӑссисене тата ялан ешӗл ларакан уртӑш чӑмӑрккисене ҫиме тытӑнать. Ҫав хытӑ ҫимӗҫсене вӗтетме вӑл пӗсехе тулли «арман чулӗ» тултарать. Чул хушшинче вӗтелнӗ апатпа тӑранса пурӑнать те вара хӗл каҫиччен.

Ку кайӑксем мӑшӑрпа пурӑнмаҫҫӗ, амисемпе аҫисем уйрӑмшарӑн вӗҫсе ҫӳреҫҫӗ. Вӑрман чӑххин — карӑк амин авӑтмалӑх сас ҫук, ҫавӑнпа авӑтмасть. Авӑтаканни — аҫи, вӑрман автанӗ. Авӑтасса та автанла авӑтмасть, хӑйне майлӑ сас парать. Вырӑссем «карӑк юрлать» теҫҫӗ, чӑвашсем «карӑк авӑтать» теҫҫӗ. Авӑтать пулсан та, юрлать пулсан та карӑк сассине автан сассипе те, ытти кайӑк сассипе те танлаштарма май килмест. Ун сасси хыр тӗпӗнчен хӑйранса тухакан хӑйне майлӑ ҫурӑк сасӑ. Авалхи кайӑка куҫ кӗреттӗн куракансем сахал пулсан, унӑн хӑйтӑкрах сассине илтекенсен йышӗ тата та сахалрах. Карӑк авӑтнине илтес килет-и? Ун сассине илтес тесен ҫӗнӗ кун ҫуралнӑ вӑхӑтра ҫурхи вӑрмана каймалла.

Ҫурхи хыр вӑрманӗ. Хирсенче юр пӗтсе пырать. Хӗллехи шурӑ шупӑр ҫӗтӗлсе-таткаланса, ҫурхи шыв пулса ҫырма тулли кӗрлесе юхмаваскать. Вӑрманта урӑхла. Кунта шурӑ ҫи витти хӑйӗн тӗсне ҫухатсах кайман, вӑл кӑштах ҫемҫелсе йӑшнӑ кӑна. Путать. Утма кансӗр. Ҫавӑнпа та вӑрман варринче ура йӗрӗсем пачах та ҫук. Унта-кунта хӳра хӑмӑр лаптӑксем ҫеҫ курӑнкалаҫҫӗ, вӗсем те пулин уҫӑрах

выранчен кӑна. Ҫурхи ҫутӑ кунсем пуҫлансан малтанхи хут сасӑ парать те ӗнтӗ карӑк. Ҫав сасӑ тӑрӑх хуҫине те шыраса тупма пулать. Унӑн сасси вӑйлӑ мар, ик ҫӗр-виҫ ҫӗр метртан аякка илтӗнмест. Карӑк артист мар, никама та сассипе илӗртме тӑрӑшмасть. Вӑл амишӗн кӑна юрлать. Юрри ун самаях хитре, итленӗҫемӗн итлес килет. Вӑрман автанӗн сассинче карӑк амин кӑмӑлне ҫавӑрмалӑх илемлӗх те, хитрелӗх те ҫителӗклӗ.

Вӑрман автанне халиччен курман пулсан — курма васкӑр! Авалхи кайӑка курасси — пысӑк савӑнӑҫ. Карӑк вӑрманӗсем ҫывӑхра ҫук пулсан, вӑл пурӑнакан вырӑнсене хӑнана каяс пулать. Карӑк кӑмӑл тунӑ вырӑна хӑвӑр тӗллӗн тупаймасан — пӗр-пӗр лесника е вӑрман евчисене — егерьсене тархаслама тивет. Вӗсем сире кирлӗ вырӑна илсе кайма пултарӗҫ, ҫула май карӑк ҫинчен хӑйсем мӗн пӗлнине каласа парӗҫ.

Эпӗ хам та ҫапла турӑм. Манӑн авалхи автука ниҫта та мар, шӑп кӑна хӑй ҫуралса ӳснӗ вырӑнта курас килетчӗ. Ҫав ӗмӗтпе ҫурхи кунсен пуҫламӑшӗнче Хыркассине кайма тухрӑм. Унта пирӗн тӑван пур — Гурий Иванович Вурманаев, ялти пек каласан, Курти. Вӑрман хуҫалӑхӗнче нумайранпа ӗҫлет ӗнтӗ. Хӑйӗн ӗҫне питӗ лайӑх пӗлет. Унӑн ҫинчен хаҫатра та ҫырса кӑларнӑччӗ. Ҫак Курти ачаранпах вӑрманпа вӑртахлӑ, хушма ячӗ те хӑйне май — Вӑрман Куртийӗ.

Пыратӑп ҫулпала. Тавралӑха сӑнатӑп. Ҫурхи илемлӗх вӑй илме ӗлкӗреймен-ха. Пӗртен-пӗр илем — янкӑр тӳпе. Хӗллехи тӳпе ҫӗре пусса, хупласа тӑрать. Ҫурхи тӳпе анлӑ та, пӗтӗм уҫлӑха куҫ умне уҫса хурать. Ирӗккӗн сывлатӑп. Хуллен кӑна малалла утатӑп. Вӑрман кукрине ҫитрӗм. Малти ҫул курӑнмасть, ӑна вӑрман сӑмсахӗ хупӑрласа тӑрать. Акӑ ҫул ҫавринчен иртрӗм те кӗтмен-туман ҫӗртен чаршав хыҫӗнчи илемлӗ ял курӑнса кайрӗ. Ҫак ӗнтӗ вӑл Хыркасси, Куртисен ялӗ. Ҫитрӗм яла. Урампа утса пыракан пӗр хӗр ачапа сӑмах пуҫларӑм.

— Çак ялсемех-и, хĕрĕм?

— Çак ялсемех.

— Куртисем ăçтарах пурăнаççĕ?

— Кам вăл?

— Леçникре ĕçлетчĕ пулас.

— Вăрман хуçи çинчен ыйтатăн иккен, ав вĕсен килĕ, кунтан пиллĕкмĕш çурт.

Куртисен çурчĕ ытти килсенчен нимпе те уйрăм мар, хăйне майлă хăтлă пӳрт. Çурт умĕнче вăрмантан кăларнă пĕренесем купаланса выртаççĕ. Мана хаяр саслă йытă кĕтсе илчĕ. Тӳрех пырса кĕме çук — хуралçи шӳт тума юратмасть. Йытă вĕрнине илтсе кил хуçи тухрĕ. Эп халиччен кунта пулман — пĕрремĕш хут килетĕп. Хам çинчен кил хуçине пĕлтертĕм те — пӳрте кĕме ирĕк илтĕм. Куртипе арăмĕ савăнса та хыпăнса ӳкрĕç, тăван килнĕ ятпа, сĕтел çине тирпейлеме пуçларĕç.

Сĕтел хушши — кĕреке, эпĕ — хăна. Калаçу хускалса кайрĕ. Эпĕ вĕсен пурнăçĕ çинчен ыйтса пĕлмеваскатăп, вĕсем эпир мĕнле пурăннине пĕлесшĕн. Калаççан-калаççан хам мĕншĕн килнине те каласа патăм.

— Кирлĕ ĕçпе килнĕ вĕт-ха эпĕ, — тетĕп.

— Мĕнлерех ĕçпе-ши? — тет Курти.

— Автансем пур-и сирĕн?

— Автанĕ пур-ха вăл, ăна йăпанса пурăнмалăх чăххисене те усратпăр. Чăххисем çăмарта та пуçларĕç ĕнтĕ.

— Килти автан кирлех мар-ха мана.

— Мĕнле автан кирлĕ тата?

— Вăрман автанĕ кирлĕ мана, çавна курма килнĕ эпĕ.

Пурте пĕр харăсах кулса ятăмăр. Вара пирĕн сăмах вăрман пурнăçĕ çине куçса кайрĕ. Кăштах калаççан Курти сăмаха вĕçлерĕ.

— Вăрман автанне курас тесен каçах выртмалла та ирех тăмалла, — терĕ.

Эпир çапла турăмăр та.

Кун çути киличченех çула тухрăмăр. Вăрман çулĕ —

ансăр çул. Утма йывăр. Ура путать. Çĕрлехи шăн кĕленче пек çĕмĕрĕлет. Çул кĕскетме калаçса утатпăр. Курти мана авалхи кайăк патне мĕнлерех çывхармалли çинчен каласа парать. Эпĕ вăл каланисене пуçа хывса пыратăп.

Вăрман хуçи пулса ĕçлекен Курти вăрăм çын мар, вăтам кĕлеткеллĕскер. Сăн-пичĕ, яланах уçă сывлăшра çӳренĕрен пулас, кăштах кушăрканă пек курăнать. Типшĕмрех пит, тӳрĕ сăмса. Куçĕ вара — витĕр куç, пĕрре пăхсах саккăр сума пултарать. Курти питех калаçмасть, кирлĕрен кăна сăмахлать. Чăвашлăхĕ калаçнинченех палăрать: сăмахĕсем çемçен илтĕнеççĕ. Çине сăран курткă, пуставран çĕлетнĕ хура шăлавар тăхăннă. Куртка айĕнчен хăмăр свитер курăнать. Лавккара илнĕскер мар, килте çыхнăскер. Уринче ăшлатса-туллатса çĕлетнĕ çирĕп атă, унтă тенĕскер. Кун пек тумпа Полярункинче те шăнмалла мар.

Авалтан пыракан сăмах пур: каçхи вăрман ютсене юратмасть теççĕ. Çак сăмах тĕрĕслĕхне çийĕнчех ăнланса илтĕм. Çĕрлехи вăрмана çӳреме питех те кансĕр: пĕр енчен, турат вĕçĕсем куçран пырса тăрăнасран шутсăр сыхланмалла, тепĕр енчен, хирĕнчĕклĕ пусса урана хуçма та пулать. Те çĕрелле, те çӳлелле тинкермелле — ниçта пăхма пĕлейместĕн. Хальхаль инкек çитсе çулăхассăн туйăнать. Асăрханса утма тивет. Ура айĕнче асфальт мар, тумхахлă çĕр. Çĕр çинче юр. Шăтăк-путăк палăрмасть. Юр та пулин утма чăрмантарса пырать. Çапах та малаллах каятпăр.

Курти малта, вăл — ертсе пыраканни. Эпĕ хыçалта, ерсе пыраканни. Хам пĕччен пулсан, тарăхнă енне, тахçанах каялла çаврăнмалла. Çулсăр утма хăнăхман пирки тамăкри пек асапланатăп, анчах та тĕллев малаллах сĕтĕрет.

Утсан-утсан Курти тăпах чарăнса тăчĕ. Ăна кура эпĕ те чарăнтăм. Курти çурма сасăпа пăшăлтатса пĕлтерчĕ:

— Сасси пур, — тет.

— Мĕн сасси? — тетĕп.

— Карăк çинчен калатăп.

— Э-э...

Эп асапланса утнă май карăк çинчен мансах кайнă иккен. Çул асапĕ тем çинчен те мантарĕ! Курти тимлесех итлет. Эпĕ те итленĕ пек тăватăп, анчах нимĕн те илтейместĕп. Ыйхăллă вăрман шăп ларать. Пĕр сасă та çук. Автан сасси пачах та илтĕнмест. Илтмен хăлхана илтнĕ пек тăвас мар тесе сăмах пуçларăм. Курти пек, çур сасăпа, хуллен çеç калаçатăп.

— Карăк пирки мĕнле каласан тĕрĕс: авăтать темелле-и е юрлать темелле?

— Кам мĕнле пĕлет, çапла калать — чару çук.

— Эсĕ ху мĕнле калатăн?

— Эпĕ хам карăк карăклать тетĕп.

Калаçма чарăнтăмăр та асăрханса, хуллен кăна малалла утрăмăр. Татах чарăнтăмăр. Татах итлесе тăратпăр. Авалхи кайăк сассине аванрах илтес тесе пуçри çĕлĕке те васкамасăр хывса илтĕм. Хăлхасене, шиклĕ куян пекех, чанк тăратрăм. Халь ĕнтĕ, хăлха çине упа пуснă пулсан та кайăкăн çураçу юррине аванах илтетĕп. Аякран килекен асамлă сасă унăн сасси пулнине те чиперех чухлатăп. Асра хăварас тесе çав сасса пĕр пĕрчине çухатмасăр асăма хывса тăратăп.

Малтанах авалхи автук сасси сакăлталлă канавпа юхакан шыв сассине аса илтерчĕ. Кĕмĕл шăнкăравăн уçах мар сасси. Ун хыççăн пăрланнă кӳлленчĕк çине тумла ӳкнĕ сасă илтĕнме пуçларĕ. Кĕмĕл тумлам пăр çине тумлать. Ав мĕнлерех саслă иккен авалхи автук!

Курти калани тĕрĕсех иккен. Карăк, самаях пысăк кайăк пулин те, сасăран хăватлă мар. Унăн сасси — хулăн тимĕрлĕ хăнкăравăн çурăкрах сасси. Пурпĕрех ун сассинче хăйне майлă илемлĕх, чуна илĕртекен хитрелĕх пур.

Вăрман — карăк килĕ — вăрттăнлăхпа тулса тăрать. Кунта вăрттăнлăх хуçа. Карăк та, сыхланса пурăнма хăнăхнăскер, сассипе мухтанмасть, янратса çут тĕнчене тĕлĕнтерме те шутламасть. Унăн сасси — туйăмлă, пулас мăшăрне савăнтарма ĕнерленĕ ĕметлĕ сасă. Çавăнпа та вăрман ав-

танĕ килти пек кăшкăрса авăтмасть, пулас мăшăрне кăсăклантарас тесе, ун кăмăлне юрас тесе юрлать. Юрă ăсти пулас тесе мар, юрăхлă мăшăр тупас тесе юрлать.

Курти мана паллă пачĕ те хуллен-хуллен малалла утма пуçларĕ. Эпĕ унăн уттине тĕсесе тăратăп. Егерь пек утка-лама пĕлни мана та кирлĕ. Акă вăл чарăнса тăчĕ, пĕр-икĕ утăм турĕ те кăшт кăна чупса илчĕ, каллех чарăнчĕ. Курти хăйĕн утăмне карăк сассипе çыхăнтарса пырать. Кайăк тăхтав тусанах вăл та тăхтав тăвать. Карăк çĕнĕрен авăтма тытăнсан арçын кăштах чупса илет те хытса тăрать. Çĕклене урине те çĕре пусма хăрать. Карăк сасă парсанах тӳрленсе тăрать. Татах утать. Татах чупать.

Самаях уçă. Ирхи сулхăн тумтир айне хĕсĕнсе кĕме тăрăшать. Ӳт-пĕве çӳçентерет. Те çăмăлтарах тумланнă пирки мана сивĕ пусмăрлать. Кăштах та пулин хускалса юн вылятас килет, çапах та тӳсетĕп.

Мана авалхи кайăксен вăрттăн пурнăçне пĕлес килни тӳсĕмлĕх парать, шăнасран та хăтарать. Вăрман автанĕ ахаль автан мар, туйăмлăскер. Вырăссем карăка «глухарь» теççĕ. Ку ĕнтĕ хăлхасăр тенине пĕлтерет. Анчах та кайăк хăлхасăр мар, унăн хăлхи питĕ лайăх илтет. Карăкăн куçĕ те витĕр куç, çивĕч. Хускалакан япалана питĕ лайăх курать. Çавăнпа та карăк патне çывхарнă чухне питĕ асăрханулла, тимлĕ пулас пулать. Унсăрăн авалхи кайăка хăйне те кураймастăн, унăн сассине те илтейместĕн.

Курти урăхран малалла куçса пыма пăрахнине курса эпĕ те ун патне çывхарас терĕм. Ун çине пăхса малалла шăватăп. Пĕлетĕп: кунтан ытла çывхарма юрамасть. Куçпа курмалăх çывхартăн пулсан вилнĕ пек пул, ан хускал. Мăшăр куçна малалла ыват та ыванса çитиччен сăна.

Туй тума хатĕрленекен кайăкăн, пиртен инçетре пулин те, кĕлетки аванах курăнать. Ăна килти автанпа танлаш-тарма май килмест: унăн авăк хӳри те, каçăр киккирикĕ те çук. Ун вырăнне — юн пек хĕрлĕ куç тĕпекĕ, авăк хӳре вырăнне — лап вылтакан лапатка. Автан сухалĕ вырăнне

те усăнса тăракан тĕк вĕçĕсем кăна. Вăйпитти кайăк тул çутăлса çитеймен пирки тĕм хура тĕслĕн курăнса тăрать, пĕвĕ çинчи ула-чăла йĕрсем те палăрсах каймаççĕ. Мăнаçлă автан шурă çитти пек юр лаптăкĕ çинче тапăртатса тăрать. Вăл, кăркка пек пысăкскер, сулмаклă икĕ çунаттине икĕ еннелле сарса уснă та мăйне малалла кăнтарса, урисемпе вĕттĕн-вĕттĕн пускаласа, пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçкаласа, хăйĕн авалтан килекен йăлине пăхăнса, ĕмĕрхи ĕçне пурнăçлать: туйăн туйăмлă кĕввине ĕнĕрлет, туй такмакне каласа пăхать, тапăртатса ташласа илет, — пурне те пĕр вăхăтрах, пĕр харăсах тăвать. Авалхи автукăн сасси аванах илтĕнет, сăмахĕсене ăнланма май çук: ти-кей, ти-кей, скр-р-р, скр-р-р!..

«Тикей, тикей — суккăрскер» тенĕ пекех туйăнать мана.

Çамрăк автан туй юррин пĕр çаврăмне пĕтерет те пĕр самантлăха чарăнса тăрать, пуçне хăяккăн тытса тавралăха сăнаса çаврăнать. Çывăхра нимле улшăну та, нимле хăрушлăх та çуккине курать пулсан — туслăхпа юрату юррин тепĕр çаврăмне юрлама тытăнать: ти-кей, ти-кей, скр-р-р! скр-р-р!..

Кун çути çуталса килнĕ вăхăтра карăк пушшех те илемлĕн курăнать. Авăтма та вăл вăхăтра хăй ăçтине манса кайсах авăтать тейĕн: скр-р-р, скр-р-р, скр-р-р!..

Майсăр вăхăтра хускалса илтĕм, ман ура айĕнчи турат шăтăрт! туса хуçăлчĕ. Ку вара сигнал ракети персе янă пекех пулчĕ. Вăрман автанĕ çавăнтах пăр-р! çĕкленчĕ те пирĕн куçран çухалчĕ. Тепĕр хут шыраса тупасси çинчен ан та шухăшла. Ютсене юратмаççĕ вăрманта. Такам пуррине туйсанах куç умĕнчен çухалма тăрăшаççĕ.

Эпир Куртипе каялла утрăмăр. Каллех вăрман автанĕ çинчен калаçса пытăмăр. Вăл каласа кăтартаканни, эпĕ итлесе пыраканни.

— Каласа пар-ха карăк çинчен?

— Юрĕ, итле эппин. Ку ĕç нумай çул каялла пулса иртрĕ.

Мана хулара пурӑнакан пӗлӗш карӑк тытса пама каланӑччӗ. Килӗшес мар тенӗ ҫӗртенех килӗшрӗм, хула ҫыннине кӑмӑлсӑр хӑварас килмерӗ. Ун чухне те, паянхи пекех, ҫур ҫӗр иртсенех ҫула тухрӑм. Ҫитес ҫӗре ҫӑмӑлраххӑн ҫитес тесе йӗлтӗр сыртӑм. Йӗлтӗр айӗнчи юр ҫиелти хуппи пӑрланнӑран тимӗр листи пек янраса сасӑ парать. Палӑртнӑ вырӑна ҫитеспе йӗлтӗрсене хывса хутӑм та ҫуран утрӑм: асӑрханса кӑна, васкамасӑр пурнӑҫлатӑп. Карӑк сасси илтӗнсен кӗске самантпа усӑ курса малалла шӑвататӑп. Мӗнле асӑрханса куҫкаласан та пӑрланнӑ юр ҫӗмӗрӗлнӗ сасӑ карӑк патне хӑрушлӑх хыпарне илсе ҫитеретех-мӗн. Эпӗ пӑшал пемелӗх ҫывхарататӑп кӑна — вӑрман автанӗ малалла куҫать. Эпӗ те малалла куҫатӑп. Карӑк та пӗр вырӑнта чарӑнса тӑмасть, шавах малалла куҫса-куҫса пырать. Пирӗн хушӑ пӗрре те чакмасть, пӗр инҫетлӗхре тытӑнса тӑрать. Ҫапла аппаланса ывӑнсах ҫитрӗм, халтан кайрӑм. Хам пурпӗрех карӑк еннелле ӑнтӑлатӑп. Юлашкинчен кайӑк та айванла выляса йӑлӑхрӗ пулас, ман ҫине пуҫне тайса пӑхрӗ те ҫунат ҫине ҫӗкленсе куҫран ҫухалчӗ. Урӑхран ӑна тытас кӑмӑлпа пӑшал йӑтса та тухни пулмарӗ.

— Сунарҫӑсем мӗнлерех тытаҫҫӗ карӑка?

— Сунарҫӑсен ӗҫӗ урӑхла. Вӗсем кайӑк тытма малтанах хатӗрленеҫҫӗ. Карӑк пырса туй юрри юрлас вырӑна сунара тухма вӑхӑт ҫитиччӗнех хӳшӗ туса хураҫҫӗ. Вӑрман автанӗ вӑл пуррине хӑнӑхса ҫитет. Сунарҫӑ каҫранах ҫав хӳшше кӗрсе ларать те кайӑк туйӗ пуҫланасса кӗтме тытӑнать. Карӑк мушка тӗлне пырса тухсанах персе ярать.

— Хула ҫыннин заказне пурнӑҫлаймарӑн эппин?

— Ма пурнӑҫламан пултӑр, пурнӑҫларӑм.

— Мӗнле майпа?

— Пӗр-ик эрне иртсен вӑрмана тухрӑм. Ӑнсӑртран ҫунатне амантнӑ карӑка тӗл пултӑм. Пурпӗрех тискер кайӑк апачӗ пулать тесе персе ӳкертӗм. Ҫавна хула ҫынни патне леҫсе патӑм. Савӑнсах кайрӗ. Кашни курмассерен тав тӑвать.

— Хӑвна валли тытмастӑн-им?

— Хамшăн хапсăнса çут çанталăка сăтăр тăвас килмест ман, тĕкĕнсех каймастăп тĕклĕ туссене.

Çапла куртăм эпĕ вăрман автанне. Куртăм та — çырлахрăм. Курти пекех хĕрхенетĕп кĕрнеклĕ кайăка, ун çине алă çĕклессĕм çук. Çак авалхи юрăç çине пĕрре кăна пăхса илни те мĕне тăрать. Карăксем çут çанталăк сăтăрçисен айăпне пула пуçĕпех çухалас пулсан вăрман çыннисем те вĕсене тĕлĕкре те курас çук.

Куçпа курмалăх та пулин упрасчĕ карăксене. Упрасахчĕ!

## ĂВĂСКА

Анкарти хыçĕнчен инçех те мар — ĕшне.

Вăхăт пулсан ирхине те каçхине те ĕшнере уçăлса çӳретĕп. Кунта манăн палланă йывăçсем сахал мар. Çамрăк ăвăс та пур. Ăна эпĕ, пепке вырăнне хурса, Ăвăска тетĕп. Унпа çамрăк пĕлĕшпе калаçнă пек калаçатăп.

Ăвăска малтанхи çулсенче питĕ пĕчĕкчĕ. Вăл ман умра яланах чĕтресе ларатчĕ. Чĕтренĕ май шĕпĕл-шĕпĕл тăватчĕç çулçисем.

— Ăвăска, мĕншĕн чĕтрен?

— Сивĕрен.

Пĕчĕк йывăçа сивĕрех те пулĕ çав, теттĕм ăшăмра.

Çуркуннехи çутă кун пырса тухрăм Ăвăска патне. Вăл каллех чĕтрет.

— Ăвăска, ма чĕтрен?

— Сивĕрен.

Çуллахи вĕри кунсемпе шăрăх кунсем те çитрĕç. Ăвăскапа тĕл пулатпăр. Вăл каллех чĕтрет.

— Ăвăска, ма чĕтрен?

— Сивĕрен.

Кĕрхи кичем кунсем пуçланчĕç. Каллех эпĕ Ăвăска патне пырса тухатăп. Вăл — çаплах чĕтрет.

— Ăвăска, ма чĕтрен?

— Сивĕрен.

Хĕллехи сивĕ кунсем те кĕттерсе тăмарĕç — килсе çитрĕç. Эпĕ каллех çамрăк Ăвăс çумĕнче. Ман пĕлĕш çаплах чĕтрет.

— Ăвăска, ма чĕтрен?

— Сивĕрен.

— Çук, сивĕрен кăна мар пулĕ. Ăшă кунсем те, шăрăххисем те пулса иртрĕç — эсĕ çаплах чĕтретĕн. Мĕнре сăлтавĕ?

— Хăнăхнăран пулĕ.

— Çук, хăнăхнăран кăна та мар пулĕ-ха. Тен, чĕтресе ăшăнатăн эсĕ?

— Чун ăшши çукран пулĕ. Чун ăшшисĕр çитĕнекен чунсем сахал-им тĕнчере? Пурин валли те чун ăшши ăçтан çитерĕн. Камăн та пулин унсăрах пурăнса ирттерес пулать. Çут тĕнчере сивĕ чунлисем те сахал мар, вĕсен хушшинче пурăнасси пушшех те йывăр.

Хĕл каçмалăх вутă кӳрсе килнĕ. Кăçал ăвăс вутти лекрĕ. Ăвăс вутти кăраççынсăр çунас çук, теççĕ. Çапла, ăвăс вуттине чĕртсе яма йывăр, хĕрсе кайсан — çунать вара. «Хам ăшăнса кураймарăм пулин те, кама та пулин ăшăтса хăварам» тенĕ пек пĕр хушă çунать те ĕмĕрне вĕçлет чĕтрекен йывăç.

## ĂСЛĂ АЧА

Ĕнер те мар, паян та мар — пурăннă пулнă пĕр çамрăк ача. Вăл пур енчен те пултаруллă пулнă. Çамрăкскерех тавçăрулăхĕпе пурне те тĕлĕнтернĕ.

Пĕррехинче çак ача пĕр пĕчченех сĕм вăрмана çырла татма каять. Каялла таврăннă чухне пит çуса уçăлас тесе кӳлĕ хĕррине çитсе чарăнать. Çав вăхăтра ун патне Кашкăр пырса тухать.

— Айванкка, çиетĕп сана! — тет кавсăк чун.

— Ара, — тет ача, — эс мана çиессине эп тахçанах чухлатăп, çавăнпа та çак кӳлĕ хĕррине çăвăнса тасалма антăм та ĕнтĕ.

— Пĕлен пулсан пит аван! — савăнсах каять Кашкăр.

— Аванни те, аван марри те пур çав, — тет ăслă ача.

— Мĕн чăрмавĕ пур тата? — каçăхланса ыйтать Кашкăр.

— Эпĕ, куратăн пуль, питĕ типĕ те ырхан — кӳлле кĕрсе кӳпчесе выртмалла пулать пуль манăн.

— Ун пек те аван — кĕрсе вырт шыва!

Ача куляннă пек пулса пуçне усать.

— Мĕн пирки пуçна усрăн тата? — кăмăлсăрланать Кашкăр.

— Шыв чӳхенет — чун çӳçенет, эсĕ тата пăхса тăратăн. Курмиш пулса куçна хупсамччĕ пĕр самантлăха, — тилмĕрсе калать ăслă ача.

Кавсăк кашкăр пĕр самантлăха куçне хупать.

Кӳлĕ хĕрринчех туратлă йывăç ӳснĕ. Кашкăр куçне хупса тăнă хушăра ăслă ача çав йывăç çине йăпăр-япăр хăпарса ларать. Çӳлтен:

— Кашкăр тус, куçна уçма пултаратăн, — тесе сас парать.

Кавсăк кашкăр куçне уçать те кӳлĕ тĕпнелле пăхать. Ак тамаша! Апатлăх кӳлепе кӳлĕ тĕпĕнче пуçхĕрлĕ лара парать.

— Ма пуçхĕрлĕ ларатăн? — тĕлĕнсе ыйтать кавсăк кашкăр.

— Эй, Кашкăр тус, — тет ача аякри сасăпа, — кунта йĕрки çавăн пек: кӳлĕ тĕпне пуçхĕрлĕ лартаççĕ те тире сӳсе вĕри шывпа шӳтереççĕ.

Çакна илтет те кавсăк кашкăр вĕтлĕхелле тара парать. Ăслă ача халь те пулин тулли пурнăçпа ырлăх курса пурăнать.

## ВĂРМАН СЫХЛАВÇИСЕМ

Кĕрхи тĕтреллĕ кун. Ăçта пăхатăн — унта кичемлĕх палли. Уй-хир йăлтах çаралнă. Çуллахи хаваслă кайăксем хĕл сиввинчен хăтăлма ăшă енне ăсаннă. Çунатлă тусĕсем çукран сĕм вăрман та савăк мар, хăйне евĕр тунсăхлать:

— Кам мана халь савăнтарĕ? Кам халь упрĕ манăн сывлăха?..

— Ан кулян, сĕм вăрман! Тусусем пурте вĕссе кайман! Эпир те санăн сыхлавçусем!

Кам сасси вара ку? Мăн кăсăя мар-и? Çавă çав! Кам пултăр тата! Ав вăл, лара-тăра пĕлменскер, турат çинчен турат çине вĕçе-вĕçе ларать.

— Пинь, пинь, пинь! Чичи-ви, чичи-ви! — янăрать Мăн кăсăя йыхравĕ.

Ун йыхравне илтсе тăванĕсем вĕссе пыраççĕ:

— Ма чилетен, ёмпичче?

— Эртел пухатăп.

— Мĕн тума?

— Вăрман сыхлама.

— Ил пире те.

— Кăмăлăр пулсен хапăл тусах илетĕп. Сирĕн ĕç — вак туратсене тĕрĕслесси.

Йыш хушăнчĕ. Ушкăнпа хаваслă ĕçлеме. Йывăç çинчен йывăç çине вĕçсе çӳреççĕ, тĕрлĕ хурт-кăпшанкăна шĕкĕлчеççĕ. Кашни кайăкăн хăйĕн каçалăкĕ: Мăн кăсăя мăн туратсене тĕрĕслет, вак кăсăя — вак туратсене.

— Пинь, пинь, пинь! Чичи-ви, чичи-ви! — каллех янăрать Мăн кăсăя йыхравĕ.

Ун йыхравне илтсе Ула такка вĕссе пырать:

— Ма чивлетен, Кăсăя?

— Эртел пухатăп.

— Мĕн тума?

— Вăрман сыхлама.

— Ил мана та.

— Кăмăлу пулсан хапăл тусах илетĕп. Сан ĕçӳ — йывăç вуллисене тĕрĕслесси пулĕ.

Татах йыш хушăнчĕ. Пĕрле аванрах ĕçлеме. Йывăç çинчен йывăç çине вĕçеççĕ, тĕрлĕ хурт-кăпшанкăна шĕкĕлчеççĕ. Кашни кайăкăн хăйĕн каçалăкĕ: Мăн кăсăя мăн туратсене тĕрĕслет, вак кăсăясем — ваккисене, Ула такка йывăç вуллисене тĕрĕслет.

— Пинь, пинь, пинь! Чичи-ви, чичи-ви! — каллех янăрать Мăн кăсăя йыхравĕ.

Ун йыхравне илтсе Шăвăнчи вĕçсе пырать:

— Ма чивлетен, Кăсăя?

— Эртел пухатăп.

— Мĕн тума?

— Вăрман сыхлама.

— Ил мана та.

— Кăмăлу пулсан, хапăл тусах илетĕп. Сан ĕçу — йывăç кăкĕсене тĕрĕслесси пулĕ.

Татах йыш хушăнчĕ. Йывăç çинчен йывăç çине вĕçеççĕ, тĕрлĕ хурт-кăпшанкăна шĕкĕлчеççĕ. Кашни кайăкăн хăйĕн каçалăкĕ: Мăн кăсăя — мăн туратсене тĕрĕслет, вак кăсăясем — ваккисене, Ула такка йывăç вуллисене тĕрĕслет, Шăвăнчи — йывăç кăкĕсене.

— Пинь, пинь, пинь! Чичи-ви, чичи-ви! — каллех янăрать Мăн кăсăя йыхравĕ.

Ун йыхравне илтсе Кăрăлькка вĕçсе пырать:

— Ма чивлетĕн, Кăсăя?

— Эртел пухатăп.

— Мĕн тума?

— Вăрман сыхлама.

— Ил мана та.

— Кăмăлу пулсан хапăл тусах илетĕп. Сан ĕçӳ — тăкăннă хурт-кăпшанкăна пухасси пулĕ.

Татах йыш хушăнчĕ. Йышпа хаваслăрах ĕçлеме. Йывăç çинчен йывăç çине вĕçеççĕ, тĕрлĕрен хурт-кăпшанкăна шĕкĕлчеççĕ. Кашни кайăкăн хăйĕн каçалăкĕ: Мăн кăсăя — мăн туратсене тĕрĕслет, вак кăсăясем — ваккисене, Ула такка йывăç вуллисене, Шăвăнчи — йывăç кăкĕсене тĕрĕслет, Кăрăлькка тăкăннă хурт-кăпшанкăна пуçтарать.

Пурте хĕрсе ĕçлеççĕ. Пурин валли те ĕç çитет. Кăсăя эртелĕ — питĕ ĕçчен йыш. Çак ĕçчен йыш хĕл каçипе вырăнтан вырăна куçса çӳрет, хăйĕн çулĕ çинчи кашни йывăça тасатать. Тĕрлĕрен хурт- кăпшанкăна пытанса юлма питĕ хĕн.

Çиттĕр кăна çуркунне, çиттĕр кăна ăшă кун. Ыйхăран вăранĕ çут тĕнче, çĕнĕрен ешерĕ сĕм вăрман! Кассăн-кассăн çил вĕрсен, кăсăя эртелне тав туса хаваслăн кашлĕ сĕм вăрман!

## ГЕРКУШ

*Калав*

Акă пахча. Ахальли мар — сад пахчи.

Алăка уçса кĕрсенех çамрăк улмуççи патне çитсе тăратăн. Геркуш çуралсан ун ячĕпе лартнă.

Унтанпа пилĕк çул çитрĕ ĕнтĕ. Ашшĕ иртнĕ çул каланăччĕ:

— Улмуççи вăл хуçи пăхас пулсан çимĕçне иртерех çитĕнтерет.

Çавăнпа та Геркуш ашшĕ çумĕнче айкашрĕ — улмуççие мĕнле пăхмаллине вĕренчĕ. Кăçал вара пахчара хăй тĕллĕнех тĕрмешме сĕмленет.

Геркуш ирех пахчара тантăшĕ умĕнче тăрать. Чăн малтанах вăл çамрăк тусне çуркунне çитнĕ ятпа саламларĕ. Лешĕ ăна ăнланчĕ — хуллен кăна пуç тайрĕ. Ун хыççăн Геркуш улмуççи айĕнчи çĕре кăпкалатрĕ, сапкăçпа шыв та сапрĕ.

Улмуççи чиперех çитĕнет. Çу уйăхĕн вĕçнелле папка кăларса çеçке çурчĕ. Геркушшăн ку çуралнă кун тĕлне кӳнĕ пархатарлă парне пекех пулчĕ. Çамрăк чун питĕ савăнчĕ.

Улмуççи пĕрремĕш хут çеçке çурчĕ. Апла пулсан ашшĕ калани тӳрре килет: çамрăк улмуççи кăçалах çимĕç çитĕнтересшĕн.

Хавасланчĕ, питĕ хĕпĕртерĕ ĕçпе туслă Геркуш — тăрăшни харама каймасть иккен.

## ДЖЕК ӐСТАЛАНӐ ҪУРТ

Акӑ ҫурт,
Ӑна ӑсталанӑ Джек.

Акӑ тулӑ,
Ӑна хывнӑ таса ырҫана,
Ҫав ырҫа питӗрмен чӑланта,
Ҫав чӑлан Джек тунӑ ҫуртра.

Акӑ ҫерҫи,
Вӑл текех тустарать ҫав тулла,
Ҫав тулли упранать ырҫара,
Ҫав ырҫи питӗрмен чӑланта,
Ҫав чӑлан Джек тунӑ ҫуртра.

Акӑ кушак,
Вӑл пӗрмай ҫулӑхать ҫерҫие,
Ҫав ҫерҫи тустарать сар тулла,
Ҫав тулли упранать ырҫара,
Ҫав ырҫи питӗрмен чӑланта,
Ҫав чӑлан Джек тунӑ ҫуртра.

Акӑ йытӑ,
Вӑл вӗрсе хӑратать кушака,
Ҫав кушак ҫулӑхать ҫерҫие,
Ҫав ҫерҫи тустарать сар тулла,
Ҫав тулли упранать ырҫара,
Ҫав ырҫи питӗрмен чӑланта,
Ҫав чӑлан Джек тунӑ ҫуртра.

Акӑ ӗне,
Вӑл часах пӑвӑртать ват йытта,
Ҫав йытти хӑратать кушака,
Ҫав кушак ҫулӑхать ҫерҫие,
Ҫав ҫерҫи тустарать сар тулла,
Ҫав тулли упранать ырҫара,

Çав ырçи питěрмен чăланта,
Çав чăлан Джек тунă çуртра.

Акă Мариç,
Вăл сăвать ирсерен ěнине,
Çав ěне пăвăртать йыттине,
Çав йытти хăратать кушака,
Çав кушак çулăхать çерçие,
Çав çерçи тустарать сар тулла,
Çав тулли упранать ырçара,
Çав ырçи питěрмен чăланта,
Çав чăлан Джек тунă çуртра.

Ак кěтÿç,
Вăл куллен вăрçтарать Мариçе,
Çав Мариç патаклать ěнине,
Çав ěне пăвăртать йыттине,
Çав йытти хăратать кушака,
Çав кушак çулăхать çерçие,
Çав çерçи тустарать сар тулла,
Çав тулли упранать ырçара,
Çав ырçи питěрмен чăланта,
Çав чăлан Джек тунă çуртра.

Акă автан,
Вăл ирех вăратать кěтÿçе,
Çав кěтуç вăрçтарать Мариçе,
Çав Мариç патаклать ěнине,
Çав ěни пусахлать йыттине,
Çав йытти хăратать кушака,
Çав кушак çулăхать çерçие,
Çав çерçи тустарать сар тулла,
Çав тулли упранать ырçара,
Çав ырçи питěрмен чăланта,
Çав чăлан Джек тунă çуртра.

Акăлчанларан вырăсла *С. Маршак*,
вырăсларан чăвашла *Н. Ыдарай* куçарнă

## ИРХИНЕ

Алик, Радик тата Шурик çул çинче тĕл пулаççĕ. Тĕл пулаççĕ те калаçса утаççĕ. Сăмахĕ вăхăт çине куçать.

Алик калать:

— Паян эпĕ автанпа пĕрлех вăраннă.

Радик калать:

— Паян эпĕ радиопа пĕрлех вăраннă.

Шурик калать:

— Паян эпĕ шуçăмлах вăраннă.

Ачасем, ман сиртен ыйтас килет:

— Кам малтан вăраннă-ши?

(Автан чи малтан вăранать, унтан малтан вăранма май çук, мĕншĕн тесен унтан малтан вăранни паян мар, ĕнер пулать).

## КАЙĂК КĂШĂЛĔ

*Юмах*

Авалах та мар, паянах та мар, Ăмăрт кайăк ăнсăртран ăс пĕрчи тупса хыпать. Ăс пĕрчи хыпать те ăсланать, вара çапла шухăшлать:

— Кам эпĕ?

— Патша тейĕпĕр.

— Мĕнле патша?

— Кайăк патши.

— Патшалăхăмри кайăксем çинчен пĕлетĕп-и эпĕ?

— Пĕлкелетĕп кăштах.

— Кайăк ячĕсене пĕлетĕп-и эпĕ?

— Питех мар, питех мар, питех мар...

— Апла мĕскер тумалла?

— Писсăра ĕç хушмалла.

Çавăнтах вăл тарçине писсăр патне ярать.

Вулакансем-итлекенсем, писсăр камне пĕлетĕр-и эсир? Пĕлекенсем те пулĕ, пĕлменнисем те пулĕ — çын аллипе кăвар туртас мар, хамăнах хам пĕлнĕ пек ăнлантарса па-

рас. Писсӑр — авалхи сӑмах, вырӑс чӗлхинчен кӗнӗскер. Вӑл чӑвашла куҫарсан ҫыру ӗҫне туса пыракан тени пулать, хальхи пек каласан — секретарь тенӗскер. Секретарьсем вӗсем тӗрлӗрен пулаҫҫӗ: яваплисем тата явапсӑррисем. Паллах, патша ҫыравҫи пӗр енчен пӑхсан — яваплӑ, тепӗр енчен пӑхсан — пачах явапсӑр. Ҫавӑнпа та ӑна йӗкӗр ят панӑ та — писсӑр тата секретарь. Ӑнланмалла-и? Ӑнланмалла пулсан сӑмаха малалла тӑсам. Ӑна, ҫыру ӗҫне туса пыраканскерне, пӗрре курсах паллатӑр: вӑл пуҫӗ ҫине, писсӑрлӑхне пӗлтерме, ик-виҫӗ хур шӑмми чиксе янӑ. Францире ҫуралнӑ франт пекех тапӑртатса ҫӳрет. Акӑ вӑл, сӑмах ҫинех, хӑй те килсе ҫитрӗ.

Васкасах писсӑр-секретарь килсе кӗрет те патша умне тӑрса пуҫ таять.

— Мӗн ҫӑмӑлпа чӗнмелле пулчӗ-ши?

— Ӗҫӗ хальхинче йывӑрах та мар, ҫӑмӑлах та мар — алфавит мӗнне пӗлетӗн-и эс?

Алфавит тесе сасӑсене пӗлтерекен паллӑсен йышне калаҫҫӗ. Вырӑс чӗлхинче вӗсем — 33, чӑваш чӗлхинче — 37.

— Тӗрӗсех пӗлетӗн. Халь тесен халех пӗтӗм тӗнчери кайӑксен ятне алфавит йӗркипе ҫырса тухас пулать.

— Ку ӗҫе куккук кукшаланиччен те туса пӗтерме май ҫук.

— Ҫук тесе ҫухалса кайма юрамасть, майне-меслетне тупас пулать. Ансат ӗҫе кӑткӑслантариччен, кӑткӑс ӗҫе ансатлатас пулать.

— Май ҫуккине мӗнлерех майлаштарас-ха ман?

— Майӗ-шывӗ ҫавӑн пек: алфавитри кашни сас паллипе пӗрер ят ҫырнипе те ҫитет, ятсерен миҫе кайӑк пуррине ыттисем шута илеҫҫӗ.

— Апла та, капла та сирӗн кӑмӑла ҫырлахтарма май ҫук.

— Мӗншӗн?

— Мӗншӗн тесен, сас паллисен хушшинче сасӑсене пӗлтермен паллӑсем те пур, вӗсем иккӗ: хытӑлӑх палли (Ъ) тата ҫемҫелӗх палли (Ь).

— Ман шутпа, вӗсене е кӑларса пӑрахмалла, е палӑртса ҫех хӑвармалла. Ытса пӗлмеллисем пӗтрӗҫ-и?

— Тата тепĕр ыйту пур: кайăк мар кайăксемпе мĕскер тумалла?

— Ун пек кайăксем те пур-и?

— Ун пеккисем те пур çав, хисеплĕ патша. Вĕсем çара çерçисем, кĕскен каласан — çарხансем. Кăрлансем те, вырăсла каласан — крылансем, унтах кĕреççĕ. Вĕсене малтан кайăк тенĕ, каярах кайăк йышĕнчен кăларса пенĕ.

— Камсем çапла хăтланнă?

— Паллах наука çыннисем.

— Ăнлантăм, пĕтĕмпех ăнлантăм. Кайăксем патне таврăнар-ха.

— Тата тепĕр ыйту пур...

— Васкарах каласа хур!

— Кайăксен алфавитне мĕнле ят парăпăр?

«Кайăк кăшăлĕ» тейĕпĕр.

— Кайăк-кĕшĕк списокне хăш вăхăталла ĕлкĕртмелле?

— А-па пуçламалла та Я-па пĕтермелле, пĕтерсенех мана пĕлтермелле! Тепĕр хут тĕплесе калатăп:

Сана хушнă ĕç,
Ман алăра хĕç:
Вăхăтра тăван — пуçлăх пулан,
Вăхăтра тумасан — пуççăр юлан!

Ачасем, мĕн тăватпăр, писсăра пулăшатпăр-и? Эпĕ те çаплах шутлатăп: писсăра пулăшмаллах. Акă алфавит йĕркипе хатĕрленĕ ятарлă ятсем.

Автан — вăхăт хуралçи.
Ăсан — сĕм вăрман кайăкĕ.
Баклан — çунатлă пулăç.
Вăркка — çерçи йышĕнчен.
Гагар — пăрлă тинĕс кайăкĕ.
Дронт — вилсе пĕтнĕ чун.
Ешĕлчен — симĕс вĕçевçĕ.
Ĕшпĕл — ĕçлĕх юрăçи.
Ерниче — вăрман уткăшĕ.
Жако — калаçакан попугай.

Звонар — тропик кайăкĕ.
Ихĕрчен — кулик таврашĕ.
Куккук — çул шутлавçи.
Лирхӳре — Африка кайăкĕ.
Марабу — аист йышĕнчен.
Нанду — вĕçмен вĕçен кайăк.
Огарь — кăвакалсен пĕр тĕсĕ.
Павлин — питĕ капăр кайăк.
Рункăш — тайга вĕçевçи.
Стерх — шурă тăрна.
Çăхан — хурлăх хыпарçи.
Тăмана — каçхи сунарçă.
Ула такка — вăрман санитарĕ.
Ӳлепке — шыв çерçийĕ.
Фрегат — океан кайăкĕ.
Хурчка — çунатлă хурах.
Цесарка — индеецсен чăххи.
Чарлан — шапа хуралçи.
Шăпчăк — юрату юрăçи.
Щур — çурçĕр попугайĕ.
Ъ — ятсем çук.
Ыйхан — пĕчĕк тăмана.
Ь — ятсем çук.
Эму — Австрали страусĕ.
Юхăмçă — юхан шыв кайăкĕ.
Ясмачи — ясмăк кайăкĕ.
Çакăнпа сăмаха вĕçлетпĕр,
Урăх ятсем хушасса кĕтетпĕр.

## КĂМАРИ

*Калав*

Аннесен ялĕнче ăна вăрăм туна тесе те, кăмари тесе те калаççĕ — пĕр юн ĕçенĕн икĕ тĕрлĕ ят. Аннерен вĕреннĕскер, эпĕ те хальхинче кăмари сăмахпа усă куртăм.

— Ми-ми-ми! — тесе вӗҫет пӗри.
— Кам эсӗ? — тетӗп.
— Кӑмари эпӗ, — тет хайхискер.
— Кам кирлӗ? — ыйтатӑп унран.
— Микуль кирлӗ пире! — тет сасӑ хуҫи.
— Микуль эпӗ пулатӑп, мӗн кирлӗ?
— Пире мӗн кирлине хӑвах пӗлетӗн.
— Сире мӗн кирлине питӗ лайӑх пӗлетӗп, анчах та миҫен вара эсир?
— Хальлӗхе пӗччен кӑна.
— Хӑҫан йышлӑн е нумайӑн пулатӑр?
— Шутсӑр нумай пӗлес килет пулсан калама пултаратӑп. Малтанлӑха эпӗ пӗр-пӗччен, анчах та мана вӗлерес пулсан шырама иккӗн килеҫҫӗ. Иккӗрен иккӗшне те вӗлерес пулсан — вӗсене шырама тӑваттӑн килеҫҫӗ. Тӑваттӑран тӑваттӑшне те вӗлерес пулсан — вӗсене шырама саккӑрӑн килеҫҫӗ... Малалла та ҫапла, кашни вилешӗн шут хисепӗ икшер хут ӳссе пырать. Ӑнланмалла-и?
— Ытла та хӑрушӑ юмах ку! Эпӗ пӗр кӑмари вӗлернӗшӗн пирӗн хушӑра юнлӑ вӑрҫӑ пуҫланса каять. Ҫапла-и?
— Юнлӑ вӑрҫӑ тени тӗрӗсех те пуль...
— Яланах ҫапла-и?
— Яланах ҫапла теме ҫук, мӗншӗн тесен вӑрӑм туна вӑхӑчӗ иртсен урӑхла пулӑм пуҫланать: пӗр кӑмари вӗлерсен — икӗ кӑмари пӗтет, икӗ кӑмари вӗлерсен — тӑватӑ кӑмари вилет, тӑватӑ кӑмари вӗлерсен — сакӑр кӑмари пӗтет... Малалла та ҫапла шут хисепӗ икӗ хут ӳссе пырать. Ӑнланмалла-и?
— Ав мӗнлерех вӗсем, вӑрӑм тунасем!

## КАРЧӐКПА СТАРИК

Карчӑкпа старик пурӑннӑ. Вӗсен пӗр илемлӗ ирхине ҫимелли пӗтсе ҫитет. Карчӑк калать:
— Старик, пирӗн кӗлетре ҫимелли ним те ҫук.

Старик калать:

— Çук-çук тенĕ çĕрте те мĕн те пулин пулаканччĕ, тухса шыра-ха.

Карчăк тепĕр хут кĕлетри пӳлмесенче шырать те пĕр пĕрчĕ кĕрпе тупать. Вара çав кĕрперен пăтă пĕçерет. Пăтти пиçсе çитсен тирĕк çине антарать те сивĕнме лартать. Çав вăхăтра пĕр шăна вĕçсе кĕрет те пăтă çине пырса ларать. Старик тилĕрсех каять:

— Ха, — тет вăл, — ха! Пулать те иккен çут тĕнчере сĕмсĕр шăна: юлашки пĕрчĕрен пĕçернĕ пăтă çине те пулин пырса ларать! Мăшкăл мар-и, мăшкăл!

Вара вăл муштукне авринчен тытать те шăна хыççăн хăвалама тытăнать. Шăна вăл çавăн пек: алăкран хăвалатăн — чӳречерен вĕçсе кĕрет, чӳречерен хăвалатăн — алăкран вирхĕнет. Ак хайхи старикпе шăна тупăшу пуçласа яраççĕ. Пĕри хăвалать, тепри тарать. Сĕмсĕр шăна çав ĕнтĕ: пĕр çĕртен хăвалатăн — тепĕр çĕре куçса ларать, тепĕр çĕртен хăвалатăн — малтанхи çĕре куçса ларать. Юлашкинчен çак шăна, тилĕрнĕ старике тата ытларах тарăхтарас тенĕ пекех, карчăк çамки çине куçса ларать. Старик чупса пырать те пăхăр муштук купташкипе карчăк çамки çинче ларакан шăнана шак! тутарать. Шăна вĕçсе каять — карчăк вилсе выртать. Пĕччен тăрса юлнă старик те куляннипе тӳнсе каять, урăх тăрса кураймасть, леш тĕнчене ăсанать.

Ир пулать те каç пулать, икĕ ватă çук пулать.

Пытарсассăн ик ватта вĕçне тухать юмах та.

## КАÇМА

*Калав*

Ансăр кăна çырма урлă каçма хунă. Ун урлă такам та каçса çӳренĕ. Епле утса çӳремĕн-ха çав каçма икĕ кас хушшинчи пĕртен-пĕр çыхăну пулсан.

Пĕррехинче Куçма та çав каçма урлă каçма тăрать, анчах та кăштах кăна шыва ӳкеймест — каçма хăми хăпăнса кайнă иккен. Çак инкек çинчен Куçма килтисене те каласа памасть.

Тепрехинче каçă урлă Микуç каçать. Вăл та кăшт çеç шыва ӳкеймест. Анчах та вăл Куçма пек чĕмсĕрленсе ирттермест ку ĕçе. Каçма хăми хăпăнни çинчен çав кунах ял халăхне каласа парать.

— Каçă урлă ан çӳрĕр, — тет вăл, — каçă хăми хăпăннă пирки шыва ӳкме пултаратăр.

Кĕçех Тимукăн та каçă урлă каçма тӳр килет. Вăл та кăшт çеç шыва ӳкеймест. Тимук Куçма пек чĕмсĕр те, Микуç пек хыпарçă та пулмасть, мăлатукпа пăта илет те каçма хăмине малтанхи пекех хăйĕн тĕп вырăнне çирĕплетсе хăварать.

Ачасем, камăн ĕçĕ мухтавлăрах?

## КАШНИН ХĂЙĔН ЮРРИ

*Юмах*

Авалхи кунсенче, асăм çитми çулсенче, пулнă пулать Пурнăç хуçи. Аслă çĕр çинче, çĕрпе пĕлĕт хушшинче, Пурнăç хуçи пĕр-пĕчченех пурăннă, пит кичеммĕн курăннă.

Пурнăç хуçин куçĕ пур. Куçне уçса пăхать те мĕн курать? Нимех те кураймасть. Тӳпе çинче çутлăхсем пур: çăлтăрсем, уйăх, хĕвел тата ытти те. Çĕр çинче нимех те çук. Пушă вырăн кăна сарăлса выртать.

Пурнăç хуçин пуçĕ пур. Пуçĕ пур та асĕ çук. Пурнăç хуçи вара пушă пуç хăвалĕ ăшне ăс пĕрчи хурать те, шухăша каять:

— Пĕччен пурнăç — кичем пурнăç. Кичем пурăнни пурнăç та мар. Пĕччен пурнăç çителĕксĕр. Çителĕксĕр пулсан çитермелле, çителĕклĕ тумалла.

Çапла шухăшлать те Пурнăç хуçи çĕр çинче чĕрĕ пурнăç пуçласа ярать. Кайăк-кĕшĕке, выльăх-чĕрлĕхе, ӳсен-тăрана тата хурт-кăпшанкăна пултарать. Юлашкинчен, çак ĕç енĕпе ăсталанса çитсен çут çанталăк патши хĕрлĕ тăмран унаса çынсене тăвать. Вĕсене пурне те этем тесе ят парать.

Пурнăç хуçин хăлхи пур. Хăлхипе итлесе пăхать те ним-

ле сасӑ та илтӗнмест. Пурнӑҫ хуҫи вара ҫӗр ҫинчи чӗрлӗхсене чӗм салатса парать. Пӗрисене лекет, теприсене лекмест. Пурнӑҫ хуҫи ҫак ӗҫе туса пӗтерет те тата тепӗр хут итлесе пӑхать. Каласакан чӗр чунсем те, калаҫманнисем те пур. Чӗмлӗ чӗр чунсем те, чӗмсӗррисем те пур. Юрлакан кайӑксем те, юрламаннисем те пур. Анчах та тӗрлӗ-тӗрлӗ чӗрлӗхсем хушшинче авӑтакан чӗрлӗх пӗрре те ҫук. Аван мар вӗт капла. Пурнӑҫ хуҫи шухӑша каять:

— Пур пек кайӑк пурте пур, авӑтакан кайӑк пӗрре те ҫук. Пӗрре те ҫукки питех те ҫителӗксӗр. Ҫителӗксӗррине ҫитермелле, ҫителӗклӗ тумалла.

Пурнӑҫ хуҫи ҫавӑн пек тӗллев тытать те авӑтакан кайӑк туса хурать, ӑна Автан тесе ят парать.

Автан — авӑтакан кайӑк. Авӑтма пӗлет кӑна мар, питӗ лайӑх авӑтать. Ҫӗр ҫӗмӗрсе авӑтать. Шарлаттарса авӑтать. Анчах та вӑл пӗр тӗслӗх кӑна. Аван мар вӗт капла. Пурнӑҫ хуҫи шухӑша каять:

— Пур пек кайӑк пурте пур, авӑтакан кайӑк пӗрре кӑна. Пӗрре кӑна пулни питех те ҫителӗксӗр. Ҫителӗксӗррине ҫитермелле, ҫителӗклӗ тумалла.

Пурнӑҫ хуҫи ҫавӑн пек тӗллев тытать те авӑтакан тепӗр кайӑк туса хурать, ӑна Карӑш тесе ят парать.

Автан та авӑтать, Карӑш та авӑтать. Автан аванах авӑтать, Карӑш катӑкрах авӑтать. Мӗн тумалла? Пурнӑҫ хуҫи каллех шухӑша каять:

— Автан аванах авӑтать, Карӑш катӑкрах авӑтать. Карӑш авӑтни Автан авӑтнине ҫитеймест. Иккӗшӗ кӑна пулни сахал. Ҫителӗксӗррине ҫитермелле, ҫителӗклӗ тумалла.

Пурнӑҫ хуҫи ҫавӑн пек тӗллев тытать те тата тепӗр авӑтакан кайӑк туса хурать, ӑна Куккук тесе ят парать.

Автан та авӑтать. Карӑш та авӑтать. Куккук вара авӑтма пачах та пӗлмест. Мӗн тумалла? Аван мар капла. Пурнӑҫ хуҫи татах шухӑша каять:

— Автан аванах авӑтать. Карӑш катӑкрах авӑтать. Куккук пачах та авӑтма пӗлмест. Авӑтма пӗлмест пулсан

вĕрентмелле. Вĕрентес тесен вĕрентекенне тупас пулать. Ун пек ăста Автан пур. Апла пулсан — Автан вĕрентекен пулать, Куккук — вĕренекенĕ.

Пурнăç хуçи çавăн пек тĕллев тытать те авăтма пĕлекен Автана вĕрентекен тăвать, авăтма пĕлмен Куккука вĕренме хушать.

Вĕренӳ çулĕ пуçланать. Çамрăк Куккук, шкул ачи пек, кашни кун Автан патне вĕренме çӳрет.

Автан аван кайăк çав. Авăтма кăна мар, вĕрентме те аванах пĕлет иккен. Анчах та çамрăк Куккук вĕренес тесе тăрăшмасть, урок калама хушсан çăварне ирĕксĕр кăна уçкалать.

Автан вĕрентет.

— Авăту, — тет Автан, — çичĕ пайран тăрать: пĕрремĕш пайĕ — пуçласси, пилĕк пайĕ — сыпăксем каласси, çиччĕмĕш пайĕ — вĕçлесси. Мĕн чухлĕ хытăрах кăшкăран, çавăн чухлĕ янравлăрах авăту пулса тухать. Авăтнă чухне çак ĕçĕн çичĕ пайĕ те пĕр пĕтĕм пулмалла, акă çапла:

— Ку-ку-ре-ку-ку-ук!..

Куккук итлесе ларать — нимĕн те чĕнмест.

Автан малалла калать:

— Çăмăллăн авăтас пулсан çăвара ытларах кармалла та ярăнтарса кăшкăрса ямалла. Куккук тусăм, кала-ха ман хыççăн; ку-ку-ре-ку-ку-ук! те.

Куккук итлесе ларать — нимĕн те чĕнмест.

Автан ыйтать:

— Ма нимĕн те чĕнместĕн?

Куккук çаплах нимĕн те чĕнмест.

Автан виççĕмĕш хут ыйтать:

— Ма нимĕн те чĕнместĕн, ма çăварна кармастăн?

Куккук калать:

— Манăн карма çăвар пулас килмест, — тет.

— Çăвар кармасăр авăтма май çук! — тет Автан.

— Авăтма май çук пулсан — авăтмастăп! — тет Куккук.

— Манăн сана авăтма вĕрентмелле — Пурнăç хуçи çапла хушнă! — тет Автан.

— Апла пулсан çăвар кармасăр авăтма вĕрентме тă-рăш! — тет куккук.

Вĕрентекен Автан мĕн тăвать? Ним те тăваймасть. Ирĕксĕрех куштан Куккука çăвар кармасăр авăтма вĕрентес мел çине куçать.

Автан хушать:

— Çăвар кармасăр кала эппин: — Ку-ку-ре-ку-кук!

Куккук хирĕçлет:

— Ун чухлĕ сăмах çăвар кармасăр калаймастăп, — тет.

— Мĕн чухлĕ авăтма пултаратăн çавăн чухлĕ авăт эппин.

— Юлашки сыпăкне çех авăтма пултаратăп.

— Юлашки сыпăкне авăт эппин!

— Кук!

Ку сыпăк хупă çăвартан «хук» тенĕ пек тухать, хăлхана та çаплах илтĕнет.

Автан малалла ăс парать:

— Кук сыпăка икĕ хут авăтса пар!

— Кук-кук!

— Çак сыпăка çине-çине авăтса пар.

— Кук-кук! Кук-кук! Кук-кук!

Автан малалла ăс парать:

— Халь «ре» çине куçăпăр, — тет.

Куккук каллех хирĕçлет:

— Урăх ним те вĕренместĕп, пĕр ĕмĕре ĕмĕрлеме пĕр сыпăк авăтма пĕлни те çитет мана, — тет.

Автан мĕнле тăрăшсан та кутăн Куккука урăх ним чухлĕ те вĕрентеймест.

Кун иртет те çĕр иртет — тĕрĕслев кунĕ çитсе тăрать.

Пурнăç хуçи ыйтать:

— Ну, Автан тус, чăпар Куккук авăтма вĕренсе çитрĕ-и?

Автан калать:

— Авăтун пĕр сыпăкне вĕренкелерĕ те, ăна та пулин çăвар уçмасăр кăна авăткалать.

— Мĕнле апла?

— Çаплах ара: пĕр енчен, Куккук карма çăвар пулас-

шăн мар, тепĕр енчен, пĕр сыпăк авăтни те ĕмĕре пурăнса ирттерме ҫитет тесе шутлать.

Пурнăҫ хуҫи пуҫ ватса шухăшлама тытăнать:

— Куккук — авăтма тунă кайăк. Авăтма пĕлмен пирки вĕрентес терĕмĕр. Вĕренчĕ. Халь куккук чĕмсĕр мар, пĕр сыпăк та пулин авăтма пĕлет. Тата ҫав сыпăка хупă ҫăварпа авăтма пултарать. Ку аван япала. Кун пекки халиччен пулманччĕ-ха. Хуть те мĕн каласан та Куккук юмласа авăтать.

Пĕр хушă чарăнса сывлăшне ҫавăрать те Пурнăҫ хуҫи хăйĕн шухăшне малалла чуптарать.

— Авăтакан кайăксем йышланчĕҫ. Автан та пур, Карăш та пур, Куккук та пур. Автан аванах авăтать, Карăш катăкрах авăтать, Куккук юмласа авăтать. Ҫавра ҫĕр ҫинче пурнăҫ пуҫланă чухне манăн ĕмĕт пысăкрахчĕ, кашни пулăма ҫичшер тĕс тăвас тенĕччĕ, анчах та ун пек тума мехел ҫук иккен. Ҫут тĕнчере кашни пулăм пĕрре кăна пулма пултарать. Темле пĕр пек тăвас тесен те, тепĕр пулăм урăх тĕрлĕ пулать. Кăшт та пулин урăхларах, хăйне майлăрах пулать. Апла пулсан, Автан автанла, Карăш карăшла, Куккук куккукла авăттăр. Ҫут ҫанталăк нихҫан та пĕр пеклĕхе юратмасть.

Ҫакна чухласа илет те Пурнăҫ хуҫи чăпар тумлă Куккука пĕртен-пĕр авăту сыпăкне ҫăвар хупса авăтма ирĕк парать.

Халь те пулин Куккук асра юлнă юрă сыпăкне ҫăвар хупса авăтать:

— Ку-кук!.. Ку-кук!..

## МРАМОР

*Юптару*

Ту хысакĕнче шурă Мрамор катрамĕ йăтăнса выртать.

Ҫак Мрамор катрамĕ хăй ăшĕнче шухăшлать:

«Хамăн хака никамран та лайăх пĕлетĕп, ăна сая ямăстăпах», — тесе сĕмленет.

Хуть те кам пырса тухас пулсан та çак Мрамор катрамĕ хăйĕн хакне кăтартма васкать.

Пĕррехинче çак вырăна пĕчĕк Шăши пырса тухать.

Мрамор катрамĕ хăй çинчен:

— Эп — Мрамор! — тесе пĕлтерет.

— Мĕнех вара Мрамор? — тĕлĕнмесĕрех хуравлать Шăши.

— Пуласах тетĕп пулсан, эпĕ санран хаклăрах Шăши те, урăх чĕр чун кĕлетки те пулма пултаратăп!

— Пулма пултаратăн пулĕ те, хальлĕхе эс чул кăна.

Çапла калать те пĕчĕк Шăши малалла чупса каять.

Тепрехинче çак вырăна пысăк Пăши пырса тухать.

Мрамор катрамĕ хăй çинчен:

— Эпĕ — Мрамор! — тесе пĕлтерет.

— Мĕнех вара Мрамор? — тĕлĕнмесĕрех хуравлать Пăши.

— Пуласах тетĕп пулсан, эпĕ санран хаклăрах Пăши те, ытти чĕр чун кĕлетки те пулма пултаратăп!

— Пулма пултаратăн пулин те, хальлĕхе эс чул кăна.

Çапла калать те Пăши малалла чупса каять.

Тата тепринче çак вырăна хăватлă Ăмăрт кайăк вĕçсе анать. Мрамор катрамĕ хăй çинчен:

— Эп — Мрамор! — тесе пĕлтерет.

— Мĕнех вара Мрамор? — тĕлĕнмесĕрех хуравлать Ăмăрт кайăк.

— Пуласах тетĕп пулсан эпĕ санран хаклăрах Ăмăрт кайăк та, ытти кайăк кĕлетки те пулма пултаратăп!

— Пултаратăн пулĕ те, хальлĕхе эс чул кăна.

Çапла калать те хăватлă Ăмăрт кайăк малалла вĕçсе каять.

Мрамор çаплах йăтăнса выртать.

Кун иртет те çĕр иртет, çул хыçĕнчен çул иртет. Кашни кун çанталăк улшăнса тăрать: çил те вĕрет, çумăр та çăвать, хĕвел те пăхать, юр та ӳккелет. Кунпа çĕр улшăнса пынă май Мрамор катрамĕ те йăшса пырать: çил вĕрнипе çийĕнет, çумăрпала çурăлать, хĕвелпеле хĕртĕнет, юр çунă чух юхăнать.

Мрамор çаплах каппайланма пăрахмасть, çаплах пуласлăхпа пуçтахланса пурăнать.

Кĕркуннепе Мрамор катрамĕ çине сарăхнă Çулçă пырса ÿкет.

Мрамор катрамĕ хăй çинчен:

— Эп — Мрамор! — тесе пĕлтерет.

— Мĕнех вара Мрамор, — тĕлĕнмесĕр хуравлать Çулçă.

— Эсĕ манпа йĕркеллĕрех калаçнă пул! — хăтăрса илет Мрамор катрамĕ.

— Йĕркерен тухмасăрах калаçатăп-иç, — тет Çулçă.

— Пĕлетĕн-и эс, пуласах тетĕп пулсан, эпĕ тем те пулма пултаратăп, такама та тĕлĕнтерме пултаратăп!

— Пулайăн-ши? — иккĕленсе калать Çулçă.

— Ман ĕмĕр вăрăм: хăçан та пулин пурпĕрех мĕн те пулин пулатăпах! — тет Мрамор катрамĕ.

— Çук, — тет сарăхнă Çулçă. — Ĕмĕр никамăн та вăрăм мар. Вăрăм ĕмĕрĕн те вĕçĕ пур. Пулассине вăхăтра пулмасан хăв та сиссе юлаймастăн, вăрăмран та вăрăм ĕмĕрĕн кĕске вĕçне çитсе тăратăн. Çитсе тăратăн та çитмĕл те çичĕ ÿкĕнĕç юррине хурланса юрлама тытăнатăн.

Ун чухне чавса çывăх та — çыртма çук!

## МУЛКАЧ

*Ытарлă юмах*

Пурăннă тет пĕр Мулкач. Унăн мулĕ те, пурлăхĕ те пулман, шиклĕх кăна пулнă. Çав ытлашши япалана Мулкач сутса яма шут тытать. Анчах та кама сутмалла-ха?

Малтанласа Мулкач Арлан патне пырать.

— Арлан тус, кирлĕ мар-и сана шиклĕх?

— Мана кирлĕ мар, Каюрана сут, — тет Арлан.

Мулкач Каюра патне чупса çитет.

— Каюра тус, кирлĕ мар-и сана шиклĕх?

— Мана кирлĕ мар, Пакшана сут, — тет Каюра.

Мулкач Пакша патне чупса çитет.

— Пакша тус, кирлĕ мар-и сана шиклĕх?

— Мана кирлĕ мар, Сăвăра сут, — тет Пакша.

Мулкач Сăвăр патне чупса ҫитет.

— Сăвăр тус, кирлĕ мар-и сана шиклĕх?

— Мана кирлĕ мар, Тыркаса сут, — тет Сăвăр.

Мулкач Тыркас патне чупса ҫитет.

— Тыркас тус, кирлĕ мар-и сана шиклĕх?

— Мана кирлĕ мар, Чĕрĕпе сут, — тет Тыркас.

Мулкач Чĕрĕп патне чупса ҫитет.

— Чĕрĕп тус, кирлĕ мар-и сана шиклĕх?

— Мана кирлĕ мар, Шăшие сут, — тет Чĕрĕп.

Мулкач Шăши патне чупса ҫитет.

Шăшипе калаҫнă хыҫҫăн Мулкачăн шиклĕх сутас кăмăлĕ яланлăхах манăҫать.

Шăши шиклĕ чĕр чуна мĕн каланă-ши?

Тупкав хуравĕ.

Шăши шиклĕ чĕр чуна ҫапла каланă:

— Шиклĕх пулмасан Мулкач йăхĕ тахҫанах пĕтсе лармалла, шиклĕх сире пурăнма пулăшать, — тенĕ.

Ҫакăн хыҫҫăн Мулкач шиклĕх сутма пăрахнă.

## ПЫЛ ХУРЧĔ

*Юмах*

Автанкасси ялĕнче пĕр тăлăх ача пурăннă. Вăл мĕнле те пулин апатлă пулас тесе Пайтул патне кĕтӳ кĕтме кĕрĕшет. Пайтул тăлăх ачана качака кĕтĕвĕ шанса парать. Кĕтĕвĕ пысăках мар — виҫĕ качака кăна, анчах та пурпĕрех вĕсене пăхмалла — пăхмасăр кĕтӳ ҫӳремест.

Ирпе ирех качака кĕтӳҫи хăйĕн выльăхĕсене улăха е хире илсе тухать. Пĕрремĕш кун выльăх ҫитерме тухать те тĕлĕнсех каять: качакасем каскăн иккен, кастарса ҫӳреме питех те юратаҫҫĕ. Пăхса тăнă ҫĕртех калча ҫине кĕрсе каяҫҫĕ, каласан та итлемеҫҫĕ, кăшкăрсан та пăхăнмаҫҫĕ.

Мĕн тумалла? Ним тума та пĕлеймест çамрăкскер — ана хĕррине пырса ларать те ĕсĕклеме пикенет.

Кĕçех ун патне самăр Арлан пырса тухать.

— Ма йĕретĕн, маттурăм? — тет вăл хута кĕрсе.

— Ма йĕрес мар, качакасем мана итлемеççĕ — калча çинчен тухас темеççĕ, — хуравлать кĕтӳ ачи.

— Халех хӳтерсе кăларатăп, — тет Арлан.

Анчах та качакасем Арлана та итлемеççĕ — çаплах калча тĕшĕрсе çӳреççĕ. Арлан ним тума пĕлмен енне кĕтӳ ачи çумне пырса ларать те ĕсĕклеме пикенет. Иккĕн пулса ĕсĕклеççĕ, иккĕн пулса йĕреççĕ.

Кĕçех вĕсем патне хир мулкачи — Карсак пырса тухать.

— Ма йĕретĕр, маттурсем? — тет вăл хута кĕрсе.

— Ма йĕрес мар, качакасем пире итлемеççĕ — калча çинчен тухас темеççĕ.

— Халех хӳтерсе кăларатăп, — тет Карсак.

Анчах та качакасем Карсака та итлемеççĕ — çаплах калча тĕшĕрсе çӳреççĕ. Карсак та, ним тума пĕлмен енне, кĕтӳ ачи çумне пырса ларать ĕсĕклеме пикенет. Виççĕн пулса ĕсĕклеççĕ, виççĕн пулса йĕреççĕ.

Кĕçех вĕсем патне сарă Тилĕ пырса тухать.

— Ма йĕретĕр, маттурсем? — тет вăл хута кĕрсе.

— Ма йĕрес мар, качакасем пире итлемеççĕ — калча çинчен тухас темеççĕ. Тем тумалла ĕнтĕ?

— Халех хӳтерсе кăларатăп, — тет сарă Тилĕ.

Анчах та качакасем сарă Тилле те итлемеççĕ — çаплах калча тĕшĕрсе çӳреççĕ. Тилĕ те ним тума пĕлмен енне кĕтӳ ачи çумне пырса ларать те ĕсĕклеме тытăнать. Тăваттăн пулса ĕсĕклеççĕ, тăваттăн пулса йĕреççĕ.

Кĕçех вĕсем патне услап Упа пырса тухать.

— Ма йĕретĕр, маттурсем? — тет Упа та хута кĕрсе.

— Ма йĕрес мар, качакасем пире итлемеççĕ — калча çинчен тухас темеççĕ.

— Халех хӳтерсе кăларатăп, — тет Упа.

Анчах та качакасем Упана та итлемеççĕ — çаплах калча

тĕшĕрсе çӳреççĕ. Упа та, ним тума пĕлмен енне, кĕтӳ ачи çумне пырса ларать те ĕсĕклеме тытăнать. Пиллĕкĕн пулса ĕсĕклеççĕ, пиллĕкĕн пулса йĕреççĕ.

Кĕçех вĕсем патне Пыл хурчĕ вĕçсе пырать. Вăл пухнă мулне те, хăйне те хӳтĕлеме пултарать.

— Ма йĕретĕр, маттурсем? — тет Пыл хурчĕ хута кĕрсе.

— Ма йĕрес мар, качакасем пире итлемеççĕ — калча çинчен тухас темеççĕ.

— Халех хӳтерсе кăларатăп, — тет Пыл хурчĕ.

— Эй, санран пулать-и вăл! — теççĕ макăрса ларакансем. — Арлан хăваларĕ — хăваласа кăлараймарĕ, Карсак хăваларĕ — хăваласа кăлараймарĕ, Тилĕ хăваларĕ — хăваласа кăлараймарĕ... Эсĕ — пĕчĕкскер, мĕн тăвăн-ши? Мĕнле майпа хӳтерсе кăларăн-ши?

Ак тамаша! Качакасем Пыл хуртне курсанах сехĕрленсе ӳкеççĕ — апла та капла сиккелеççĕ, унталла та кунталла чупкалаççĕ. Унччен те пулмарĕ — калча çинче пĕр качака та юлмарĕ!

Ачасем, каскăн Качакасене Пыл хурчĕ мĕнле майпа хӳтерсе кăларчĕ-ши? Ю м а х   х у р а в ĕ: сăннипе хăратса.

## ПĂЛАНПА ЮЛХАВ

*Юмах*

Пурăннă тет сĕм вăрманта çамрăк Пăлан. Пĕрре вăл çăл патне шыв ĕçме аннă та хăйĕн шыври мĕлкине сăнанă май:

— Эп хамăн пӳ-си çакăн пек чипер тесе шутламан та, — тенĕ хăй тĕллĕн.

— Чăн, чăн! Эс çак вăрманта пурăнакансенчен чи çамрăкки, чи илемли, — илтĕннĕ такам сасси.

Çамрăк Пăлан шиклĕн йĕри-тавра пăхса илнĕ — таврара никам та курăнман.

— Ан хăра, тусăм, ку — эпĕ, — тенĕ каллех çав йăваш сасă.

— Кам вара эсĕ? — тĕлĕнсе ыйтнă Пăлан.

— Епле паллаймастăн-ха, эп сан тусу — Юлхав вĕт, — тенĕ вăрттăн сасă, — эс манпа туслă пурăнсан никамран яштакрах, илемлĕрех пулма пултаратăн.

Кам-ха яштак та илемлĕ пулма кăмăлламĕ?

Çамрăк Пăланăн та куçĕсем çиçсе илнĕ, вăл мĕн пур чĕр чунсенчен чăн чиперри пулма ĕмĕтленнĕ. Çапла майпа вĕсем хушшинче туслăх пуçланнă. Пăлан та ӳснĕ, Юлхав та ӳснĕ.

Çамрăк Пăлан вăрман тăрăх курса çӳресшĕн, ешĕл курăк тупса çиесшĕн, анчах та ăна Юлхавĕ чарнă:

— Ачашăм! Мĕн пирки уссăрах чупса çӳремелле, нумай утни ывăнтарать, ывăнни илемлĕхе пăсать, — тенĕ.

Ачашĕ вăл каланине итленĕ те ура айĕнчи тип курăка çеç кăшланă.

Çамрăк Пăлан таса çăл куçĕ патне каясшăн, тăрна куçĕ пек тăрă шыв ĕçсе пăхасшăн, анчах та Юлхав çемçе чĕлхипе:

— Айванăм! Инçете çӳресси инкеклĕ, çăлри пек шыв çывăхри кӳлленчĕкре те пур, — тенĕ.

Айванĕ вăл каланине итленĕ те лупашкари лĕп шыва ĕçнипех çырлахнă.

Çамрăк Пăлан чупкаласа çӳресшĕн, яштак урисене кăштах вылятасшăн, анчах та Юлхав хăйĕн юррипех юрланă:

— Чиперĕм! Шуйханса чупса çӳрени мĕн парать? Ура тупанне çех хăпартса кăларать. Саншăн канса выртни усăллăрах, — тенĕ.

Чиперĕ вăл каланине итленĕ те пĕр таврарах тапăртатса çӳренĕ.

Çамрăк Пăлан çил ачипе ăмăртасшăн, хăйĕн пултарулăхне кăтартасшăн, анчах та Юлхав каллех ăна:

— Çамрăкăм! Кирлĕ мар ĕçпе ан муталан, ун вырăнне сулхăнра выртса кан, — тенĕ.

Çамрăкĕ ун сăмахне итленĕ те тĕмсем айĕнче тĕлĕрсе вăхăта ирттернĕ.

Хушăран çак Пăлан:

— Хам урасене чупма хăнăхтармасан усал тăшмансенчен

тарса хӑтӑлма пултарӑп-ши? — тесе те пӑшӑрханнӑ. Анчах та Юлхав ӑна хирӗҫ:

— Тусӑм! Пирӗн вӑрманта тискер чӗр чунсем ҫук, вӗсене ҫывӑхри сунарҫӑсем тахҫанах вӗлерсе пӗтернӗ, — тесе йӑпатнӑ. Тусӗ ун канашне итленӗ те йӑпаннӑ. Ҫапла вӗсем пурӑннӑ, ҫаплах пурӑнма шутланӑ, пулассишӗн сахал куляннӑ.

Кун хыҫҫӑн кун иртнӗ. Юлхав пысӑкланнӑ — Пӑлан тӑмсайланнӑ: ирпе ирех вӑранман, таса сывлӑмпа ҫӑвӑнман, ҫӑл шывӗ патне васкаман, сӗтеклӗ ҫулҫӑсем шыраса ҫӳремен.

Пӗр илемлӗ ирхине ҫак таврана сӑрӑ кашкӑрсем килсе тухни ҫинчен хыпар саланнӑ. Сас-хура ҫамрӑк Пӑлан хӑлхине те ҫитсе кӗнӗ. Хӑраса ӳкнӗ вӑл, анчах та «тусӗ» ӑна йӑпатнӑ:

— Тӑванӑм! Кӑлӑхах хавшаса ан ӳк, тен, ку сас-хура суя кӑна, — тенӗ.

— Сас-хура чӑна тухсан? — иккӗленнӗ Пӑлан.

— Чӑн пулсан та темех мар, вӑрманта сансӑрӑн та йыш нумай.

— Ҫапах та чуна шиклентерет.

— Мӗн шикленмелли пур! Кӗҫех вӗсене ҫывӑхри сунарҫӑсем тытса пӗтереҫҫӗ.

Йӑпатнӑ Юлхав — йӑпаннӑ Пӑлан, анчах пурпӗрех шиклӗн тапнӑ ун чӗри. Хӑрушлӑх ҫитессе сиснӗ пек. Часах хӑрушлӑхӗ ҫитсе те тухнӑ.

Каҫа хирӗҫ ҫамрӑк Пӑлан катара ҫулҫӑсем ҫисе ҫӳренӗ. Ӑнсӑртран вӑл пуҫне йӑтса пӑхнӑ та инҫех те мар сӑрӑ кашкӑр иртсе пынине курах кайнӑ: ун сӑнӗ тискер пулнӑ, куҫӗсенче вут ҫуннӑ.

Хӑранипе Пӑлан шарт! сикнӗ, вӑл чӗтренипе тӗмсем те чӗтреннӗ. Кашкӑр ӑш какая туйнӑ та ыткӑннӑ ун еннелле. Ҫамрӑк Пӑлан вырӑнта сиксе илнӗ те тарма пикеннӗ. Анчах хӑнӑхмансkerне чупма йывӑр пулнӑ: урисем итлемен, васкаса чупма пултарайман.

Халь тин туйса илнӗ Пӑлан Юлхав вӗрентӗвӗн сиенне, анчах та тавҫӑру кайран ҫитнӗ. Мӗн пӗчӗкрен пӗлӳ пухмалла пулнӑ-мӗн, инкек пуласран сыхланас пулнӑ-мӗн!

Усал кашкӑр Пӑлана хуса ҫитнӗ те сиксе ӳкнӗ ун ҫине. Сасартӑк «п-пах! п-пах!» пӑшал сасси кӗрлесе кайнӑ, икӗ пӳ ҫӗр ҫине тӗшӗрӗлсе ӳкнӗ.

Тӗмсен хушшинчен ватӑ сунарҫӑ чупса тухнӑ. Ун умӗнче вилӗ кашкӑрпа Ҫамрӑк Пӑлан выртнӑ. Пӑланӗ хӑвӑрттӑн сывланӑ, вӑл хӑранипе тата кашкӑр йывӑрӑшне пула ӳкнӗ пулнӑ.

Ватӑ сунарҫӑ ҫамрӑк Пӑлана мӑйӗнчен лӑпкаса илнӗ те ҫапла каланӑ:

— Айванскер! Сиксе тӑр та вӗҫтер, ирӗкре ҫисӗм ҫиҫтер! Анчах асту, малашне ӑслӑрах пул!

## ПОПУГАЙЧИК

*Хайлав*

Паллян попугай пур. Ӑна вӑл вырӑс чӗлхин витӗмӗпе усӑ курса Попугайчик тесе ят панӑ. Палля ҫак пултаруллӑ кайӑка ҫамка тарне юхтарсах чӑвашла калаҫма вӗрентет.

Попугайшӑн этемле калаҫма вӗренесси тем мар: мӗнле чӗлхепе калаҫма вӗрентетӗн — ҫав чӗлхепе калаҫма вӗренет. Паллян попугайчикӗ питӗ ӑслӑскер тата — ним мар чӑвашла калаҫма хӑнӑхса ҫитнӗ.

Пӗррехинче ҫак попугай Палляна та тӗлӗнтерсе ярать. Ун чухне вӗсен хушшинче ҫакӑн пек калаҫу пулса иртет:

— «Попугайчик аван», — те.

— Попугайчик аван.

— «Попугайчик лайӑх», — те.

— Попугайчик лайӑх.

— «Попугайчик хитре», — те.

— Попугайчик хитре.

— «Попугайчик ухмах», — те.

— Эс ху ухмах!

— Мĕншĕн ухмах эпĕ?

— Ăслă çын нихçан та хăйĕн тусне ухмахланма вĕрентмест, эсĕ вара шкула çӳретĕн пулсан та, çавна халь те пĕлместĕн.

Пыр та пуплеш каласма вĕреннĕ кайăкпа — мĕнлерех кастарать!

Попугайсем хушшинче те ăслисем пур иккен.

## ПАН УЛМИ

*Калав*

Павăл патвар çитĕнет. Ăспа та, пĕвĕпе те. Калăпласа каласма та сĕмленет. Çитĕннĕ çын пек курăнас килет ĕнтĕ.

Павăлсен сад пахчи пур. Унта пан улми йывăççисем те, çырла тĕмĕсем те çителĕклĕ. Улма-çырла пиçнĕ вăхăтра тĕрлĕ çырла тутанса пăхма пулать. Хăшне татса çиес килет — тат та çи, никам та чармасть.

Пĕррехинче Павăл амăшĕ патне пычĕ те:

— Анне, мана укçа пар-ха, — терĕ.

— Мĕн тума? — тĕпчерĕ амăшĕ.

— Лавккана кайса пан улми илес тетĕп.

— Пан улми килте те пур вĕт-ха.

— Çапах та лавккарине çиес килет, — терĕ ача.

— Çиесех килет пулсан лавккарине те çисе кур эппин, — терĕ амăшĕ ачине пĕр тенкĕлĕх укçа парса.

Амăшĕ Павăл тухса кайсан та килти пан улмипе лавккари çинчен шухăшларĕ. «Мĕнле-ха капла? — терĕ вăл ăшĕнче, — килте те пан улмирен татăк тăмастпăр, çапах та ютран илсе килнĕ çимĕçе хапсăнатпăр. Ют çĕршывран килнĕ çимĕçсене черет тăрсах туянатпăр. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен çынран юлас килмест. Вырăнти çимĕç вара пирĕншĕн сиплĕрех те, техĕмлĕрех те».

Тĕрĕсех шухăшлать Павăл амăшĕ.

# РАКПА КĂРТĂШ

*Юмах*

Иртсе кайнă кунсенче, килсе çитес çулсенче, пурăннă пулнă пурне те хăратакан Рак. Ара, кам хăрамĕ-ха çавăн пек хăрушкаран? Пуçĕ — пусăри пучах пек, куçĕ — сиксе тухас салма пек, ултă мăшăр ураллă, нумай-нумай чĕрнеллĕ, вăрăм мăйăхне вылятать, мăн хаччипе хăмсарать. Каçа хирĕç тĕл пулсан çĕрĕпе куç хупса кураймăн!

Вĕтĕ-вĕтĕ пулăсем хачăллă хăнчăр куçран калама çук хăранă. Вĕсемшĕн вăл сăхă чунлă хăрушка пулнă.

Çавăнпа та хачăллă Ракпа хурăнташлă пулас текенсем пачах тупăнман. Туслă пулас текенсем курăнман. Çывăххăн паллашас текенсем те пулман. Çывхарса пăх-ха ун патне! Вăл, хачăллăскер, сана самантрах каскаласа тăкма пултарать! Çавăн пек усалпа камăн çывăх пулас килĕ? Çавăн пек усалпа камăн урлă пулас килĕ? Çавăн пек хурахпа камăн хурăнташлă пулас килĕ!

Çук, кирлĕ мар! Кипке тулли ылтăн парсан та кирлĕ мар!

Çуралнă пулăсем те, çуралайманнисем те — пурте хăранă хачăллă Ракран. Йĕплĕ Кăртăш анчах хăраман. Унталла та, кунталла та ирĕккĕн ярăнса çӳренĕ. Рак çывăхне пырса тухма та шикленмен. Тен, шикленме пĕлмен пулĕ?

— Эй, Кăртăш, пуçу хаклă мар-им саншăн? — тĕлĕнсе ыйтнă пĕлекенсем.

— Пуç вăл пурин те пĕр хаках пулĕ, — тенĕ Кăртăш.

— Пуçу хаклă пулсан Рак патне ма çывхаратăн?

— Тупăшса пăхас тетĕп.

— Тупнă тупăшмалли хевте! — тенĕ ватăсем. — Чарăн иртĕхме!

«Мĕн пулать те мĕн килет», — тенĕ те йĕплĕ Кăртăш Рак умне çитсе тăнă.

— Ну! — хаччипе хăмсарнă Рак. — Килсе пăх-ха çывăха!

— Килмелле пулсан — килетĕп, — тенĕ те йĕплĕ Кăртăш тата кăштах çывхарнă.

— Халех халва туса хуратăп эп санран! — тенĕ те Рак пĕр-ик утăм каялла чакнă.

— Халех тесен — халех пулатăп! — тенĕ те йĕплĕ Кăртăш тата кăштах çывхарнă.

— Хурçă хывнă хачча илсе тухам-ха, — тенĕ те Рак шăтăкнелле кĕрсе кайнă.

Йĕплĕ Кăртăш нумайччен хăнчăр куçлă Рак каялла тухасса кĕтсе тăрать — çук, кĕтсе илеймест. Çав кун та, тепĕр кун та хăрушка йыш çине тухмасть. Никам курман чухне кăна тухкаласа çÿрет. Йĕплĕ Кăртăш Хăнчăр куçа йĕплесе çакăн пек юрă хывать:

Хачăллă хуçа тесенех
Хал пĕтесле хăраттăм.
Хăнчăр куçлă хуçине
Хăратрăм, хăратрăм,
Чăнахах та хăратрăм.

## СУЙЛАВ

*Юмах*

Авалхи тĕнчере авалхи кайăксем пурăннă, хальхи пек каласан — чĕрĕ чунлă чĕрлĕхсем. Аван пурăннă-и, аван мар-и, ун çинчен эп пĕлместĕп, анчах та авалхи тĕнчере çерçи сăмси чухлĕ те йĕрке пулман. Йĕп вĕçĕ чухлĕ те йĕрке пулман. Лайăххи те, начарри те — нимли те пулман. Никам та никама пăхăнма пĕлмен, никам та никамран хăрама пĕлмен. Ăс çитмен пирки пурте ăсчах пулнă. Паллă ĕнтĕ: никама та никам пăхăнмасăр, никамран та никам хăрамасăр çут тĕнчере пурăнма та меллĕ мар. Çак чăнлăха чăн малтан çуралнисем те, чăн кайран çуралнисем те чухласа илеççĕ. Туйса илеççĕ те туй пухма шутлаççĕ. Ун чухне «Пуху» сăмах çуралайман пулнă-ха, пуху тесе калас вырăнне «Туй» тенĕ. Мĕнех вара: туй тăвас тăк туй тăвас. Туй пухăнать. Ирĕке хăнăхнă туй халăхĕ хăйне хăй ытлашшипех ирĕклĕ тыткалать, туйăмне те иртĕхтерет. Туй та çуй!.. Пурте

ахăраççĕ, пурте çухăраççĕ: никама та никам итлемест, никама та никам хӳтĕлемест. Пĕр сăмахпа каласан, туйра ним йĕрки те çук. Йĕрки пулма майĕ те çук. Çуйхану та шуйхану... Шăл йĕрӳ те шăл хăйравĕ... Кăштахран шав тамалать. Çав шăплăхпа усă курса йĕк шыракан Йĕке хӳре (ун чухне ăна Йĕк хӳре тенĕ) йĕкĕлтешсе çапларах каласа хурать:

— Йĕрке пулман, пулма та пултараймасть! — тет.

Пăх-ха эс ăна мĕнлерех калаçать.

Кулан (чурăс ашак) кулса ярать:

— Кун пек сăмах кустарсан кун çути те çухалма пултарать, — тет.

— Кун йĕрки йышăнас! — канаш парать Кабарга.

— Кун пирки Калта калаçтăр, — ятран сĕнет Ягуар.

Пурте кулса яраççĕ. Ăш хытиччен кулаççĕ.

Кулă тамалсан туй умне Куян тухать.

— Кунта ĕнтĕ кула-кула тутам та кулата пек çурăлса кайрĕ. Кун пек култарма юрамасть, — тет.

— Кулма юрамасть пулсан, кулмасăр юмахла, — теççĕ Куяна.

Çурăк тута çунатлансах каять:

— Çут тĕнчере çутă кун курса пурăнас тесен мĕнле те пулин йĕрке кирлĕ. Йĕрсе калатăп: йĕрке кирлех! — тет вăл.

Туй халăхĕ çурăк тутана курать те çурăлса каяс пек кулса ярать. Ахăрса кулать.

— Ан кулăр! — чарма пăхать Анчăк, анчах та чараймасть.

— Кăштах шăпланăр! — кăшкăрса ярать Кашкăр. — Кулма килмен кунта, йĕрке тума килнĕ.

— Тума пĕлсен ту эппин! — теççĕ Турсем.

Кăштах шухăшласан Кашкăр çапла калать:

— Йывăр ĕçе çăмăллатма çакăн пек йышăну сĕнетĕп: калаçма ирĕк памасăр калаçмалла мар, ыйтма ирĕк памасăр ыйтмалла мар.

— Йышăнас! — теççĕ пĕтĕм йышпа.

Йышăнаççĕ.

Туй халăхне пуç тайса Çĕлен калаçма ирĕк илет.

— Çителеклĕ култăмăр — çăвара хупма вăхăт! — тет хайхискер. — Йĕрĕхсем мар эпир, йĕркеллĕ пурăнас тесен йĕрке тăвасах пулать.

— Йĕркине кам тăвать? — йĕплесе илет туй халăхĕ.

— Йĕрке тума йĕркеллĕ чĕр чун кирлĕ, урăхла каласан пуçлă чĕр чун — пуçлăх кирлĕ, — тет туйра Çĕлен.

Лăс хŭреллĕ Пакша пак кăна персе ярать:

— Патша кирлĕ! — тет.

Туйри халăх çак сăмаха илтсен ниçталла мар, таçталла пулса каять.

— Кама Патша тумалла? — ыйтаççĕ Пакшаран.

— Ак ĕнтĕ те мак ĕнтĕ, Патшине ăна хам та пулма пултаратăп, — тет хайхи-майхи лăс хŭре.

— Эсех Патша пулаймăн: сана никам та пăхăнмасть, санран никам та хăрамасть, — шавласа каяççĕ Шаккалсем.

— Мана сăмах парăр-ха? — мала тухса ыйтать Мамонт. — Ман шутпа, манăн Патша пулмалла: мана пурте пăхăнаççĕ, манран пурте хăраççĕ.

Туй халăхĕ шухăша путать.

— Пĕлетĕр-и, тăвансем, Мамонт йăхĕ пĕтмелле, — тесе пĕлтерет Пĕлтĕк, хăй те пĕтесси çинчен пĕлеймесĕр.

Каллех ĕç тухмарĕ.

— Хамăн Патша пулас, — хавхаланать Хамрай.

— Манран та пулас çук, санран та пулас çук, — тет Мангуст текен чĕр чун. — Ăсна пăхсан та, сăнна пăхсан та Патша патне те пыраймастăн!

— Эппин тесен, чĕр чун Патши эп пулам, — тет Эрешмен.

— Эсĕ, эрешмен, ан та эрлен, пуç пулма ан сĕмлен!..

Сăмах çине сăмах сапаланать — вĕçĕ те çук.

Сăмах пине çитсен Сăхаян сăмах илет.

— Суйланса калаçнипе ĕç тухмасть, — тет вăл. — Суйлав irттерес пулать. Кама суйласа илетпĕр — çав Патша пулать.

— Ху кама сĕнетĕн? — тĕк лараймасть Тĕкура.

— Хурашмана сĕнетĕп, — тет Сăхаян.

— Хурашман хуҫа пулсан ҫутă кунсем ҫухалĕҫ, хура кунсем пуҫланĕҫ, — хирĕҫлеҫҫĕ Хирчĕксем.

— Сухатие суйлас!

— Сухати кам вăл?

— Вăрман улăпĕ — Пăши ятлăскер.

— Пăширен те пысăкки пур!

— Кам тата вăл?

— Паллă чĕр чун Слон!

— Слон ытла та мĕшĕлти, ун пек патша кирлĕ мар!

— Тикрĕҫе суйлас, ăна тиркекенсем пулас ҫук!

— Тикрĕҫĕ тиркевсĕр те, тирĕ тиркевлĕ!

Каллех пурте ахăрма тытăнаҫҫĕ, ҫухăрма пуҫлаҫҫĕ — тытса чарма ҫук. Пăхăсăн: тертпе тунă теветкеллĕх кĕҫ-вĕҫ пĕтсе ларать. Туй халăхĕ пăлханма, пăтранма тытăнать. Пурте паттăрланса, харсăрланса каяҫҫĕ. Ахăр самана ҫитнĕ пек ҫĕр ҫĕмĕрсе кĕрлеҫҫĕ...

Сасартăк хаяр та хăватлă сасă янраса каять. Аслати пек хăватлăскер мĕн пур сасса хупласа хурать. Туй та лăпланать, ҫуй та пĕтсе ларать. Хăлха ҫурасла хăватлă сасă кăна нумайччен янраса тăрать. Чĕрĕ чунсем вилнĕ пекех пулаҫҫĕ. Чĕрĕлнĕ пек пулсанах пурте чĕтрене ереҫҫĕ. Айванраххисем айĕсене йĕпетнĕ, селĕмсĕрсен сехри хăпса тухнă. Туй та пĕтет, ҫуй та пĕтет — шăпăрлан кĕтĕвĕ шăп пулать.

Туй варрине туйăмлăн кăна пускаласа Арăслан тухса тăрать. Пăхса тăракан туй халăхĕ ҫине пăхăнтаракан куҫпа тинкерет те калăпланă сăмахпа каласа хурать:

— Ар пуҫĕ те хам пулатăп, ҫар пуҫĕ те хам пулатăп, патши те хам пулатăп, тарҫи те хам пулатăп. Пакша тĕрĕс карарĕ — йĕрке тума Патша кирлĕ. Эпĕ вăл — сире кирлĕ хуҫа! Пурте мана пуҫ тайăр!..

Пурте ҫĕре ҫити пуҫ таяҫҫĕ.

Арăслан ар куҫĕпе пăхса ҫаврăнать. Пурте пĕчĕкленнĕ —

шăпăрт кăна тăраççĕ. Пăшисем те пăштах, шăшисем те шăпах. Арăслан кăмăлĕ çырлахать.

— Кам хирĕç? — ытахальтен ыйтать Арăслан.

Арăслан туй халăхĕ çине тепĕр хут пăхса çавăрнать. Пĕр сасă та çук, пĕр чĕвĕ те çук — пурте шăпăртăк. Пуçтаххисем пуçĕсене уснă, хӳреллисем хӳрисене уснă. Йĕкĕлтисем йĕркене кĕнĕ, хирĕççисем хĕсĕнсе ларнă. Шавлисем шăл шурри кăтартма та хăраса тăраççĕ.

Арпа купи айĕнчен аран-аран сас тухать:

— Ара эсĕ кам вара? — ку Арлан сасси иккен.

Арлана Арăслан аркатмаллипех аркатса тăкать:

— Арлан мар, паллах, ар пуçлăхĕ — Арăслан эпĕ! — тет Арăслан. — Арпалăхна уçса хур та ар пуçлăхне килсе хур!.. Арпа купи хыçне лар та урăх сасă ан кăлар!..

Арлан пырать. Арăслан архасланса: — Çухал! — тет.

Арлан аран-аран çĕр шăтăкне тарса хăтăлать.

Арăслан, кăштах тăхтасан, кăмăлне те кăтартать.

Арăслан тӳперех çĕре тăрать те çапла калать:

— Ас пуррисем астума пĕлĕр, ăс пуррисем ăнланма пĕлĕр! Паянтан пуçласа Патша тени эпĕ пулатăп. Манăн пурте хамăн: хам та хамăн, эсир те манăн. Ман мехел те çавăн пек: йăли манăн, йĕрки хамăн! Мĕн тăвас тетĕп — çавна тума пултаратăп: йăла пăсакансене йăлмаклама, йĕрке пăсакансене йĕртме пултаратăп. Ăс çуккисене ăнлантарса пама та пултаратăп.

Çапла калать те Арăслан пĕчченçĕ тăракан Пĕлтĕке пĕтерсе те хурать. Пĕлтĕкрен йĕпе вырăн анчах тăрса юлать.

Çак ĕç пулса иртнĕ хыççăнах тӳпем çĕре тӳрленсе тăрать те ытарлăн пăхкаласа çапла ыйтать:

— Ăнлантăр-и?

Ăнран кайнă чĕр чунсем ăнланнине пĕлтерсе пуçĕсемпе сĕлтеççĕ.

Арăслан малалла калать:

— Апла пулсан, — тет вăл, — туйра пуррисем туйса

ларăр, туйра çуккисене туя парăр: туй тума ирĕк памастăп, пуху тесен хам пухатăп. Манăн çилхем те, çиллĕм те хăватлă — çакă манăн юлашки сăмахăм пулать. Халь ĕнтĕ саланма та юрать.

Туй халăхне туйтармалла хар кăна харлаттарса ярать. Чăлханса çитнĕ туй халăхĕ чăл-пар саланса пĕтет.

Çапла майпа ар пуçлăхĕ — Арăслан «чĕр чун патши» пулса тăрать. Никам та ăна пăхăнтараймасть, никам та ăна хăратаймасть. Халĕ те çапла.

## СӐТĔК СУНАРÇĂ

*Юмах*

Пуръннă тет пĕр сӳтĕк сунарçă. Вăл ыттисем майлах пурăннă: куллен хуçалăхра ĕçленĕ, пушă вăхăтра сунара çӳренĕ. Анчах ытти сунарçăсем пурте тенĕ пекех ытлă-çитлĕ пурăннă, пĕр çак сунарçăн анчах тулăх пурнăçĕ ĕмĕтре пулнă. Сунарта ун ĕçĕ пĕрре те ăнман. Çапах та вăл салхулланма юратман, сунар ĕçĕнчен те писме шутламан.

Теплерен пĕрре ун ĕçĕ кăшт анчах ăнса кайман. Ку акă çапла пулса иртнĕ. Каçа хирĕç, киле май çул тытас тенĕ чух, вăл тĕмсем хушшинче сарă тилĕ пуррине курах кайнă. Чее тилĕ сисĕмлĕхне çухатсах шăши чĕппипе айкашнă. Сунарçă йывăç вулли çумне таяннă та хăйĕн икĕ кĕпçеллĕ пăшалне ярса тытнă. Анчах та сӳтĕк сунарçă тилĕ çине пăшалпа тĕллесе тăнă хушăрах тĕлсĕр ĕмĕтпе супса кайнă. Вăл çапла ĕмĕтленнĕ:

«Часах тилле тытатăп та тирне сӳсе илетĕп. Ăна пасара кайса сутатăп та сысна çури туянатăп; сысна çури ӳсет те сысна пулать, ăна сутатăп та путек туянатăп; путек ӳсет те сурăх пулать, ăна сутатăп та пăру туянатăп; пăру ӳсет те ĕне пулать, ăна сутатăп та тиха туянатăп; тиха ӳсет те лаша пулать, ăна сутатăп та виçĕ тиха илетĕп; виç тихаран виç лаша пулать, вĕсене сутатăп та пĕр кĕтӳ тиха илетĕп, пĕр кĕту тихаран ут

кĕтĕвĕ пулать. Э-эх! Пурăнатăп ун чухне! — тесе вăл хыттăнах кăшкăрса ярать те тилле хăратса тартать.

Çапла вара сӳтĕк çунарçă нимсĕрех тăрса юлать. Нихçан та тиллине тытиччен тирне сӳмелле мар çав.

## СЫСНА

*Шӳт*

— Куçик тусăм!

— Мĕн калăн-ши, Микуç тусăм?

— Сăмах вăйăи выляр-и?

— Выляр.

— Ман хыççăн ултă хутчен «эпĕ те» тесе калама пултарăн-ши?

— Ма пултараймастăп, пултаратăп!

— Пуçлăпăр!

— Пуçла.

— Кайрăм вăрмана.

— Эпĕ те.

— Çитрĕм катана.

— Эпĕ те.

— Тупрăм муклашка.

— Эпĕ те.

— Турăм валашка.

— Эпĕ те.

— Суртăм ун çине.

— Эпĕ те.

— Çирĕн эс ăна.

— ? ? ?

— Ма нимĕн те чĕнместĕн?

— Эпĕ сысна мар вĕт!

— Апла пулсан Мĕкĕтене мĕншĕн сысна тесе ятларăн?

— Вăл урăх ĕç.

— Урăх ĕç мар çав: хăв сысна пулмасан нихçан та çынна сысна тесе калаймастăн! Ан ман çак чăнлăха.

## ÇĂМХА

*Юмах*

Асанне пурăннă. Унăн кивĕ арча пулнă. Кивĕ арчара асамлă Çăмха пулнă.

Ватă Асанне пĕррехинче арчине пăлхатма тытăнать. Çав вăхăтра унта выртакан асамлă Çăмха урайне тухса ӳкет. Тухса ӳксенех хайхине чун кĕрет. Вара асамлă Çăмха картишне кусса тухать.

Кунта вăл авăк хӳреллĕ Автана курать.

— Кам эсĕ? — тĕлĕнсе ыйтать Автан.

— Эпĕ Çăмха пулатăп.

— Эсĕ мана кирлĕ мар, кус малалла! — тет Автан.

Çăмха малалла кусать. Кĕçех каçăр мăйракаллă Качака умне çитсе тăрать.

— Кам эсĕ? — тĕлĕнсе ыйтать Качака.

— Эпĕ Çăмха пулатăп.

— Эсĕ мана кирлĕ мар, кус малалла! — тет Качака.

Çăмха малалла кусать. Кĕçех вăл кăтра çăмлă Сурăх умне çитсе тăрать.

— Кам эсĕ? — ыйтать Сурăх тĕлĕнсе.

— Эпĕ Çăмха пулатăп.

— Эсĕ мана кирлĕ мар, кус малалла! — тет Сурăх.

Çăмха малалла кусать. Кĕçех вăл мăн мăйракаллă Ĕне умне çитсе тăрать.

— Кам эсĕ? — тĕлĕнсе ыйтать Ĕне.

— Эпĕ Çăмха пулатăп.

— Эсĕ мана кирлĕ мар, кус малалла! — тет Ĕне.

Çăмха малалла кусать. Кĕçех вăл пуклак сăмсаллă Сысна умне çитсе тăрать.

— Кам эсĕ? — тĕлĕнсе ыйтать Сысна.

— Эпĕ Çăмха пулатăп.

— Эсĕ мана кирлĕ мар, кус малалла! — тет Сысна.

Çăмха малалла кусать. Кĕçех вăл хаяр саслă Йытă умне çитсе тăрать.

— Кам эсӗ? — тӗлӗнсе ыйтать Йытӑ.

— Эпӗ Ҫӑмха пулатӑп.

— Эсӗ мана кирлӗ мар, кус малалла! — тет Йытӑ.

Ҫӑмха малалла кусать. Кусса пынӑ ҫӗртех тӑп чарӑнса тӑрать. Мӗн пулчӗ? Мӗншӗн малалла кусмасть Ҫӑмха? Ах, инкек — ҫавра Ҫӑмха сӳтӗлсе вӗҫне тухнӑ иккен. Мӗн тумалла? Ним тума та ҫук — шухӑшлас пулать. Кӗҫех сӳтӗлсе пӗтнӗ Ҫӑмха пуҫне пӗр шухӑш пырса кӗрет.

«Кун чухлӗ курса ҫӳренипе ҫитет пулӗ хальлӗхе», — тет вӑл хӑйӗн ӑшӗнче. Ҫапла шухӑшлать те каялла ҫӑмхаланса асаннен арчинех кӗрсе выртать. Юмах вӗҫӗ ҫакӑ пулать.

## ТИЛӖПЕ ҪӐХАН

*Чӑваш халӑх юмахӗ тӑрӑх*

Вӑрман варринчи сулхӑн шӑтӑкра пӗр Тилӗ пурӑннӑ. Выҫӑхса ҫитсен вӑл сунара тухнӑ. Тем чухлӗ ҫӳресен те нимӗн те тупайман. Ниҫта кайма пӗлмесӗр выҫӑ Тилӗ пӗр йывӑҫ айӗнче чарӑнса тӑрать. Шӑп та лӑп ҫак йывӑҫ тӑрринче Чипер кайӑк йӑви пулнӑ. Чипер кайӑк ҫав самантра чӗпписем патне вӗҫсе пырать. Амӑшӗ ҫитсенех чӗпписем чӑрӑлтатма тытӑнаҫҫӗ.

Выҫӑ Тиллӗн сӗлеки юхса анать. «Мӗнле улталаса тытмалла-ши ку чӗпсене?» — тесе ӑмсанса пӑхкалать. Вӑл самантрах пӗр ӑслай шухӑшласа кӑларать: хӑйӗн лӑска хӳрипе йывӑҫ вуллине хӑшкама тытӑнать.

— Эй, Чипер кайӑк! — тет хӑй ҫӳлелле пӑхса.

— Мӗн вара, Тилӗ тус? — тет Чипер кайӑк.

— Ман ку йывӑҫа тӗпренех касмалла пулать.

— Тархасшӑн, ан кас, Тилӗ тус, ман ку йывӑҫ ҫинче йӑвам пур, йӑвара пилӗк чӗпӗ пур. Хама хӗрхенмесен те чӗппӗмсене хӗрхен ӗнтӗ! — тет Чипер кайӑк.

— Ҫук, касмасан юрамасть.

— Ан кас ӗнтӗ, эпӗ те усаллӑ пулӑп.

— Усаллӑ пулас тесен пӑрахса пар пӗр чӗппӳне!

Чипер кайăк аптраса ӳкет: чĕппи те хаклă, йăвине те шалккă.

— Эй, санпа калаçса тăма вăхăт çук-ха ман, — тет чее Тилĕ. Хăй каллех йывăç вуллине хӳрипе хăшкама тытăнать.

Чипер кайăк пĕр чĕппине пăрахма тытăнать çеç, çав вăхăтра Çăхан пырса ларать те:

— Кар! — тесе кăшкăрса ярать. — Чĕппӳне пăрахса ан пар! Тилĕ сана улталать, хӳре вĕççĕн йывăç касаймасть!

Тилĕ çак сăмахсене илтсен калама çук çилленсе каять. Хăйĕн ăшăнче: «Чим-ха, ватсупнă Çăхан, вĕрентĕп-ха эп сана! — тет. — Ӳлĕмрен никама та ăс парса çӳреймĕн!»

Хăй вара нимĕн те пулман пек:

— Пăчкă мăкалчĕ-ха, хăйрама каятăп, — тесе чăтлăх çĕрелле кĕрсе çухалать. Кĕçех вăл çĕрсе кайнă виле тупса вар-хырăмне сĕрсе варалать те уçланкă варрине тухса выртать. Ватă Çăхан виле шăршине катаранах туйса илет — çав самантрах Тилĕ патне вĕçсе анать. Малтан йĕри-тавра уткаласа çаврăнать, хӳре вĕçне сăхса пăхать — Тилĕ ним те шарламасть. Ватă Çăхан Тилĕ çине ларса куçне чавса кăларма çех тытăнать — Тилĕ ăна хӳринчен кап! кăна хыпса илет.

— Ах, Тилĕ тус, — тет ватă Çăхан, — эс мана улталаса тытрăм терĕн пулĕ те, пачах та ун пек мар: пурăнма йăлăхтарса çитернĕ пирки эпĕ хам ирĕкпех çаклантăм!

Тилĕ ним те шарламасть.

— Ах, Тилĕ тус, — тет каллех ватă Çăхан, — эс вĕт айванран та айван, ватă Çăхана мĕнле çимеллине те пĕлейместĕн-ха!

Çакна илтсен Тилĕ:

— Пĕлетĕп! — тесе кăшкăрса ярать те, çăварĕнчи Çăхан пăр! кăна вĕçсе тарать. Тилĕрен хăтăлнă Çăхан çывăхри йывăç çине пырса ларать те Тилле йĕкĕлтесе çапла калать:

— Кар! Сана вĕрентмелĕх кăна ăс çук мар! — тет.

## УЛАТТИ

*Сунарҫă халапĕ*

Акă мĕн каласа пачĕ пĕррехинче пире утмăл ҫулхи Улатти:

— Авăн уйăхĕ ҫитеспе кăмпа ҫумăрĕсем час-часах пулкаларĕҫ. Питĕ майлă вăхăт. Карҫинккана илтĕм те вăрманалла вĕҫтертĕм.

Пĕр сехет ҫӳретĕп — пĕр кăмпа та тупаймастăп.

Икĕ сехет ҫӳретĕп — ҫур кăмпа та тупаймастăп.

Виҫĕ сехет ҫӳретĕп — чĕрĕк кăмпа та тупаймастăп.

Пушăлла ҫӳренипе пушшех те ывăнса ҫитрĕм.

— Пĕрех хут ак тункаката ҫине ларса канам-ха, — терĕм те, куҫ-пуҫ алчăрасах кайрĕ — ман умра пысăкран та пысăк кăмпа тăра парать. «Улăп кăмпи» тесе ят патăм эп ăна курнă-курманах.

— Ҫав «Улăп кăмпине» татса килтĕн-и вара? — ыйтрăмăр Улаттирен.

Улатти ҫапла хуравларĕ:

— Ҫук, татсa килмерĕм! «Пурпĕрех мана ĕненес ҫук» терĕм те сĕм вăрмантах хăвартăм.

## УПА ХӲРИ МА КĔСКЕ?

*Уйлав*

Виҫĕ кун нимĕн те ҫимен Упа ту хушлăхĕпе утса пырать, урараан-ура ирттерсе аран-аран пускалать.

Пăхать — ту айлăмĕнче Тилĕ ларать, темĕн кăшлать.

— Тилĕ тусăм, мĕн ҫиетĕн вара эс? — ыйтать Упа.

— Хӳре! — кĕскен татса калать Тилĕ.

— Хӳре?.. Мĕнле хӳре?.. Темĕскер ăнланса пĕтерейммерĕм-ха сана эпĕ?

— Кунта нимĕн ăнланса пĕтермелли те ҫук. Хамăн хӳрене хам ҫисе ларатăп.

— Хăвăнне?!

— Ҫапла, хам хӳрене хам ҫисе ларатăп.

— Мĕнле-ха вара эсĕ хӳресĕр пурăнкалăн?

— Айван та иккен эсĕ, — кулса ярать Тилĕ, — хӳре вăл чул катăкĕ мар — çĕнĕрен çитĕнет. Мĕн чухлĕ çиен, çавăн чухлех ӳссе ларать. Ун пекки ман сахал мар пулнă.

— Ав мĕнлерех, — тĕлĕнет Упа, — мĕншĕн эпĕ ун çинчен халиччен пĕлмен?

— Пĕлменрен выçăхса пурăнатăн та çав ĕнтĕ...

Упа уйласа та тăмасть — ăш каниччен аш çисе курма ĕмĕтленет. Хӳрине хыпаласа кармашать-кармашать — ĕç тухмасть. Тепле майпа лектерет те хӳрине — кăкранах татса илет.

Çавăн хыççăн Упа йăхĕ хӳресĕр çуралма тытăнать.

## УЛИТКЕ

*Юмах*

Аслати авăтни илтĕнет. Çиçĕм çиçкелет. Капмар çумăр пĕлĕчĕсем карти-картипе кунталла шăваççĕ. Çумăртан хăракан кайăк-кĕшĕк килĕсеневаскать. Пăрăмлă Улитке умĕнчен утса-чупса иртеççĕ.

Ĕçчен Кăткă кăптăртатса иртет.

— Эй, Улитке, — тет вăл иртсе пынă май, — курмастăн-им, çумăр килет — ĕрĕхтер килнелле!

— Мана васкани ним тума та кирлĕ мар, — тет Улитке.

Тислĕк Нăрри нăрăлтатса иртет.

— Эй, Улитке, — тет вăл иртсе пынă май, — курмастăн-им, çумăр килет — кĕрлеттер килнелле!

— Мана васкани ним тума та кирлĕ мар, — тет Улитке.

Талпас Тĕкĕлтура мĕкĕрсе иртет.

— Эй, Улитке, — тет вăл вĕçсе иртнĕ май, — курмастăн-им, çумăр килет — тĕрлеттер килнелле!

— Мана васкани ним тума та кирлĕ мар, — тет Улитке.

Шавлă Шăрчăк те шĕлтĕртетсе иртет.

— Эй, Улитке, — тет вăл вĕçсе пынă май, — курмастăн-им, çумăр килет — шăвăнтар килнелле!

— Мана васкани ним тума та кирлӗ мар, — тет Улитке.

Ачасем, калӑр-ха, пӑрӑмлӑ Улитке мӗншӗн пурне те «Мана васкани ним тума та кирлӗ мар» тесе хуравланӑ?

Пӗлейместӗр пулсан сӑвӑласа хам калам:

Пӑрӑм-пӑрӑм Улитке.
Пӗчӗк кӑна кӗлетке,
Пулсассӑн та ҫул ҫинче —
Пурпӗр хӑйӗн килӗнче.

Чӑнах та, килте ларнӑ чух васкамалли ҫук.

## УПСАР УПИ

*Калав-юмах*

Авалхи ҫынсем, ҫав шутрах чӑвашсем те, ҫут ҫанталӑкри пулӑмсене чӗрӗ пек курнӑ, ҫут тӗнчере пурӑнакан чӗрӗ чунсене хӑйсен тӑванӗ е хурӑнташӗ шутне хунӑ. Хӑш те пӗр чӗр чуна хӑйсене пурнӑҫ паракан йӑх тӗпӗ тесе шутланӑ, вӗсене асамлӑ сӑмахсемпе асӑнса ҫырлахтарма тӑрӑшнӑ, вӗсенчен пулӑшу тата хӳтлӗх кӗтнӗ. Йӑх пуҫӗпе йӑх тӗпӗн ячӗсем хисепре пулнӑ. Тин ҫуралнӑ ачасене, йӑх пуҫлӑхне юрас тесе, ҫав чӗр чун ятне панӑ. Ҫав чӗр чун хӑйпе пӗр ятлӑ ҫынна тивмест, ӑна пулӑшса е хӑват парса тӑрать тесе ӗненнӗ. Этем хӑй те кайӑкла пурӑннӑ вӑхӑтра ун пек ятсем питӗ нумай пулнӑ. Тӗне кӗмен чӑвашсем хушшинче ҫав ятсене халь те курма пулать. Акӑ вӗсем: Арӑслан, Арлан, Йӑскар, Курак, Пӑрчӑкан, Тӑрна, Упай, Упик, Чӗкеҫ, Юман, Юс, Юспике тата ытти те.

Арҫын ачасене упапа ҫыхӑннӑ ятсем пама тӑрӑшнӑ. Упа ытти чӗр чунсенчен вӑйлӑрах, хӑватлӑрах пулнӑ. Упа ячӗпе ҫӳрекен арҫынсем сунарҫӑ пулсан та ӑна тапӑнман. Такам та пӗлет: упара вӑй нумай, усаллӑхӗ те ҫителӗклӗ.

Упа епле вӑйлӑ чӗр чун пулсан та унӑн шиклӗхӗ те ҫук мар. Сарӑмсӑр хӑраса ӳксен унӑн «упа чирӗ» те пулма пултарать. «Упа чирӗ» тесе сасартӑк вар-хырӑм пӑсӑлса кайнине, ҫинӗ апат шӗвелсе тухнине калаҫҫӗ. «Упа чирӗ»

этемĕн те пулма пултарать. Ун пирки халăх хушшинче тĕрлĕрен халап та çӳрет.

Акă вĕсенчен пĕри.

Ёлĕкхи кунсенче Ёмĕлкасси ялĕнче Улай ятлă çын пурăннă. Улай пултаруллă пулăç, сумлă сунарçă пулнă. Ăна пурте пĕлнĕ, пурте хисепленĕ. Унăн мухтавлă ячĕ тавралăха сарăлнă.

Çак ялтан инçех мар пĕр пуян пурăннă. Ăна пурте улпут тенĕ, ятран чĕнекен никам та пулман. Çак улпут та Улай çинчен ырă сăмах сахал мар илтет. Улай сумлă. Пур çĕрте те ăна хакласçĕ, хисепе хурасçĕ. Улпут чĕринче те Улай пек пулас кăмăл хускалать, унăн чапне хапсăнать.

Мĕн тумалла? Мĕнле чапа тухмалла?

Улпут Улай çинчен ыйтса пĕлме шутлать. Сунарçă мĕнле ĕçпе пурăннине, мĕнле чĕр чунсем тытса чапа тухнине пурне те пĕлсе çитет. Лешĕ нихçан та упасене тĕкĕнмест иккен.

Улпут шухăшлать:

— Ку аван япала. Улай упаран хăрать пулас, çавăнпа та ăна тытма çӳремест. Апла пулсан, упа тытса хамăн чапа тухас пулать.

Кăштах шухăшласан улпут çапла тума шут тытать. Анчах та упа вăйлă та хăватлă, ăна хирĕç пĕр-пĕччен тухма çук. Урса кайсан утаман усал ĕç тума та пултарать. Улпутăн упа кулли пулас килмест. Ăна тытма ăста сунарçă, пултаруллă юлташ кирлĕ. Ун пек сунарçă пĕрре кăна. Вăл — Улай.

Улпут Улая хăй патне чĕнтерет.

— Улай, сана пурте мухтаççĕ: ăста сунарçă, теççĕ. Чăнах-и çак сăмах? — ыйтать Улпут.

— Ăсталăхĕ-мĕнĕ çук та, тĕл пеме пĕлкелетĕп, — тет Улай.

— Упа тытса курнă-и эсĕ?

— Упа тытса курман вара.

— Хăратăн-им унран?

— Хăрасса хăрамастăп та, йăхри йăлана пăсас мар тетĕп.

— Мĕнле йӑлана?

— Упа пирĕн йӑх пусĕ, йӑх тĕпĕ шутланать. Çавӑнпа та ман аттене те Упик тесе ят панӑ, аттен ашшĕ Упай ятлӑ пулнӑ. Вĕсем упана тапӑнман. Мана та йӑх тĕпне усал туни е ӑна хирĕçтерни усӑ тӑвас çук.

— Санӑн чӑнах та упа тытма юрамасть иккен, мана вара чару çук: эпĕ кашкӑр та, упа та тытма пултаратӑп. Шӑп кӑна çак уйӑхра сунара каяс тетĕп ак. Пыратӑн-и манпа пĕрле?

— Пымаллах пулсан пырӑп та, анчах та упа çине алӑ çĕклеме пултараймӑп.

— Пĕрле пырса пӑхса тӑни те çителĕклĕ, эпĕ хам та чаплӑ сунарçӑ, çак ĕçе санран та лайӑх пĕлетĕп. Пушӑ вӑхӑт çукки кӑна ку таранччен тытса тӑчĕ мана. Çак эрне вĕçĕнче хатĕрленсе кил — пĕрле сунара кайӑпӑр.

— Юрать.

Каланӑ — тунӑ. Эрне вĕçĕнче Улпутпа Улай сунара каяççĕ — упа тытма. Улпут малта, Улай хыçалта. Улпут, çул кĕскетме тенĕ пек, калаçса пырать, хӑйĕн пултарулӑхĕпе мухтанать. Улай унпа килĕшсе майлӑ сӑмах хушса пырать.

— Улай, эсĕ упа çывӑхне ан пыр!

— Юрĕ-юрĕ, патне те пымӑп.

— Эсĕ аякран кӑна пӑхса тӑр!

— Юрĕ-юрĕ, аякран кӑна пӑхса тӑрӑп.

— Пӑхасса вара питĕ лайӑх пӑхса тӑр, кайран вара мĕн курнине йĕрки-йĕркипе çынсене каласа парӑн.

— Юрĕ-юрĕ, каласа та парӑп.

Калаçса утсан çул хӑвӑртрах кĕскелет. Утсан-утсан хайхисем Упсар лаппине çитсе тухаççĕ. Улпут ула курак юррине юрласа пĕтерет те пĕр вӑхӑтлӑх шӑпланать. Улай, сунарта пĕччен çӳреме хӑнӑхнӑскер, калаçма питех ухата мар. Чĕнсен — чĕнет, чĕнмесен — сӑмах хушма та мансах каять. Асӑрханса утаççĕ. Сас тумасӑр утаççĕ. Кашни ура пусӑмне сыхланса пусаççĕ. Кун пек утса пыни Улпута йӑлӑхтарса çитерет.

— Эп упаран хӑрас çук, вӑл манран хӑратӑр, — тет вӑл.

Вара çĕнĕрен вĕçкĕн юррине пуçарса ярать. Улай итлесе пырать, нимĕн те чĕнмест. Хăйĕн шухăшне шухăшлать. Йăх тĕпне çиллентерсен мĕн пуласси çинчен, кайран ăна мĕнле çырлахтарасси çинчен шухăшлать. Улпут каллех шăпланать.

Сасартăк... Улпутпа упа пĕр-пĕрин çине пырса тăрăнаççĕ. Сехре хăпса тухнипе иккĕшĕ те пĕр харăсах уласа яраççĕ те ик еннелле упаленсе тараççĕ. Ку ĕç питĕ хăвăрт пулса иртет. Улай, мĕн пулса иртнине куçпа курса ĕлкĕрейменскер, малтанлăха ним тума пĕлмесĕр хытса тăрать. Хытамак чирĕ пырса çапнă пекех хытса каять. Кĕçех мĕн пулса иртнине чухланă пек пулса вырăнтан хускалса йĕри-тавра пăхкалама тытăнать. Умра икĕ йĕр: пĕри улпутăн, тепри — упа йĕрри. Иккĕшĕ икĕ еннелле уйрăлса кайнă. Куç умĕнче пĕри те çук.

Улай кăшкăрса чĕнет:

— Улпут! Улпут!..

Ахрăм анчах илтĕнет:

— Ут... Ут...

Ахрăм та утма хушать пулсан утасах пулать. Улай Улпута шырама тытăнать. Шырасан-шырасан çăмламас чараннă вырăна пырса тухать. Анчах та мĕн тăвать-ха услап утаман?

Курас пулсан кулса вилĕн: утаман пĕр йывăç çумне тӳртен тăнă та хыçкаланса хыçне тасатать. Утаманăн сехри хăпнипе хайхи чир пуçланнă-мĕн, ирхине çикеленĕ апачĕ юхса тухнă.

Улайăн куласси те килет, анчах та йăх тĕпне çиллентерме юрамасть — темрен тем сиксе тухма пултарать. Улай куллине пусарса хуллен-хуллен каялла чакса пырать те тепĕр еннелле утса каять. Унăн çухалнă Улпута шыраса тупмалла. Шырать-шырать — ниçта тупаймасть. Шыв ĕçес килнĕрен анаталла утма тытăнать. Утсан-утсан шыв хĕрне çитсе тухать. Çухалнă Улпут пĕчĕк шыв хĕрринче тăра парать. Анчах та мĕн ĕçпе айкашать Улпут тенĕскер? Курсан

кулса вилĕн çав: мухтавлă Улпут аялти йĕмне хывнă та шыв юххинче чӳхесе тăрать. Йĕм чӳхенĕ чухне юхăм шывĕ сап-сарă курăнать. Улпут хуçана та «упа чирĕ» лекнĕ иккен.

Улайăн каллех кулас килет, анчах та улпут умĕнче аван мар — лешĕ кӳренме те, çилленме те пултарать. Улай кулас килнине пусарса каялла чакса-чакса пырать те киле майăн уттарать.

Улай Улпут хушнине пурнăçласа вăрманта мĕн-мĕн пулса иртнине йĕрки-йĕркипе çынсене каласа парать. Улпут пирки тавралăха «усал чап» сарăлать. Çак сăмахсем ун хăлхине те пырса кĕреççĕ. Улпута «чап» килĕшмест. Вара вăл чысне упрас тесе ят яракан Улая суд умне тăрататать.

Суд тăвакан тӳре Улайран ыйтать:

— Улпут çинчен мĕншĕн усал сăмах саратăн? — тет.

Улай калать:

— Улпут мана упа тытма каяс умĕн мĕн курни-илтни çинчен йĕрки-йĕркипе çынсене каласа пама хушнăччĕ, — тет.

— Çапла пулнă-и, Улпут? — тет тӳре.

Улпут ним те чĕнеймест.

Каçарнă вара Улая — тĕрмене хупман.

Улай пурăнать пулсан улпут мыскарине халь те пулин çынсене каласа çӳрет пулĕ-ха.

## ӲПРЕПЕ ШĂНА

*Юмах*

Аслă-ирĕк уçлăхра Ӳпрепе Шăна тĕл пулаççĕ.

Вăрăм курăк туни çине ларса вĕсем калаçу пуçласа яраççĕ.

— Мĕнле пурăнатăн, Ӳпре тусăм? — тет Шăна.

— Ӳпкелешме сăлтав çук, — тет Ӳпре хул пуççине сиктерсе.

— Мĕншĕн апатлă вăхăтра ӳт хушмастăн? — тĕпчет Шăна.

— Ӳт хушни кирлех те мар мана, — хуравлать Ӳпре, — вăрăм ĕмĕр пурăнакан йышши мар вĕт эпĕ. Ӳпресен мехелĕ

çавăн пек: малтан мăшăр тупса пĕрлешмелле, кайран туй туса çăмарта хывмалла та — ĕçĕ те пĕтнĕ! Урăх мĕн туса пурăнмалла?!

Кăштах канса илсен Ӳпре ыйтма тытăнать:

— Мĕнле пурăнатăн, Шăна тусăм? — тĕпчет вăл.

— Пурнăç начар теме çук сивĕ кунсем çитиччен, вăй çитнĕ таран ĕрче те ĕрче!

— Ĕрчевлĕ йăх эппин эсир?

— Мĕнле каламалла — ĕрчеме пит аван пĕлетпĕр. Юратьха пĕр пуслăхра тăхăр вун тăхăр çăмарта кăна хыватăп, эхер те çĕр çăмарта хывас пулсан — Çĕр чăмăрĕ çур уйăхрах тулса лармалла. Шăна йышĕ шутсăр ĕрчевлĕ! — мухтанса илет Шăна.

Чăнах та, шăнасем шутсăр ĕрчевлĕ: вĕсем хăйсен шутне хăйсем те пĕлмеççĕ. Вĕсен йышне электронлă шутлав машини çеç тĕп-тĕрĕс калама пултарать. Ӳпре çакна илтсен тĕлĕнсех каять.

— Ытла ан тĕлĕн, Ӳпре тусăм, — тет Шăна, — сивĕ кунсем пуçлансан шакăрах пĕтетпĕр эпир.

Эх, мĕн чухлĕ тĕлĕнтермĕш тĕнчере!

## ЧĔРĔП ЧĔППИ*

*Калав*

Ачасем вăрмантан таврăнаççĕ. Унта вĕсем чĕрĕп чĕппи тупнă иккен. Пĕри çав йĕплĕ чуна киле илсе килес тенĕмĕн.

Мана курсан ачасем пат чарăнчĕç. Эпĕ хуллен кăна вĕсем патне пырса тăтăм.

— Ачасем, вăрман кучченеçĕ мар-и ку?

— Ку вăл амăшне çухатнă чĕрĕп чĕппи-ха, — терĕ йĕплĕ çăмхана тытса тăракан ача.

— Мĕн тăвас тетĕр-ха пĕчĕкскерпе?

---

* Хăш-пĕр чăвашсем чĕрĕп çурине чĕрĕп чĕппи теççĕ.

— Пурӑнса пӑхтӑр пирӗн пахчара терӗмӗр.
— Ҫапах пурӑнаймӗ вӑл унта...
— Мӗншӗн?
— Мӗншӗн тесен эсир ӑна пӑхма та, ҫитерме те пӗлместӗр.
— Вӗренетпӗр.
— Вӗренесси те ҫӑмӑл мар. Кун пек ӗҫ вӗреннӗ ҫынсемшӗн те кӑткӑс.
Ачасем ним калама та пӗлеймерӗҫ.
— Ҫамрӑк тусӑмсем, — тетӗп малалла, — аннӗрсемпе аҫӑрсем пур-и сирӗн?
— Пур! — теҫҫӗ ҫамрӑк сасӑсем.
— Ҫухатса курнӑ-и вӗсем сире?
— Ҫук, нихҫан та ҫухатман.
— Сывӑх ҫынна ҫухатасси ҫӑмӑл мар. Тӑван ачана ҫухатасси тата йывӑртарах. Ҫавӑнпа та манӑн ҫапларах сӗнӳ пулать: чӗрӗп чӗппине ӑҫтан тупса килнӗ, ҫавӑнтах кайса ярӑр, унсӑрӑн ҫут ҫанталӑкра тепӗр инкек пулма пултарать.
Ачасем ман сӑмаха ӑнланчӗҫ — вӑрманалла ҫул тытрӗҫ.

## АРӐСЛАНСЕМ ПИРӖН ТАВРАРА МӖНШӖН ҪУК?

*Юмах*

Таканай тӑвайккинче таканлӑ Лаша ҫӳренӗ. Кӗтмен ҫӗртен ун умне Арӑслан тухса тӑрать. Таканлӑ Лаша сехри хӑпса тухас пек хӑрасан та хӑй шикленнине палӑртмасть. Тулхӑрса ярать те:
— Кам эсӗ? — тесе ыйтать ҫилхеллӗ чӗр чунран.
— Эпӗ — чӗр чунсен патши, эсӗ ху кам пулатӑн?
— Эпӗ — выльӑхсен патши. Манран аслӑ выльӑх ҫӗр ҫинче те урӑх ҫук.
Арӑслан выльӑхсен патши ҫине ҫиллессӗн пӑхкаласа илет, ҫапах та тепӗр хут тулхӑрса:
— Эпӗ пурпӗрех санран аслӑрах! — тет.

— Çук, эпӗ аслăрах!

Вӗсем çапла нумайччен тавлашаççӗ. Юлашкинчен таканлă Лаша калать:

— Тавлашнипе ӗç тухас çук, вăйсене виçсе пăхар, — тет.

— Юрӗ, — тет Арăслан ăна, — анчах мӗнпе виçӗпӗр?

— Ак çапла, — ăнлантарать таканлă Лаша. — Кам та кам урапа тапса чулран çулăм е хӗлхем кăларма пултарать, çав çӗнтерӳçӗ пулать.

Арăслан килӗшет. Малтан хăй вăй кăтартма хатӗрленет. Анчах та вăл темле хытă тапсан та, чулран çулăм тухни курăнмасть.

Ун хыççăн таканлă Лашан черечӗ çитет. Вăл пӗрре кăна таканлă урипе чул çине тапса илет — хӗм сирпӗнсе те тухать.

— Куртăн-и ман вăя? — кӗçенсе илет Лаша.

Юлашкинчен тата çапла каласа хурать:

— Малашне ку таврара сан шăршу-маршу та ан пултăр!

Çакăн хыççăн Арăслан хăранипе кăнтăр еннех куçса каять. Урăхран арăслансем ку енне килсе çӳреме пăрахаççӗ.

## КАÇХИ КАЙĂК

*Юмах*

Авалхи çынсем çав тери аптраса çитнӗ: вӗсен ялне каç пулттипе куçа курăнман тӗлӗнмелле кайăк килсе çӳрет иккен. Вăл тӗттӗмре те кăнтăрлахи пекех лайăх курать, хăйне кирлӗ çӗре сас тумасăр, систермесӗр пырса тухма пултарать. Çав курăнман кайăкăн тӗлӗнмелле йăли пур тата: кам патне те пулин пырса тухсан унăн куç хăрпăкӗ çине çеç ларать — куççем вара хуллен-хуллен хупăнма тытăнаççӗ. Çын çав самантрах çывăрса каять.

Ăçтан килсе тухать çав кайăк — ăна никам та курман. Ăçта кайса çухалать кайран — ун çинчен те пӗлмеççӗ. Пӗлменлӗх çынсене тӗлӗнтернӗ те, хăратнă та.

Çынсем ирĕн-каçăн çав кайăк çинчен кăна калаçма тытăнаççĕ. Мĕнле тытмалла-ши ăна? Ваттисем пухăнса канашлаççĕ те хурал тăма сăмах тытаççĕ. Çав каçах вичĕ паттăра хурала тăратаççĕ.

Тĕттĕмленме тытăнсанах виçĕ паттăр вăрăм сăнăсем тытса ял вĕçне пухăнать.

Сăмах чĕнмесĕр шăпланса тăраççĕ хайхисем. Курăнми кайăка хăратас мар тесе хыттăн ӳсĕрме те шикленеççĕ.

Тавралăх сĕмлĕхпе хупланать. Шăп. Никам килни те курăнмасть, никам утни те илтĕнмест. Вăхăт шăвать. Ерипен-ерипен хурал тăракан паттăрсен куçĕсем хупăнма тытăнаççĕ. Пĕрремĕш паттăр сĕнксе тăрать-тăрать те йăванса каять. Ун хыççăн иккĕмĕш паттăр та хăй сисмесĕрех çĕр çине тӳнет. Виççĕмĕш паттăрăн та куç хăрпăкĕсем йывăрлансах пыраççĕ. Вăл пĕр-икĕ хутчен куçне мăчлаттарса илет те пĕтĕм саспа:

— Тытрăм хайхине! — тесе кăшкăрса ярать.

Куçне уçса пăхать — никам та çук аллинче.

Тепĕр каçхине курăнми кайăка сыхлама тата пысăкрах йыш тухать. Çĕр каçипе чăлăм куç хупмасăр хурал тăраççĕ маттурсем. Анчах та усси пулмасть — тытаймаççĕ никама та.

— Ых-х, çав кайăка! — тарăхса калать пĕри.

— Ыххă ятлă им-ха вăл? — тĕлĕнсе ыйтать тепри.

— Ыххă-и, ыйхă-и, пурпĕрех никама та тыттармасть, — хушса хурать виççĕмĕш. Çапла майпа кайăка ЫЙХĂ ят параççĕ.

Ячĕ халĕ те пурăнать, анчах кайăкне халиччен те никам та тытайман.

## КАЧАКАПА ХĔР АЧА

*Юмах*

Ака вăхăчĕ иртсе кайнă ĕнтĕ. Ана çинче калчасем вăй илеççĕ, васкасах çӳлелле туртăнаççĕ.

Вăрман хĕрринче çамрăк хĕр ача качака çитерсе çӳрет. Качаки ун, каскăнскер, пĕрре те вырăнта тăрасшăн мар: унталла та кунталла вĕтĕнсе çӳрет — нимле асăрхаса ĕлкĕрме çук. Вара çамрăк хĕр ача, ним тума пĕлмен енне, качакине кăкарса хурать те алă вĕççĕн çитерме шутлать.

— Мекекек, мĕн парас-ха ман сана? — ыйтать хĕр ача.

— Ăвăс çулçи татса пар! — тет лешĕ.

Хĕр ача ун умне ăвăс çулçи хурса парать.

— Ăвăс çулçи майлă мар, вĕрене çулçи татса пар! — тет каскăн чун.

Хĕр ача ун умне вĕрене çулçи хурса парать.

— Вĕрене çулçи майлă мар, çăка çулçи хурса пар! — тет çураçусăр выльăх.

Хĕр ача ун умне çăка çулçи хурса парать.

— Çăка çулçи майлă мар, хурăн çулçи хурса пар! — кутăнлашать качака.

Хĕр ача ун умне хурăн çулçи хурса парать.

— Хурăн çулçи майлă мар, урăххине хурса пар, — чăркăшать лешĕ татах.

Хĕр ача аптрасах çитет, мĕн хурса парам-ши тесе йĕритавра пăхкаласа илет. Инçех те мар йĕплĕ курăк — тикенек ӳснĕ. Ăна вĕсен ялĕнче кашкăр йĕппи теççĕ. Чăнах та, йĕпписем тутана тăрăнас пулсан кашкăра та хăратма пултараççĕ.

Хĕр ача тиркевçĕ качака умне тикенек хурса парать.

Качака йĕплĕ курăка хыпса пăхать те каялла сурса пăрахать.

— Тинех çисе тăрантăн-им? — йĕплесе ыйтать хĕр ача.

Тиркевçĕ нимĕн те чĕнмест — тикенек йĕппи аванах тăрăннă пулас унăн чĕлхине.

— Тиркекен качакана тикенек йĕппи! — тет хĕр ача амăшĕн сăмахне аса илсе.

## КУЯНПА ЧĔРĔП

Куян хăйĕн тусĕнчен
Кулса ыйтнă пĕринче:
— Эсĕ, тусăм, мĕн тесе
Ӳстеретĕн чĕр йĕпсем?

Чĕрĕп, чунĕ çемçерен,
Хуравланă чĕререн:
— Йĕплĕ эпĕ ачаран
Тăшман шăллă пулнăран.

## ТИЛĔПЕ ЧĔРĔП

Сарă Тилĕ Чĕрĕпе
Шухăш тытнă чĕпĕтме:
— Чĕрĕп тус, эс чĕрĕ пек,
Çакас мар-и типĕтме?

Чĕрĕп тус чее Тилле
Ăс çитерне йĕплеме:
— Тилĕ тус, сана кӳлле
Ямалла пек ислетме!

Малтан мала, маттурсем,
Хăюлăхра ăнăçу.
Пуçра ăс-хал пуррисем
Сăмах айне пулас çук.

## ТИЛĔПЕ ÇЕРÇИ

Турат çинчи Çерçие
Тилĕ калать астарса:
— Вĕçсе ан та çĕр çине
Тутă пĕрчĕ сăх ларса.

Тилĕ туса тилĕртсе
Çерçи калать хăй шутне:

— Вĕшле йытта илĕртсе
Чĕнсе кил-ха сых ятне.

Ырă шухăшлă чĕре
Тем тума та пултарать,
Пултарайман чĕмере
Хăйĕнчен çеç култарать.

## ПАКШАПА ШАПА

Пакша каять шурлăха —
Лакса ларать шурлăха:
— Ман вырăн мар шурлăхра —
Ман телейĕм хырлăхра.

Шапа каять хырлăха —
Лакса ларать шурлăха:
— Ман вырăн мар хырлăхра —
Ман телейĕм шурлăхра.

Мала ярса ăслăха
Пĕлтерем-и чăнлăха:
Кам çуралнă ăçтарах —
Уншăн çав çĕр пахарах.

Çуралса кун курнă çĕр
Çунса тăран вутпа пĕр:
Çуттине те вăл парать,
Ăшшине те вăл парать.

## ВĔШЛЕПЕ ТИЛĔ

Вĕшле йытă суйланса
Сăмах ваклать Тилĕпе:
— Çĕр çул тăрăп сыхласа —
Тумна хывса илĕпех.

Сарă Тилĕ Вĕшлене
Ак мĕнлерех хуравлать:

— Вĕшле тулнă тĕнчене —
Кашни мана хураллать.

Эс вĕт ăслă йытах мар —
Сан пек йытă ял тулли.
Мана кĕтсе ан та лар —
Ан пул, тусăм, ял кулли.

Вĕшле çакна илтет те —
Куç умĕнчен çĕтет тет.
Çавăн пек вăл: тепĕр чух
Çавра сăмах питĕ чух.

## ТИЛĔПЕ КУРАКСЕМ

*Юмах*

Пĕррехинче,
Пĕр салхуллă ир çинче,
Тилĕ тус тухать те йăвинчен
Тилĕрсе çӳрет хал пĕтиччен.
Унта пырать — нимех те çук,
Кунта пырать — нимех те çук!
Ăçта кайса мĕн тумалла,
Ăçтан апат ун тупмалла?
Сунар ăнса пыман енне
Чупса анать тип вар тĕпне.
Вар тĕпĕнче мĕскер курать?
Какай татки çĕрсе выртать.
Шăршиййĕ сăмсана çурать —
Ку аш мĕскер тума юрать?..
Тилле айван шутне ан хур,
Унра чеелĕх тени пур.
Ак вăл кăштах ларса уйлать,
Мĕн кирлине часах тупать.
Вăр-вар кăна лăс хӳрине,
Вар-хырăмне, урисене

Аш таткипе сёрсе тухать,
Хайне виле шăрши çапать.
Шутланине тусан вара
Çыран хĕрне вăл хăпарать,
Тӳпем çĕре тухса выртать,
Телей кĕтсе куçне хупать.
Кĕçех усал шăрша сиссе
Вĕçсе килеççĕ кураксем.
Кураççĕ Тилĕ выртнине,
Сырса илеççĕ «мĕскĕне».
Тилли çавна анчах кĕтет,
Вăл хăй ĕçне аван пĕлет:
Самăртарах пĕр куракне,
Çăвар патнех çывхарнине,
Ярса тытать вăл кап! кăна.

Тилле айван шутне ан хур,
Унра чеелĕх тени пур.

## ИКĔ СЫСНА

*Юмах*

Каç килсессĕн катаран,
Капăр уйăх хăпарсан,
Самăр туссем тĕл пулса
Сăмахланă йăл кулса.

— Ăслă-пуçлă Сысна кум,
Ăçта пултăн паян кун?
— Сулхăнпала эп, ара,
Суха турăм пахчара.

— Ĕçне хака хучĕç-и,
Уншăн тӳле пĕлчĕç-и?
— Паттăр тесе мухтарĕç —
Патакпала чысларĕç.

— Май килнĕ чух кала-ха,
Ма патакĕ лекрĕ-ха?
— Чапрас куҫпа пăхнăран
Чалăш пулчĕ пĕр йăран.

— Апла пулсан эс унта
Ан кай урăх нихҫан та.
— Каймалла-ха, каймалла,
Касă туса памалла.

Хуть ăҫта та ĕҫ ҫапла —
Ху йăнăшна ху сапла.
Эсĕ тата, хаклă кум,
Ăҫта пултăн яра кун?

— Услапланса лармарăм —
Улăм ури салатрăм.
— Сума сума пĕлчĕҫ-и,
Сумлăх укҫа пачĕҫ-и?
— Туянтарчĕҫ пуймалăх —
Туя хакне туймалăх.

— Апла пулсан эсĕ те
Ан кай унта ĕмĕрне.
— Палкатăн ҫав пайтасăр —
Епле чăтас каймасăр!

Калаҫăва вĕҫлесе
Калас килет тĕплесе:
Самăр ӳтлĕ сыснасен
Сапăрах мар йăлисем.

## ХУРА КУШАК

*Шӳт*

Хура хăрăм пек кушак
Пирĕн пур.

Шăшисем тытма хушсан
Пит маттур!
Вăл пулас пулсан ула
Кăшт кăна —
Шав кăларăттăм тула
Эп ăна.
Анчах пирĕн кушакки
Тĕм хура,
Çук та пулĕ ун пекки
Таврара.
Каç килсессĕн катаран,
Тĕттĕм чух,
Йĕп чиксен те куçăмран
Курма çук.
Çавăнпа та каç килсен,
Тĕттĕм чух,
Кушак тусăм çĕтесрен
Чунăм çук.



## ĂСЛАВСЕМ

Алла кашăк тытма кăна туман.
Ăсан тытма та ăс кирлĕ.
Вак умĕнче витре те кирлĕ.
Вĕренмесĕр вĕрен те явма çук.
Ёмĕт хыççăн ĕçлĕх пултăр.
Илем вăл пурне те илĕртет.
Каламан сăмахăн кăлтăкĕ çук.
Лайăхран лайăх пахалăх пулать.
Малтан мала пăхакан маттур пулать.
Океан — юхан шывсен аслашшĕ.
Пурнăç пурăнма пурте кирлĕ.
Сăмахпа калани ĕçпе çыхăнтăр.
Çичĕ сăмах каличчен çивчĕ сăмах кала.
Тет хысĕнче терт нумай.
Ӳркеннипе ĕç пулмасть.
Хаклă таварăн хакĕ хулăн.
Чăх чĕппин те чĕри пур.
Шухăш пуçа шуратать.
Ырă çын ылтăнран мала.

Элексĕ эмелпе тӳрленмест.
Юратма пĕлни юрлăх мар.
Япăх ĕçпе ят вараланать.

### А

Алă усса ларакан асаплăхран тухайман.
Аллăмра ман кĕнеке анлă çула чĕнекен.
Алмаза алмазпа касаççĕ, алмаз хакне чухлаççĕ.
Алмаз асапсăрах тупăнмасть.
Алра тикĕт пур тесе ан варала шур тĕсе.
Ана пулмĕ йăрансăр, арçын пулмĕ сурансăр.
Анне-атте пур çинче асап çуккă пуç çинче.
Анне панă ĕмĕре ан чăмлатăр чĕмере.
Ансатлăха суйлакан асаплăхран тухайман.
Ансăр сукмакпа утан, анлă çул çине тухан.
Анчăк йăваш тенĕрен ан йĕкĕлте вĕçĕмрен.
Архасланать айван чун ахах çине пăхнă чух.
Асăрханма пĕлсессĕн асаплăха лекместĕн.
Атăл çине пăхатăн — атте сăнне куратăн,
Атăл çине пăхатăн — атте чунне туятăн.
Ачи пирĕн ачаш мар, ачашсемпе туслă мар.
Ашапатман пурăнать — ашсăр чун пек курăнать.
Аякри вăл астарать — аяк пĕрчи хуçтарать.

### Ă

Ăнăçусем кĕтме çук ăс çывăрса выртнă чух.
Ăсан тытмалăх та ăсĕ çук.
Ăссăр çынпа ăсла ĕçме те хушмаççĕ.
Ăста этем мĕн тăвать? Ăшталанса ĕç тăвать.

### Б

Бак-бак, бак пултăр,
Бакра таса шыв пултăр.

**В**

Вараланчăк пĕр тĕве варлать пĕтĕм кĕтĕве.
Вăййа ан пăс вăйханса —
Ватти тăрать сăнаса.
Вăййа тухсан хăраххăн вăхăт иртет вăраххăн.
Вăрăм чĕлĕ алра чух выçлăх аса килес çук.
Вăхăчĕпе чĕмлĕ пул, вăхăчĕпе чĕмсĕр пул.
Вĕршĕн вĕçет вĕрхĕнсе, вĕçкĕн вĕçет иртĕхсе.
Вĕренмен çын асаплă, вĕреннĕ çын сăваплă.
Вĕçес килсен — вĕç, вĕçесси те аван ĕç.

**Г**

Ген пăсăлса пĕтнĕ чух
Генерал пулма май çук.

**Ж**

Жираф хĕрсе чупнă чух жигули те çитес çук.
Журнал алла тытатпăр — «жу-жу» тесе вулатпăр.

**И**

Иккĕн иккĕнех,
Иккĕн çул та кĕскерех.
Икĕ питлĕ этеме
Илемлĕ мар çын теме.
Инке килет — алăк уç,
Инкек килет — хапха уç.
Ирĕклĕ çын ир тăрать,
Ир тăрать те ĕç тăвать.
Ирпе ирех тăракан —
Икĕ ĕмĕр пурнакан.
Ирĕк халăх — çиçĕм вут,
Иртĕхеймĕ çичĕ ют.
Ир тăракан — ирĕклĕ,
Ир тăманни — кирĕклĕ.

## Й

Йăла-йĕрке пăсатăн —
Йăлмак анчах тупатăн.
Йĕплĕ сăмах — йӳçĕ сăмах.
Йĕпрен йĕлтĕр тума çук,
Йĕрсе хурлăх иртес çук.
Йĕпе çумăр çунă чух
Йĕпенмесĕр пулас çук.
Йывăр ĕç мар — чăмасси,
Йывăр — чăмса тухасси.
Йышпа пĕрле ĕçлетĕн —
Йывăрлăха çĕнетĕн.
Йышпа çине тăратăн —
Йывăрлăхран тухатăн.

## К

Калак хаклă акара — кашăк хаклă апатра.
Каласан — çынна йывăр,
Калас мар — хама йывăр.
Карăнса вĕрет Кампур — картишĕнче такам пур.
Каçа хирĕç кашкăр та качакана вашкăртать.
Качăр-качăр качака кĕресшĕнех пахчана.
Кашни çыннăн хакĕ пур, хакне кура сумĕ пур.
Кашни çыннăн ĕçĕ пур, кашни ĕçĕн вĕçĕ пур.
Кĕнекере ăслăх пур,
Кĕрекере чыслăх пур.
Кĕтне çынни калашле, кĕтмен инкек малашне.
Килнĕ хăнан каймалла,
Килне çитсе канмалла.
Килте йĕрсе лариччен кулса çӳре йыш çинче.
Килях! — теме йăла пур,
Каях! — теме йăла çук.
Кулянсан та хĕрĕх çул
Куян шиксĕр пулас çук.

Купӑстана курсанах куян кулать сасӑпах.
Курманнин курас килет, курнин тарас килет.
Кушак кулать шӑширен лешӗ питӗ шиклӗрен.
Куян ларать кулянса
Куҫӑхасран вӑтанса.

М

Майлӑ пурнӑҫ — чун уҫҫи, май пур чухне ӗҫ те ҫи.
Май ҫук усал этеме май ҫук ырӑ ҫын теме.
Малтан мала пӑхакан — мал ӗмӗтне тупакан.
Мамак-маҫак ырлӑхне
Манаймастӑн ӗмӗрне.
Ма мухтас мар Мускава — Мускав тивӗҫ мухтава!
Маттур ача сӑпайлӑ,
Маттур сахал сӑмахлӑ.
Мускав енче мул хаклӑ, мул хаклӑ мар, шут хаклӑ.
Мухтансассӑн ытлашши Мускав пиртен кулмӗ-ши?!

Н

Наянпала кахала
Намӑспала пахала.

П

Павӑл ташлать пит ӑста —
Пӑхса тӑма намӑс та!
Пакша тепӗр пакшана паллать пӗрре курсанах.
Пархатарлӑ Ҫӗр ҫинче
Пулма тивӗҫ пӗр тӗнче.
Патак тытсан пит ан вӗҫ — патакӑн пур икӗ вӗҫ.
Пӑтӑ ҫуллӑ пулнӑран
Пӑсӑлас ҫук нихӑҫан.
Пӗлсе ҫырнӑ кӗнеке —
Питӗ сумлӑ кӗреке.
Пӗрре анчах ҫуралан,

Пĕрре анчах çухалан (вилетĕн).
Пилĕк пуслăх çăпала питĕ кирлĕ япала.
Пулă та пуш вăлтана
Пырса хыпма вăтанать.
Пулă тытма пуç кирлĕ, пурнăç тума тус кирлĕ.
Пурăнатпăр пурнăçа,
Пулă тетпĕр караçа.
Пур чухне выля та кул — пурнăçран кая ан юл.
Пусă чавма вăй кирлĕ, пуç упрама ăс кирлĕ.
Пуç тайсан та хĕрĕх çул
Пуç татăлса ÿкес çук.

## С

Савăнсах утан çуран савнă тус пулсан çумра.
Сăвай пултăр тĕреклĕ, сăмах пултăр сĕтеклĕ.
Сăлтавсăрах ват Çăхан
Сас парас çук нихăçан.
Сăмахпа вылянăран слон пулать те шăнаран.
Сăмах паман — хыт,
Сăмах парсан — тыт!
Сăпка юрри мĕскер вăл? Сĕм авалхи юрă вăл.
Сиплĕ курăк пултăран
Симĕс тĕслĕ пулнăран.
Сывлăха куç пек упра,
Сывлăх — хаклă мул, тупра.

## Ç

Çавра сăмах аванрах, çавра çăмах тутлăрах.
Çавра тĕнче çаврăнать, çамрăклăха çул парать.
Çăмăлттайăн çăмăл ĕç,
Çиле майăн вĕç те вĕç.
Çĕлен çукран тĕнчере
Çилленес çук пĕр чĕре.
Çирĕм сăмах каличчен çирĕп кала пĕр хутчен.
Çурри кĕтмелле — çурри пĕтмелле.

Çу-çу! тенĕрен çу çăвас çук тӳперен.
Çут çанталăк ырă чух
Çырла пухма питĕ чух.

## Т

Тавăт тухнă урама
Тапăртатса ташлама.
Тавлашсан та тăват çул
Така сурăх пулас çук.
Тавăт пичче темерĕн, тав тума та пĕлмерĕ.
Тăвансем — тăвар касна ыр çынсем.
Тăла пустав пулас çук,
Тăшман ырă тăвас çук.
Тăмсая ăс париччен тăм çăр халтан кайиччен.
Телей, телей тенĕрен телей ӳкмест тӳперен.
Тертпе пулни, тупата, техĕмлĕ те, тутлă та.
Тĕлĕнтермĕш тĕнчере тĕрлĕ пулать кĕнчеле.
Тилĕ хăрать чĕрĕпрен тирĕ ытла йĕплĕрен.
Тумлантарсан кирлĕ пек тунката та пике пек.
Туслă çынпа утатăн —
Ту урлă та каçатăн.
Ту çӳреме тус кирлĕ, тусран ытла ăс кирлĕ.
Тӳсĕм пур чух ĕçлетĕн, тӳсĕм пĕтсен тӳнетĕн.

## У

Уйласа пăх пин хутчен урлă сăмах каличчен.
Уйра ӳсен ут кăшкар
Ут çитерме япăх мар.
Укçа пур — эс те патша,
Укçа çук — эс те кукша.
Урам урлă каçасси —
Утмăл утăм тăвасси.
Утмăлтурат тымарне
Ут тутанмасть ĕмĕрне.

**Ӳ**

Ӳркенес пулсан малтан —
Ӳкĕнме тивет кайран.

**Х**

Халăх пулсан пĕр кавар
Хур тăваймĕ юнлă çар.
Хал çитсен хаваслӑ пул, халăхран анчах ан кул!
Хăватлă ĕç тăватăн —
Хăвăн хакна туятăн.
Хайне хаклан пӳремеч
Хырăм хыççăн çӳремест.
Хĕвел тухмасть тухăçран хĕрлĕ автан хушнăран.
Хĕм сапсан та хăвна ху хĕвелсен шутне ан хур.
Хулăн укçа тупатăн —
Хусан хуçи пулатăн.
Хуть те çурăл, хуть те çун — хутран хурçă тума çук.
Хура тĕслĕ пулнăран
Хурланас çук хурлăхан.

**Ч**

Чăваш мансан чăвашла
Чăннипех те кулăшла.
Чăвашлăхра чăнлăх пур,
Чăнлăхра чăвашлăх пур.
Чăваша кăларчĕ вăл чапа.
Чăнлăхпа хăватлă çын Чапай.
Чул касмалăх вăй пур чух
Чухăн теме сăлтав çук.
Чăн юрату çуралать — чечек пекех туйăнать.
Чăваш ятне ярас мар, чăлах чунлă пулас мар.
Чăрăш йĕппи пурçăн мар, чăркăш этем ыр çын мар.
Чĕрĕп йĕплĕ ĕлĕкрен
Чĕрĕ пулас килнĕрен.

Чĕри чул пек пĕрисен, чул чĕреллĕ теприсем.
Чун-чĕрере кам ячĕ — чĕлхере те ун ячĕ.
Чулхулара чул хаклă, чул хаклă мар — чун хаклă.

**Ш**

Шăпăрпа вылянă чух шăп ларни те питĕ чух.
Ши кайрăм та пи кайрăм — шитти ҫинче ҫĕр касрăм.
Шурă юр пек шурă хур,
Шур хурăн та хури пур*.
Шутламан чух шухăш ҫук,
Шухăшласан — вĕҫĕ ҫук.
Шӳтлĕ шухăш пит кăварлă —
Шӳтлĕхре те пур ытарлăх.

**Ы**

Ывăнма пĕлмест ура —
Ыр тĕллев пулсан умра.
Ытар мучи каҫашле, ыр курасси малашне.
Ыраш паллă ĕлкинчен,
Ыр ҫын паллă ĕҫĕнчен.
Ырă ĕҫпе пурнатăн — ырă ятна упратăн.
Ырă сăмах калатăн —
Ытарлă ĕҫ тăватăн.
Ыр ҫынсем те ыраҫҫĕ,
Ырсан — выртса канаҫҫĕ.

**Ю**

Юлташ пулсан ырă тус — улталаймĕ чее юс.
Юптаруҫĕ юптарать —
Юп курмалăх ăс парать.
Юрайман тет пурне те юрă-кĕвĕ ăсти те.
Юрайман тет пурне те

---

* Хури пур — кăлтăк е ҫитменлĕх пур. Халăх сăмахĕ.

Юсав пике — Хĕвел те.
Юрай сăри ĕҫнĕрен юрлас килет вĕсĕмрен.
Юратмасăр юрăç ҫук,
Юрламасăр пурнăç ҫук.
Юратсассăн ыр курма,
Юрат ҫынна ыр тума.
Юратсассăн хуҫине
Юратанах йыттине.
Юрла пĕлен ыр чĕре
Юрлă мар ҫут тĕнчере.

## Я

Ялан яту пулнă чух
Ялти вата ятлас ҫук.
Ялан япăх пулас мар,
Ял-йыш ятне ярас мар.
Яш вăхăтра ял пек пул,
Яшлăх иртсен хăв пек пул.
Яшлăх пĕрре килет вăл,
Яштах иртсе каять вăл.



# ФИЛОСОФИ ПĔРЧИСЕМ

## ĂСЛĂХ КУРКИ

Ăслăх куркине алла илетĕн,
Тутлăха кĕтсе тăрать тута.
Астивсе пăхатăн та — сисетĕн:
Йӳçĕ ват анчах иккен унта.

## ВĂЙ — ХАЛĂХРА

Уйрăм çын вăй-халĕ халăхра,
Унпала пĕрле пул ĕмĕрех, —
Тĕп тымар кайсассăн тарăнрах
Йывăççи те пулĕ çирĕпрех.

## ЙĂНĂШСЕМ ПИРКИ

Йăнăшма пултарать ĕçлекен —
Вăхăтра тӳрленмешкĕн вĕрен.
Пытарса пурăнсан йăнăша
Сарăплатăн анчах тус-йыша.

## ЙЁРСЕМ

Тёрлёрен йёрсем выртса юлаççё
Çёр çине çуралнă этемрен:
Ырă çын йёрне хака хураççё,
Улах çул ултавлă ёлёкрен.

## КАНАШ ПИРКИ

Канаш пама та ирёк пур,
Канаш илме те ирёк пур.
Канаш паран çынна итле,
Анчах ху пёлнё пек шитле.

## ВЁРЕНЎ

Çăмăл маршăн вёренме
Кам пултарё кўренме?
Вёренмешкён йывăр пулнăран
Çăмăллăн утатăн пурнăçра.

## ПАЛĂК

Уçма пёлсен çён алăк
Наука çуртёнче —
Алпа туман чăн палăк
Хăварăн çёр çинче.

## ХЁМ

Еплерех урсан та Хёл хăна,
Сив Хёле çёнтерё Çуркунне.
Çав чăна пёлсе тăни кăна
Хём парса тăрать этем чунне.

## ТЎПЕ МУЛЁ ПИРКИ

*Шўт*

Кашниех çўл тўперен
Çăлтăрсем татса илсен эпир,
Çўл тўпемёр теплерен
Пулса юлмё-ши пуш хир?

## ХӖЛ КУҪҪУЛӖ

Кап! кап! тумла ҫӗре ӳкет —
Сив мучи йӗрет тумне хывса:
Хӗллехи хаярлăхшăн тӳлет
Вăл таса куҫҫулӗпе хаса*.

## УЛМУҪҪИ

Ҫурхи кун ҫӗн юрă кӗвӗлет.
Улмуҫҫи ҫав ырă кунсенче
Ҫимӗҫ ӳстерме кирли ҫинчен
Манăҫми чӗр тӗвӗ тӗвӗлет.

## ТЕЛЕЙ

Телей парса пире ҫуратнă,
Ăс парса пилленӗ ваттисем.
Айвансем ăна часах ҫухатнă,
Тар тăкса ӗрчетнӗ ăслисем.

## ХАСТАРЛĂХ

Хастарлăху пулсан —
Алри ӗҫне ăнтарăн,
Хастарлăх пулмасан —
Ҫынна анчах култарăн.

## ХӖҪ ТАТА ӖҪ

Вилӗме ырланă Хӗҫ,
Ӗҫ юратнă Пурнăҫа:
Хӗҫ вăйне ҫӗнтернӗ Ӗҫ,
Ҫавăнпа вăл — тӗп хуҫа.

---

* Хаса — наказани.

## ЫР ÇЫН

Икĕ хут çын ĕмĕрĕ килмест,
Пурнасси виçеллĕ çĕр çинче.
Ырă çын вилсессĕн те вилмест —
Пурăнать вăл хăйĕн ĕçĕнче.

## АЧАЛĂХ ПАРНИ

— Каласа парсам мана, ачалăх,
Мĕн хăвартăн эсĕ асăнмалăх?
— Асамат кĕперĕ пек сăнарлăх
Эп хăвартăм ĕмĕр асăнмалăх.

## ВĂХĂТ ВИÇИ

Вăхăтăн виçи ытла кĕске,
Вăхăта тăсма май çуккă-çке!
Ырă ĕçпеле кумсан кăна
Вăрăмрах тума пулать ăна.

## ВĂХĂТ ПАЛЛИСЕМ

Çур кунĕ — ачалăх вăйии,
Çу кунĕ — яш ĕмĕр ташши,
Кĕр кунĕ — кĕрнеклĕх кĕвви,
Хĕл кунĕ — хисеплĕх ăшши.

## ĔМĔР

Çак çутă тĕнчере
Пĕр ĕмĕр çех пире.
Пĕртен-пĕр ĕмĕре
Пурнас пулать хитре.

## КУЛĂШ ĂСТИНЕ

Куçу куран çитменлĕхрен
Кулас килет пулсассăн — кул!
Анчах ăсталăх çитменрен
Ху ял кулли пулса ан юл.

## СИВĔ ЮР

Кам хăять сив юра тиркеме —
Вăл таса та шап-шур.
Чун ăшшисĕр «таса» этеме
Ман калассăм килет — сивĕ юр.

## ТĂВАНЛĂХ ТĂВАРĔ

Анне — чи çывăх чун.
Пире кун панă çын — анне,
Анне — чи çывăх чун.
Аннен асамлă ыр ятне
Тасан упрасшăн çун!

## ПĔР ТАН ХИСЕПЛĔ ИК АННЕ

Пĕрре анчах тăван анне,
Пĕрре анчах çĕршыв-анне.
Пĕлес пулсан çак ик анне
Пĕр тан хисеплĕ ĕмĕрне.

## АМĂШНЕ МАНАКАН

Чун парса ӳстернĕ амăшне
Чĕрĕ хальлĕн кам манма пултарĕ, —
Ун пек çын тăван килне-йышне
Вăтăр кĕмĕлпе те улăштарĕ.

## АТТЕ-АННЕ ÇУНАЧĔ

Атте-анне хыпса çунать
Çунат парасшăн ачине.
Пире çĕклетĕр çав çунат
Этемлĕх мăччине!

## ТĂВАНЛĂХ ТЫМАРĔ

Тăвансем хунанă пĕр тĕпрен,
Тăванпа тăванăн пĕр тымар.
Тăван йыш тымарĕ çирĕппрен
Тăвана манмашкăн çăмăл мар.

## АКĂШ ЮРРИ

Сарăлса вăй илнĕ май ăсталăх
Вĕçĕмрен суйлатăн ыррине —
Юрласа парасшăн асăнмалăх
Эп те хамăн «акăш юррине».

## АСАМАТ

Сăвă çырнă майăн асăма
Килсе тухрĕ капăр асамат:
Асаматăн капăр илемне
Куçарасчĕ сăвă йĕркине.

## ĂСЛĂ СĂМАХ

Сăнама пултарнă хăвăрах:
Ăслă сăмаха çын юрататъ.
Шутласа каланă ăш сăмах
Чĕрере ыр туйăм çурататъ.

## ĂСТАЛĂХПА ТАЛАНТ

Ăсталăхпа Талант
Иккĕш тунă ант:
Камра пур тăрăшу —
Çавна çеç пулăшу.

## ĂС ЮЛАТЬ

Вут çунса пĕтет те кĕл юлатъ,
Тăрă шыв вĕрет те пăс пулатъ.
Çыракан вилсессĕн мĕн юлатъ —
Çавăрса каланă ăс юлатъ.

## МĔЛКЕ АН ПУЛ

Хăвна хăватсăр пек курса
Мĕлке ан пул çын куçĕнче:
Ыттисемпе пĕр тан пулса
Илемлĕ пурăн çĕр çинче.

## ТИРПЕЙЛЁХ

Çын умĕнче калассине
Малтан ăшра хакла.
Ăшра виçсе хакланине
Тинех çынна кала.

## ÇУНАТ

Этемĕн ĕмĕт малалла,
Вăл чăнлăхшăн çунать.
Ун çавăнпа та пулмалла
Инçе вĕçме çунат.

## ПУЛТАРУЛĂХ

Ан хăра йывăрлăхран,
Пултарулăхна ÿстер:
Пĕр тĕпренчĕк вăрлăхран
Пин тĕпренчĕк çитĕнтер.

## ИЛЕМ ТЕСЕН

Ума ÿксен тулли илем
Чуна пырса тивет хĕлхем.
Кăрт-кăрт! тапса илет чĕре...
Эп пит хавас кун пек чире!

## МĔН-ШИ ВĂЛ ИЛЕМ?

Илем — куçпа куран тасалăх,
Илем — ăш-пиллĕ сăн-сăпат,
Илем — асра юлан асамлăх,
Этем чунне çĕклен хăват.

## СĂВĂ ХАКĔ

Ăслăхсăр тĕрленнĕ сăвăсем —
Хылчăкпа çÿп-çап кăна вĕсем.

Çырнине ăс-хал пĕрчи пуртан
Хисеплессĕ çăкăрпа пĕр тан.

## СĂНЛĂХСЕМ ПИРКИ

Чĕрери ыр туйăм хĕмлĕхне
Çĕнĕ сăнлăхсем тупса шыра.
Çĕнĕ сăнлăхсен илемлĕхне
Çимелли шыранă пек шыра.

## ÇЫРАВÇĂ

Çыравçă туйтăр тивĕçне:
Вăл — вăрлăх акакан.
Сăмах ăстин ыр çимĕçне
Юраттăр вулакан.

## ÇЫРАКАНПА ВУЛАКАН

Ларса çыран-и сăвă-юрă —
Шур хут çине «тыр-пул» акан.
— Кун пек тырра вырма та ырă, —
Тесе калатăр вулакан.

## ТУПМАЛЛИ

Çывăх тус . . . . . . . . . . . . . . . . . 3

**Тупсăмне тавçăр**

Тупсăмĕ — рифма . . . . . . . . . . . . . 4
Икшер йĕркен . . . . . . . . . . . . . . . 7
Тăватшар йĕркен . . . . . . . . . . . . . 16
Çухалнă рифмăсем . . . . . . . . . . . . 26
«Çухалнă рифмăсем» ĕçĕн тупсăмĕсем . . . . 29

**Мĕн пирки пырать сăмах?**

Каскăн каччă . . . . . . . . . . . . . . . 30
Тĕм . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 31
Пахчара . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Мĕнле тинĕс? . . . . . . . . . . . . . . . 32
Вăрманта . . . . . . . . . . . . . . . . . —
Мĕн япала? . . . . . . . . . . . . . . . . 33

**Шутламалăх, пуç ватмалăх**

Варринче мĕн пур? . . . . . . . . . . . . 34
Сăмахсен варринчи хуравсем . . . . . . . . 35
Мĕншĕн? . . . . . . . . . . . . . . . . . 36
«Мĕншĕн?» ыйтусен тупсăмĕсем . . . . . . . 38
Шутне пĕл . . . . . . . . . . . . . . . . 39
«Шутне пĕл» ĕçĕн хуравĕсем . . . . . . . . 40
Хăçан? . . . . . . . . . . . . . . . . . . —

«Хăçан?» ыйтусен хуравĕсем . . . . . . . . 42
Шӳтлĕ ыйтусем . . . . . . . . . . . . . 43
Шӳтлĕ ыйтусен хуравĕсем . . . . . . . . 45
Ытарлă ыйтусем . . . . . . . . . . . . 46
Ытарлă ыйтусен хуравĕсем . . . . . . . . 54

**Юмахсемпе юптарусем, калавсем**

Авалхи автук . . . . . . . . . . . . 57
Ăваска . . . . . . . . . . . . . . 66
Ăслă ача . . . . . . . . . . . . . . 67
Вăрман сыхлавçисем . . . . . . . . . . 68
Геркуш . . . . . . . . . . . . . . 71
Джек ăсталанă çурт . . . . . . . . . . 72
Ирхине . . . . . . . . . . . . . . 74
Кайăк кăшăлĕ . . . . . . . . . . . . —
Кăмари . . . . . . . . . . . . . . 77
Карчăкпа старик . . . . . . . . . . . 78
Каçма . . . . . . . . . . . . . . 79
Кашнин хăйĕн юрри . . . . . . . . . . 80
Мрамор . . . . . . . . . . . . . . 84
Мулкач . . . . . . . . . . . . . . 86
Пыл хурчĕ . . . . . . . . . . . . . 87
Пăланпа Юлхав . . . . . . . . . . . 89
Попугайчик . . . . . . . . . . . . . 92
Пан улми . . . . . . . . . . . . . 93
Ракпа Кăртăш . . . . . . . . . . . . 94
Суйлав . . . . . . . . . . . . . . 95
Сӳтĕк сунарçă . . . . . . . . . . . 100
Сысна . . . . . . . . . . . . . . 101
Çăмха . . . . . . . . . . . . . . 102
Тилĕпе Çăхан . . . . . . . . . . . 103
Улатти . . . . . . . . . . . . . . 105
Упа хӳри ма кĕске? . . . . . . . . . —
Улитке . . . . . . . . . . . . . . 106

Упсар упи . . . . . . . . . . . . . . 107
Ӳпрепе Шăна . . . . . . . . . . . . . 111
Чĕрĕп чĕппи . . . . . . . . . . . . . 112
Арăслансем пирĕн таврара мĕншĕн çук? . . . 113
Каçхи кайăк . . . . . . . . . . . . . 114
Качакапа хĕр ача . . . . . . . . . . . . 115
Куянпа чĕрĕп . . . . . . . . . . . . . 117
Тилĕпе Чĕрĕп . . . . . . . . . . . . . —
Тилĕпе Çерçи . . . . . . . . . . . . . —
Пакшапа Шапа . . . . . . . . . . . . . 118
Вĕшлепе Тилĕ . . . . . . . . . . . . . —
Тилĕпе кураксем . . . . . . . . . . . . 119
Икĕ сысна . . . . . . . . . . . . . . 120
Хура кушак . . . . . . . . . . . . . 121

**Ăславсем** . . . . . . . . . . . . . . 123

**Философи пĕрчисем** . . . . . . . . . . 133

*Литературно-художественное издание*

Для детей среднего школьного возраста

**Николай Ыдарай**
**(Николай Васильевич Васильев)**

**ТĔРЛĔ ТĔРЛЕНЧĔК — ЫЛТĂН ТĔПРЕНЧĔК**

**ВО ДВОРЦЕ МУДРЫХ ИЗРЕЧЕНИЙ**

Стихи и рассказы,
мудрые изречения и загадки,
сказки

*На чувашском языке*

Редакторы *О.Л. Федорова, Г.А. Антонова*
Художник *А.В. Курочкина*
Художественный редактор *Г.С. Самсонова*
Технический редактор *А.В. Семенова*
Корректоры *Е.Ю. Ермолаева, Н.Г. Орлова*
Компьютерная верстка *М.В. Филипповой, Е.Е. Фоминой*

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93 — 953003. Подписано к печати 14.03.07. Формат 70x90 1/16. Бумага офсетная. Гарнитура Школьная. Печать офсетная. Усл.печ.л. 10,53. Уч.-изд.л. 6,26. Тираж 2000 экз. Заказ № 297. Изд. № 16.

ГУП «Чувашское книжное издательство»,
428019, Чебоксары, пр.И.Яковлева, 13.
Отпечатано в ООО «Чебоксарская типография № 1»,
428019, Чебоксары, пр.И.Яковлева, 15.

Чăваш кĕнеке издательстви